К63.3(-5Я Чу)
М 20
4-50206

Николай
МАЛЫШКИН

# Елчĕк çĕрĕ çитĕнтернĕ

Шупашкар – 2019

Национальная библиотека ЧР
4-050206

Ч63.3(-5Ч1b)
М20

# Ĕлĕк çĕрĕ çитĕнтернĕ

Шупашкар
«Çĕнĕ Вăхăт»
2019

Дарственный экз.

УДК 908(470.344)
ББК 26.89(2Рос.Чув)
М 20

Малышкин Н.Ф.
Елчĕк çĕрĕ çитĕнтернĕ. - Чебоксары, «Новое время», 2019. - 80 с.

Кĕнекене кĕртнĕ литратурăра, культурăра, ӳнерте вăй хуракан ентешсен кунçулĕ – район историйĕн пĕр пайĕ. Вĕсене кашни пĕлме тивĕç.

Кĕнеке вĕренӳ, культура тытăмĕнче ĕçлекенсемшĕн те, шкул ачисемшĕн те кирлĕ пособи пулĕ.

И-50206
Национальная библиотека
Чувашской Республики

© Малышкин Н.Ф., 2019

# Умсăмах

XIX ĕмĕр вĕçĕнче – XX ĕмĕр пуçламăшĕнче Чăваш çĕрĕнче наци интеллигенцийĕ çуралса аталанма пуçлать. Чĕмпĕрте Иван Яковлевич Яковлев, Хусанта Николай Васильевич Никольский тăрăшнипе çак хуласем наци чĕрĕлĕвĕн вучахĕсем пулса тăнă. Поэзи, илемлĕ литература, профессиллĕ музыка, ӳнер, театр çуралнă, чăваш ывăлĕхĕрĕ хăйсем çинчен тĕнче илтмелле пĕлтернĕ.

Çак юхăм Елчĕк тăрăхне те витĕм кӳнĕ. Пирĕн ентешсенчен Чĕмпĕрти учительсем хатĕрлекен чăваш шкулĕнчен 33-н, хĕрарăмсен унти вĕренӳ курсĕнчен 14-н, Хусанти учительсен семинарийĕнчен 65-ĕн, Чĕмпĕрти тĕн семинарийĕнчен 7-н, Мускав тата Хусан тĕн академийĕсенчен 2-н вĕренсе тухнă. Вĕсем, пурнăçăн тĕрлĕ сферинче тимленĕ май, халăха çутăлăха явăçтарас, культурăна йĕркелес тĕлĕшпе сахал мар ĕç тунă. Кашни чĕптĕм çĕнĕлĕхрен пуласлăх тĕвĕленсе, вăй илсе пынă. Чĕлхе, сăмахлăх, çутĕç енĕпе Николай, Петр, Василий Анисимовсем, Николайпа Александра Кедровсем, Яковпа Андрей Турхансем, Дмитрий Ефимов, Ипатий Марков, Сосипатор Зайцев уйрăмах тарăн йĕр хăварнă.

Çак кĕнекене алла тытсанах чылайăшĕн пĕр ыйту çуралчĕ пулĕ-ха: чăваш халăхĕн культуринче, литературинче, ăс-пурлăхĕнче тарăн йĕр хăварнă Игнатий Молодов, Мария Бикулова, Лидия Шакова, Вера Голубева, Валентина Музыкантова артистсем, Геннадий Волковпа Василий Эктел çыравçăсем, Владимир Агеевпа Юрий Ксенофонтов, Петр Пупинпа Татьяна Шаркова ӳнерçĕсем, Иванпа Вячеслав Христофоровсем юрăçсем, Николай Карлин композитор тата ытти вун-вун паллă ят ăçта – мĕншĕн кĕнекене кĕртмен вĕсене? Хисеплĕ вулаканăмăрсем, ыйтăвăр тĕрĕсех, анчах ку кĕнеке 2000 çулта тухнă «Елчĕк енĕн пултарулăх çыннисем» кĕнекен тăсăмĕ тесе пĕлтересшĕн. Малтанхи кĕнекере Елчĕк районĕнче çуралса ӳснĕ 66 паллă çын тата районти 4 пултарулăх ушкăнĕ çинчен тĕплĕн çырса панăччĕ. Ку кăларăмра вара – тĕрлĕ сăлтава пула пĕрремĕшне кĕмен ентешсен тата пултаруллă çамрăксен кунçулĕ.

Пурнăç пĕр вырăнта тăмасть, văл районти чи хăвăрт урхамахсенчен те хытăрах чупать, вĕçет малалла. Ăру хыççăн ăру çитĕнет, кашниех çĕнни илсе килет, кашниех мĕнпе те пулсан савăнтарма тăрăшать. Культура анинче те çавах: Елчĕк енре çуралса ӳснĕ яшсемпе хĕрсем юлашки çулсенче литературăра та, театрта та, эстрадăра та, ӳнерте те хăйсен витĕмлĕ сăмахне калама пуçларĕç, пултарулăхĕпе те хастарлăхĕпе ыттисемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăчĕç.

Пурнăç малаллах, тусăмсем: паян чăваш сăмахлăхĕнче, юрри-ташшинче, сăрă тĕнчинче тăрăшакан ентешсене малашне те пире хăйсен пултарулăхĕпе савăнтарма ырлăх-сывлăх сунар, вĕсенчен тĕслĕх илсе çĕнĕ ăрусем те çапла пултаруллă та малĕмтлĕ çитĕнессе шанар. Елчĕк çĕрĕ маттур ӳнерçĕсемпе çыравçăсенчен, юрăçсемпе ташăçăсенчен, артистсемпе композиторсенчен, журналистсемпе скульпторсенчен нихăçан та ан хухтăр.

**Автор.**



## «Атăл» пĕрлештерет

### Александров Геннадий Алексеевич (1948)

Елчĕк районĕнчи Тĕмер ялĕнче çуралса ӳснĕ Геннадий Александров Вольскри çар училищине (1968) тата Ю.А. Гагарин ячĕллĕ Сывлăш-çар академине (1980) вĕренсе пĕтернĕ. Лейтенантран полковника çитнĕ, авиаци чаçĕн командирĕн, истребитель авиацийĕн дивизийĕн командирĕн çумĕ, 1993 çулта запаса тухиччен Беларуç çар округĕнче авиаци çарĕн командующийĕн тыл енĕпе ĕçлекен çумĕ пулса хĕсметре тăнă. Варшава Договорне кĕрекен çĕршывсен çарĕсен пĕрлехи «Запад-1981» вĕренĕвне хутшăннă. Ăна «СССР Хĕç-пăшаллă вăйĕсенче Тăван çĕршывшăн вăй хунăшăн» III степень орденĕпе, 16 медальпе чысланă. 2002 çултанпа Раççейпе туслă патшалăхра пурăннă май, общество ĕçне хастар хутшăнать. Вăл тăрăшнипе Минск хулинче Беларуçпе Раççей тата Чăваш Ен хушшинчи культура çыхăнăвĕсене çирĕплетес, чăваш халăхĕн историне, йăли-йĕркине, чĕлхине аталантарас тĕлĕшпе пĕтĕм чăвашсен «Атăл» обществăлла пĕрлешĕвне туса хунă. Унăн уйрăмĕсем паян Гродно, Пинск, Добруш, Гомель, Солигорск тата ытти хуласенче те ĕçлеççĕ. Г.Александров Беларуç правительствин делегацийĕн йышĕнче Чăваш Республикинче иртекен экономика форумĕсене хутшăнать, аякри янташсен ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă ыйтусене çивĕч çĕклет.

2003 çулта пĕрлешӳ çумĕнче «Хамăр ял» ансамбль йĕркеленĕ. Ăна пуçараканĕ тата ертсе пыраканĕ – Геннадий Алексеевичăн мăшăрĕ Луиза Александровна. Коллектив вырăнти мероприятисене, Шупашкарта иртекен «Раççей çăлкуçĕсем» фестивале, Пĕтĕм чăвашсен Акатуйне тăтăшах хутшăнать.

Г.Александрова чăвашлăха аталантарас енĕпе нумай çул ăнăçлă ĕçленĕшĕн чылай хисеп тунă. Вăл Беларуçри Раççей Федерацийĕн Чрезвычайлă тата Полномочиллĕ элчин, Чăваш Ен Пуçлăхĕн, Ульяновск облаçĕн кĕпĕрнатторĕн Хисеп хучĕсене тивĕçнĕ.



## «Чун ыйтнипе çыратăп»

### Алексеев Николай Васильевич (1954)

Чăн журналистшăн хаçат страницисем кăна çителĕксĕр, «тăвăр», унăн пултарулăхĕ çулсерен аталанса пырать, калас тенине вара тĕрлĕ журналта пичетлет е уйрăм кĕнекен кăларать. Николай Алексеев çамрăклах таврапĕлӳ ĕçне кӳлĕнет, тăван ялĕн кун-çулне тĕпчет. Хăйĕн тĕпчевĕсене, ваттисенчен ыйтса пĕлсе çырса пынисене вăл кĕнекесене калăплать, унăн «Тĕмер чиркĕвĕ» (2006, 2013), икĕ пайран тăракан «Тĕмер ялĕ тата унăн çыннисем» кĕнекисене ентешĕсем çеç мар, ытти ял çыннисем те кăсăкланса вулаççĕ. Вăл çавăн пекех «Елчĕк тăрăхĕ», «Яльчикский район. Краткая энциклопедия», «Крылатая молодость» кĕнекесене хатĕрленĕ ĕçе хастар хутшăннă, ĕçтешĕсен – Анатолий Тимофеевăн, Петр Сидоровăн – кĕнекисене редакциленĕ.

Н.Алексеев Елчĕк районĕнчи Тĕмер ялĕнче çут тĕнчене килнĕ. Çирĕклĕ Шăхальти вăтам шкула, И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн историпе филологи факультетĕнче вĕреннĕ. Совет Çарĕнче хĕсметре пулнă.

Николай Васильевич пĕтĕм ĕç тапхăрне «Колхоз ялавĕ» (халĕ – «Елчĕк ен») хаçатпа çыхăнтарнă, 1981 çултан пуçласа 2017 çулчченвиçĕ уйăх ял хуçалăх корреспондентĕнче, унтан 23 çула яхăн яваплă секретарьте, 13 çул ытла тĕп редакторта вăй хунă.

Раççей Журналистсен союзĕн членне хаклама ыйтсан пуçа киле-

кен пĕрремĕш сăмахсем çаксем: сăпайлă, ырă кăмăллă, сăмаха виçсе калаçать, çав вăхăтрах çынна итлеме пĕлет. Редакци лавне кӳлĕнсен хаçат тиражне ӳстерес, тӳлевлĕ саламсем пичетлес, уйрăм хуçалăхсене халаллана реклама номерĕсем кăларас тĕлĕшпе уйрăмах нумай тимленĕ. Хаçат варринче «хушма хаçат» кăларассине те йĕркелет. «Физкультурăпа спорт» (явапли Николай Алексеев хăех), «Канмалли кун страници» (Валентина Кириллова), «Шăнкăрав» (Елена Петрова) кăларăмсене вулакансем савăнсах йышăннă. Район тата хаçат историйĕпе çыхăннă паллă датăсене халалласа хатĕрленĕ ятарлă номерсене хулăнлатса кăларассине те Николай Васильевич пуçарса янă. Типографири упранса юлнă техникăна та редакцишĕн усă енне çавăрнă вăл. Вун пĕр çул хушшинче 30 ытла кĕнеке, брошюра пичетлеме пултарнă. Вĕсенчен ытларахăшне редакцилекенĕ, илемлетекенĕ Н.Алексеевах пулнă. 2008 çулта редакци Японире туса кăларнă ризограф туяннă, çакă та сакассене ӳстерме май панă. Чăваш Ен Информаци политикипе массăллă коммуникаци министерстви йĕркелекен конкурссенче 4 хутчен çĕнтерсе грантсене тивĕçнĕ. Спорт министерстви ирттерекен ăсталăх тупăшăвĕнче «Физкультурăпа спорт тематикине чи лайăх çутатакан район (хула) хаçачĕ» номинацире I вырăн йышăннă. Ку каллех тĕп редакторăн-журналистăн тӳпи. Ун тивлечĕпех Валентина Кириллова, Александр Карлин, Елена Петрова ĕçĕсем те тĕрлĕ министерствăсем йĕркелекен пултарулăх ăмăртăвĕсенче палăрнă.

– Мĕн хистет сана тăтăшах калем çивĕчлĕхне çирĕплетсе пыма? – ыйтатăп ĕçтешĕмрен.

– Чун ыйтнипе çыратăп эпĕ, унсăрăн май та çук, – пулчĕ хурав.

Н.Алексеевăн ĕçри хастарлăхĕпе обществăри активлăхне тĕрлĕ награда çирĕплетет. Ăна РФ Çыхăнупа массăллă коммуникацисен министерствин, Раççейри культура ĕçченĕсен профсоюзĕн, Чăваш Республикин, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Хисеп грамотисемпе, Чăваш Ен Пуçлăхĕн Тав хучĕпе, çавăн пекех «Раççей профсоюзĕсене – 100 çул», «2006 çулхи Раççей Федерацийĕн ял хуçалăх çыравне активлă хутшăннăшăн», «Елчĕк енешлĕхĕ умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн» медальсемпе чысланă. Вăл – Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ (2016).

## *Хастарлăхĕ иксĕлми*

## Анисимов Анатолий Петрович (1992)



Шкул çулĕсенчи ялти арçын ачасене сцена çинче сайра куратăн. Анатолий Анисимов вара, ас тăватăп, районта иртекен «Елчĕк ен» эстрада юррисен фестивальне тăтăшах хутшăнатчĕ. Паян вăл профессиллĕ сцена çинче ĕçлет, тен, хайне çапла майпа хатĕрлесе çул уçса пынă мĕн пĕчĕкрен.

Елчĕк районĕнчи Ĕнел каччи Çирĕклĕ Шăхальти вăтам шкулта вĕреннĕ тапхăрта музыкăпа тата спортпа кăсăкланнă. Районти ачасен искусство шкулĕнче пĕлӳ пухнă. 2010 çулта И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнчи вокал искусствин факультетне пĕтернĕ. 2015-2016 çулсенче çар ретĕнче тăнă.

Анатолий икĕ çул Пĕтĕм чăвашсен «Кĕмĕл сасă» фестивалĕнче дипломант пулнă, «Асамат кĕперĕ», «Юрла, чăваш» (2-мĕш вырăн) вокалистсен конкурсĕсенче палăрнă.

2017 çултанпа Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ Чăваш патшалăх çамрăксен театрĕнче тăрăшать. Çак тапхăрта 10 ытла спектакльте тĕрлĕ рольсене калăпланă: Пектеев («Капитанская дочка», А.Пушкин), Антон Петрович («Шăпа», М.Михайлова), Татарин («На дне», М.Горький)...



## Радиожурналист

### Артемьева Ольга Вячеславовна (1987)

Елчӗк районӗнчи Ҫирӗклӗ Шăхальти пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан вăтам шкулта чăваш чӗлхипе литературине вӗрентекен Нина Левая ачасенче тăван сăмах пуянлăхне аталантарас, вӗсене хаҫат ӗҫне явăҫтарас тӗлӗшпе нумай тăрăшать. Наталия Ефимова, Лидия Юркова, Маргарита Ляленко, Ольга Краснова, Татьяна Федорова, Ольга Баринова Нина Аркадьевна пулăшса, хавхалантарса пынипе «Елчӗк ен», «Тантăш» хаҫатсенче тăтăшах пичетленнӗ. Малти виҫҫӗшӗ – районти ҫамрăк ҫыравҫăсен В.Эктел ячӗллӗ премии лауреачӗсем.

Тӗп сăмахăм вара – О.Баринова (Артемьева) пирки. Вăл Ҫирӗклӗ Шăхаль ялӗнче кун ҫути курнă. 2009 ҫулта И.Н.Ульянов ячӗллӗ Чăваш патшалăх университетӗнчен вӗренсе тухса журналист дипломне илнӗ хыҫҫăнах Чăваш наци радиовӗн информаци службин аслă редакторӗнче вăй хурать: «Хыпарсем», «Чӗререн тухакан сăмахсем», «Тăван ял историйӗ», «Чăваш халăх йăли-йӗрки» программăсен авторӗ тата вӗсене ертсе пыраканӗ. «Радиокрасавица-2010» конкурса хутшăнса «Мисс - интеллект» номинацире ҫӗнтернӗ.

Ольга Вячеславовна Чăваш Ен Пуҫлăхӗн стипендине тивӗҫнӗ. Республикăри ҫынсен хăрушсăрлăх культурине аталантарма нумай тимленӗшӗн тата Раҫҫей МЧС подразделенийӗн республикăри управленийӗн ӗҫ-хӗлне тӗплӗн ҫутатнăшăн 2-мӗш степеньлӗ дипломпа чысланă ăна, 2016 ҫулта вара асăннă управлени йӗркеленӗ «Ҫулăмлă калем» фестивальте ҫӗнтернӗ Ольга. Халăха ҫăлас ыйтăва тивӗҫлипе пропагандăланăшăн Раҫҫей МЧСӗн медальне те тивӗҫнӗ.

Ольга Артемьева – «В.В. Иовлев тележиссерăн пултарулăх портречӗ» кӗнеке авторӗ. Чăваш передачисене куракансем вара ăна сенкер экран ҫинче те темиҫе хутчен асăрханă. Вăл Н.Сидоров драматургăн «Арсем» пьеси тăрăх лартнă кинофильмра та ӳкерӗннӗ.



## Ăсталăхӗ – чун хавалӗ

### Балтаева Людмила Владимировна (1968)

Чăваш ҫӗрӗнче нумай ăста пурăнать: пӗрисем тӗрлеҫҫӗ, теприсем ҫыхаҫҫӗ, виҫҫӗмӗшсем ҫăмран япала йăвалаҫҫӗ, тăваттăмӗшсем йывăҫран темӗн те ăсталаҫҫӗ... Кашниех хăйӗн ал-урине хăш енӗпе те пулин аталантарать. «Ӳркенмен – ăста пулнă», – тенӗ ваттисем унашкал ҫынсем ҫинчен. Ҫакнах Чăваш Республикинчи халăх ӳнерӗпе ал ăсталăхӗн маҫтăрӗ, капăрлăхсем тăвас тӗлӗшпе ӗҫлекен Людмила Балтаева ҫинчен те калама пулать. Елчӗк районӗнчи Кивӗ Эйпеҫ хӗрӗ ятарлă пӗлӳ илнӗ профессиллӗ ăста шутланать: Ленинградри С.М. Киров ячӗллӗ пир-авăр тата ҫăмăл промышленнăҫ институтне вӗренсе пӗтернӗ вăл. Вӗреннӗ хушăрах хăйӗн ал ăсталăхне аталантарнă.

Людмила Владимировна бухгалтера та вӗреннӗ-ха, анчах чунӗ туртман пулас.

– Пӗр ҫӗре ӗҫлеме вырнаҫрăм, – сăлтавне уҫать вăл. – Унта ман пуҫ ҫине темиҫе пуҫлăх «хăпарса» ларни килӗшмерӗ – эпӗ ирӗклӗхе хăнăхнă пулас. Микуҫ мăшăрăм та (Чăваш Республикин тава тивӗҫлӗ художникӗ Николай Балтаев – **Авт.**) сан чăваш тумӗсене ҫӗлемелле тесе хистетчӗ. Ăна итлесе, чăнах та, ҫак ӗҫе кӗрсе кайрăм, халӗ ӗнтӗ ҫакăншăн пӗрре те ӳкӗнместӗп.

Паянхи пурнăҫра тӗрлӗ ӗҫе тума пӗлни хаклă. Балтаевсен ҫемйинчи арҫынсем халӗ тимӗрҫӗ ӗҫне те пурнăҫлаҫҫӗ. Людмила вара ҫӗлет, капăрлăхсем ăсталать, чăваш халăх тумӗн уйрăм пайӗсене ҫӗнетет.

Кашни этнографи ушкӑнӗнчи тумтирех вӑл тӗплӗн шухӑшласа, ятарлӑ литературӑна тишкерсе тӗрӗс хатӗрлет. Тумӑн кашни пайне, пуҫ тӳпинчен пуҫласа ура тупанне ҫитиех, ҫӗнӗ материалсемпе усӑ курса пуҫтарать. Ӑста ҫавӑн пекех тӗрлӗ пусма-тавартан чӑваш халапӗсене сӑнлакан ӳкерчӗксем тӑвать: «Уйӑх ҫинчи Пинеслу хӗр», «Асамат кӗперӗ», «Чӑваш тӗнчи», «Ҫу уйӑхӗ», «Тенкри», «Пихампар»... Пӗрре пӑхсан панносем ҫав тери ансат пек туйӑнаççӗ, анчах та тимлӗрех сӑнасан вӗсене тӗсӗпе композици енчен питӗ килӗшӳллӗ вырнаҫтарнине асӑрхатӑн.

Л.Балтаева Атӑлӑн сулахай енче этнокультура паркӗ йӗркелес тӗлӗшпе питӗ пысӑк ӗҫ туса ирттернӗ. Кунта килекен хӑнасем чӑваш халӑхӗн культурипе тата историйӗпе тӗплӗн паллашма пултараççӗ.

Чӑваш Енри ал ӑстисен Гильдийӗн членӗ куравсемпе конкурссене те чылайранпа хутшӑнать. 2013 ҫулта вӑл Пӗтӗм Раççей шайӗнче «Ӳнер шӑрҫи» номинацире ҫӗнтернӗ. 2015 ҫулта халӑхӑн ӳнер промыслипе ремесли тытӑмӗнче ӑна «Чи лайӑх предприниматель» ят панӑ. Парижри Раççейӗн православин культура центрӗнче 2017 ҫулхи пуш уйӑхӗнчен унӑн куравӗ ӗҫлет.

2018 ҫул пуҫламӑшӗнче Чӑваш тӗррин музейӗнче «Ӑсталӑх – чун хавалӗ» ятпа Людмила Балтаеван черетлӗ выставки иртнӗ. 90 яхӑн экспонат. Вӗсен шутӗнче – арҫынпа хӗрарӑмӑн сакӑр тумӗ, капӑрлӑхсем, пуҫ хатӗрӗсем, панносем.

**Асӑннӑ курава хакласа ҫырнисенчен:**

*«Выставка чӑннипех те тӗлӗнмелле пуян. Тӑван халӑхӑн мӑнаҫлӑхне туллин тата ҫӳллӗ шайра хутпа мар, аваллӑхри несӗлсем усӑ курнӑ пусмапа, кӗмӗлпе ӑсталанӑ хатӗрсем чуна тыткӑнлаççӗ. Маттур, тайма пуҫ сана, Людмила Владимировна.*

*Чӑваш наци конгресӗн вице-президенчӗ – Тимӗр Т.»*

*«Мир вокруг наполнен чудесами и сказками, и одно из самых удивительных его творений – это руки человеческие. Они способны созидать, дарить тепло и ласку, делать восхитительные вещи с необыкновенной, светлой, доброй энергетикой. Главное чудо в том, что руки являются прямым продолжением нашего сердца и наших мыслей, поэтому через них передаются чувства и эмоции, энергии и ощущения. Хочу от души поблагодарить за интересные работы. Пожелать Вам творческих успехов и новых выставок».*

*С уважением – Алена Данилина, г.Москва.*

... Ӳнерҫӗ пулма ытти ҫынсенчен расна творчествӑлла ӑспа ӗҫ хавалӗ пулмалла, шухӑша тем тери вӗҫтерме пӗлмелле унӑн. Людмила Балтаева шӑпах ҫавнашкал.

## *Савӑнӑҫ парнелекен*



## Барская Елена Васильевна (1949)

«Эпӗ – чӑваш ҫыравҫи. Сӑвӑ ҫырма ача чухнех пуҫланӑ. Вӑхӑта юратнӑ ӗҫре ирттерме шӑпа пӳрнишӗн савӑнмаллипех савӑнатӑп, мӑнаҫланатӑп..»

Елена Барскаян черетлӗ «Савнӑ ялӑм Аслӑ Таяпа» кӗнекин пуҫламӑш йӗркисем кусем. «Хӗвелпи» хушма ятпа пичетленнӗскер, унӑн пит-куҫӗнче ялан йӑл кулӑ ҫиҫет, кирек хӑҫан ҫынна ырӑ тума ӑнтӑлать, сӑпайлӑха упрама, илеме курма, хӳтӗлеме чӗнет.

Елена Барская-Блинова – Елчӗк районӗнчи Аслӑ Таяпаран, Чӑваш писателӗсен пӗрлешӗвӗн членӗ, Эмине, Алексей Талвир, Тамара Чумакова ячӗллӗ премисен лауреачӗ. Вырӑсла та, чӑвашла та ҫырать. Унӑн пӗрремӗш кӗнеки «Оставь свой добрый след» ятпа кун ҫути курнӑ. Каярахпа – «Куҫ тулли илем». Уйрӑм сӑввисем пӗтӗм тӗнче ша-

йĕнче тухса тăракан «Страна Озарение» журналта пичетленнĕ.

Елена Хĕвелпи хастарлăхĕ пурнăç çине çĕнĕлле пăхма вĕрентет. Çутă кунăн кашни саманчĕ хаклă уншăн. Канăçсăр хĕрарăм кун-çулне халалласа «Жизнь в творчестве», «Восславим женщину», «Поэзия женской души», «В стихах – ее жизнь» документлă фильмсем те ӳкернĕ.

Аслă Таяпа ялĕн хисеплĕ гражданинĕ, Чăваш наци культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ юрă-ташăра та ăста: «Тарават», «Елчĕк ен», «Çулăм» ансамбльсенче хăйĕн шăпчăк евĕр сассипе юрласа çынсене савăнтарать.

Елена Васильевнăн ĕç биографийĕн ытларах пайĕ республикăри шалти ĕçсен органĕсемпе çыхăннă. 20 çула яхăн радиотелефонистра тăрăшулăхпа палăрнăшăн нумай медале, Хисеп хутне тивĕçнĕ вăл. Обществăлла тĕрлĕ ĕçе хутшăнасси те уншăн – чун уççи.



## «Кĕмĕл сасă» çĕнтерӳçи

### Борисова Полина Геннадьевна (1985)

Елчĕк районĕнчи Патреккелте çуралнă Полина Борисован ӳссен кам пуласси пирки иккĕленӳ пулман. Ашшĕ – Геннадий Арсентьевич – Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, халăх хорĕн ертӳçи. Амăшĕ, тетĕшĕпе аппăшĕ те пысăк коллективăн тĕп шăнăрĕ пулнă.

Полина пирваях ача-пăча хорĕнче юрланă, аслă классенче çитĕннисен йышне куçнă, ташă кружокне çӳренĕ. Çулсерен иртерекен «Елчĕк шăпчăкĕ» конкурсра сахал мар çĕнтернĕ. Вăтам пĕлӳ илнĕ хыççăн И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче чăваш филологийĕпе культура факультечĕн эстрада уйрăмĕнче вĕреннĕ. Профессиллĕ сценăна алла илсе пынă май, Полина хăйне чылай сумлă пултарулăх тупăшăвĕсенче тĕрĕсленĕ. Чи ăнăçулли – Пĕтĕм тĕнчери чăвашсен «Кĕмĕл сасă» фестивалĕ: 2004 çулта юрăçă унта Гран-прие тивĕçнĕ. Çав тапхăртах «Апельсин каччисем» ушкăнра юрланă вăл.

2007 çултанпа Полина Геннадьевна уйрăм концертсем те йĕркелет. Явăплăха туйса ĕçлекенскер, репертуара тăтăшах çĕнĕ юрă-кĕвĕпе пуянлатать. Çавна май ун валли ятарласа çыракан авторсем те йышланнă: Юрий Кашкăр, Виталий Осипов, Александр Павлов, Игорь Аркадьев, Геннадий Борисов. Эстрадăра шанăç паракан пике ытти пултарулăх ушкăнĕсемпе Мускавпа Питĕрте, Тутарстанпа Пушкăртстанра, Турцире гастрольте пулнă. «Телеюрă» фестивальсене те час-часах хутшăнать. Хăй шăрантаракан 100 ытла юрра пухса тăхăр диск кăларнă.

**Экспресс-интервьюран:**

– *Полина, сана эстрадăна «путевка» панă юрă хăшĕ?*

– «Чарăн, чарăн, каччă».

– *Мĕн вăл саншăн юрă?*

– Вĕçев, туйăм, чун вылявĕпе асамĕ, сас илемĕ…

– *Чăваш юррипе тĕнче шайне тухас тесен мĕн тумалла?*

– Ятарлă вĕренӳ шкулĕсемпе ăста вĕрентекенсем кирлĕ.

## Тĕрлĕ жанрпа çырнă



### Бурнашев Фатхи Фасхатдинович (1898 – 1942)

Ф. Бурнашев (литературăри ячĕ – Фатхи Бурнаш) Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи Пăва уесĕнчи Пикшик ялĕнче (халĕ Елчĕк районне кĕрет) çуралнă. Çемьере 11 ача çитĕннĕ пулин те, пурлăх тĕлĕшĕнчен йывăрлăхсене пăхмасăр ашшĕ кашнине вĕрентме тăрăшнă. Фатхи тăхăр çул тултарсан ашшĕ ăна Хусанти «Мухаммадия» медресене вырнаçтарнă, анчах вăл унта вĕренме пăрахса куçăмсăр майпа учительсен семинарине кĕнĕ, ăнăçлă вĕçлесе аттестат илнĕ.

Чĕмпĕрти большевиксен «Кун» хаçат редакторĕ пулнăран, унта пуянсем çинчен вирлĕ материалсем нумай пичетленĕ. Çавăнпах ăна 1918 çулхи кĕркунне Ёпхӳри шурă гвардеецсен тĕрмине хупса хунă. Хулана Хĕрлĕ çар çывхарнине пĕлсен тĕрмерисене «вилĕм эшелонĕпе» Çĕпĕре ăсатнă. Ф. Бурнаш эшелонран тарма пултарнă, каялла Чĕмпĕре таврăннă, «Кун» хаçата çĕнĕрен кăларма пуçланă. Унти кашни номертех публицистика статйисенче, сăвăсенче, фельетонсенче политикăпа экономика, социаллă пурнăç ыйтăвĕсене çутатнă. Çав вăхăтрах вăл пьесăсем те хайланă.

Пултарулăхăн пуçламăш утăмĕсене медресере вĕреннĕ çулсенчех тунă вăл: çине тăрсах тутар литературине тишкернĕ, вырăс тата ют çĕршыв классикĕсен кĕнекисене вуланă, Шекспир трагедийĕсемпе кăсăкланнă, А.С.Пушкин, Л.Н.Толстой, И.С.Тургенев тата ытти вырăс çыравçисен ĕçĕсене тутарла куçарнă. «Тан» (1918-1920), «Кызыл Армия» (1921), «Татарстан» (1921-1924), «Безнен байрак» (1922-1924) хаçатсен, «Чаян» (1923-1924) журнал редакторĕ пулнă.

Ф. Бурнашев 1917 çулхи çу уйăхĕнче Чĕмпĕрти пехота полкĕнче хĕсметре тăма пуçланă, çапах та тăватă уйăхранах çартан хăтарнă ăна. Учителе куçарнăран, малтан Пăвари, унтан Чĕмпĕрти шкулсенче тутар чĕлхине вĕрентнĕ. Тепĕр çултан «Кун» хаçат çĕнĕрен тутарла тухма тытăннă. Редакторĕ – Ф. Бурнаш. 1919 çулхи ака уйăхĕнче вăл большевиксен партине кĕнĕ.

Унăн çыру тематики тĕрлĕ енлĕ пулнă. Вăл юрату, индустриализаци, коллективизаци, çĕнĕ пурнăç ыйтăвĕсене анлăн çутатнă. 22 пьеса, 30 поэма, 150 ытла сăвă, 5 опера либретти, 500 яхăн статья, вуншар калавпа фельетон çырни писателĕн ăс-тăн, тавракурăм пуянлăхĕ çинчен калать. 1988 çулта унăн пьесисене пухса 255 страницăран тăракан «Çамрăк чĕресем» кĕнеке кăларнă.

Фатхи Бурнашăн кунçулĕ 1924-1928 çулсенче парти ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă, 1927-1928 çулсенче Тутарстан академи театрĕн,1931-1935 çулсенче кĕнеке издательствин, операпа балет театрĕ çумĕнчи опера студийĕн директорĕнче ĕçленĕ. Паллах, литературăри сулмаклăхĕ татах та ӳсме пултарнă унăн, анчах сăлтавсăр айăплани пĕтĕм ĕмĕтне çапса хуçнă. Ăна 1940 çулта тĕрмене хупнă, икĕ çултан персе пăрахнă. 1957 çулта реабилитациленĕ, таса ятне тавăрнă.

## Картинисенче – тăван кĕтес



### Васильев Василий Софронович (1953)

В.Васильевăн ĕçĕсемпе Елчĕкри культурăпа кану центрĕнче районăн 90 çулхи юбилейне халалланă куравра паллашнăччĕ. Шăпи Çуткӳл ачине Каçал тăрăхĕнче ĕçлесе пурăнма пӳрнĕ пулсан та çуралнă тăван кĕтес, пурпĕрех,уншăн чи хакли. Çакна курава тăратнă картинăсен пуххинчен те курма май килчĕ – Елчĕк тăрăхне сăнлаканни унта питĕ нумай. Савăнăçра та, тунсăхра та – тĕрлĕ самантра çырнă вĕсене.

Кашни ӳнерҫĕн хăйĕн шухăшлавĕ, тĕнчекурăмĕ. Василий Софронович пултарулăхĕшĕн кăтартуллă, ҫавăнпах вăйлă палăракан пулăм: ҫуллă сăрăпа ӳкернĕ ĕҫсенчи кĕвĕлĕх ытарлăхне аталантарма талпăнни. Ҫакă унăн натюрморчĕсемпе пейзажĕсенче ытларах курăнать. Вăл хăйĕн ăсталăхне Курнавăшри Христос ҫуралнин ячĕллĕ чиркĕвĕнчи ангелсемпе архангелсен турăш-фрескисене стенасемпе мачча ҫине вырнаҫтарассинче те тĕрĕсленĕ.

Чăваш Республикин культурăн тава тивĕҫлĕ ĕҫченĕн, музыка обществин тава тивĕҫлĕ деятелĕн ĕҫ биографийĕ анлă та пуян. Чăваш патшалăх педагогика институчĕн художествăпа графика факультетĕнче вĕреннĕ тапхăрта унăн ертӳҫисем ӳнер ĕҫĕн аксакалĕсем – Раҫҫей халăх художникĕ Н.В. Овчинников тата Чăваш халăх художникĕ К.В. Владимиров – пулнă. Ăс пухнă вăхăтра вăл студентсен кашни куравнех хутшăннă. Ун хыҫҫăн Комсомольски районĕнчи Хирти Явăш ялĕнчи шкулта рисовани, черчени, ĕҫ урокĕсене ертсе пынă. 1978-1984 ҫулсенче ӳнерҫĕсен мастерскойĕнче аслă художникра, 32 ҫул Комсомольски район администрацийĕн культура пайĕн пуҫлăхĕнче тăрăшнă. Ҫак тапхăрта «Ҫĕр тата ҫынсем» ятлă музей йĕркелес, район энциклопедине тата «Ялти культура вучахĕсем» кĕнекене хатĕрлес ĕҫре те нумай вăй хунă.

**Людмила Кутьина, «Расцветай, край чувашский» («Советская Чувашия», 23.06.2013):**

*«Ко Дню Чувашской Республики приурочена выставка произведений изобразительного искусства заслуженного работника культуры ЧР Василия Васильева...*

*...Им создано более 100 живописных полотен.*

*Вот как оценивает его работу известный в республике педагог, тележурналист, исследователь, культуролог Михаил Воробьев: «Феномен Василия Васильева – чистый взгляд на мир, искренние чувства. Ясный взгляд проявляется в чистоте колорита – весенней свежести красок, в незамутненности образов портретируемых. Его пейзажи не приглажены, не слащаво салонные, а глубоко философски осмысленные, как, например, «Перед грозой», «Ромашки». В «Портрете дочери» ярко проявился личностный стиль».*



## «Кĕрешӳ» активисчĕ

## Васильев Виталий Петрович (1964)

Спорта юратасси Витьăн ашшĕнчен – штанга йăтассипе Чăваш Республикин икĕ хут чемпионĕнчен – Петр Моисеевичран куҫнă. Ашшĕ витĕм кӳнипех Шупашкарти энерготехникума пĕтерсенех Мускаври физкультурăпа спорт техникумĕнче пĕлӳ илнĕ вăл. «ДОРИСС» акционерсен обществинче спорт инструкторĕнче, хулари 25-мĕш шкулта физкультура учителĕнче, олимп резервĕсен 3-мĕш спорт шкулĕнче тренер-преподавательте ĕҫленĕ. 2007 ҫултанпа – «Чăваш наци кĕрешĕвĕ» обществăлла организацин президенчĕ.

– 1995 ҫулта хамăр районти Ҫĕнĕ Пăвара ҫуралса ӳснĕ Николай Игнатьевич Петровпа паллашрăм, – тет Виталий Петрович. – Спорта чунтан парăннă ҫын вăл. Чăваш наци кĕрешĕвне чĕртес тĕлĕшпе пысăк ĕмĕтсем ҫуралчĕҫ пирĕн...

Ҫав ҫулхинех вĕсем официаллă майпа «Кĕрешӳ» спорт организацине туса хураҫҫĕ. Чăваш Енĕн пĕрремĕш чемпионатне те ирттереҫҫĕ. Чăвашсем йышлă пурăнакан регионсене те ҫитеҫҫĕ: малтанах Самар облаҫĕнчи вун ултă шкулта вĕренӳ семинарĕсем, унтан ăмăртусем йĕркелеҫҫĕ.

В. Васильев пуҫарăвĕпе паянхи кун тĕлне чăваш наци кĕрешĕвне

Атăлçи тăрăхĕнчи çичĕ регионта – Чĕмпĕр, Пенза, Саратов облаçĕсенче, Мордва, Тутарстан, Пушкăртстан, Чăваш республикисенче вăя кĕртнĕ. Вĕсенче организацин филиалĕсем те пур.

Пиçиххирен тытса кĕрешессипе ăмăртусем Мускаври, Тюменьри, Нефтеюганскри чăвашсен акатуйĕсенче те çулсерен ирттереççĕ. Тĕнче шайĕнчи категориллĕ судья, Раççей халăхĕсен Ассамблейин ертÿçин çумĕ Виталий Всильев хутшăнмасăр иртмеççĕ вĕсем. Тăван ялĕнче, Елчĕк районĕнчи Аслă Елчĕкре Афган вăрçинче пуçне хунă Анатолий Патшин ентешне асăнса 20 хут иртнĕ турнирта дипломсемпе, медальсемпе, яланхиллех, хăех тивĕçтернĕ.

Чăваш ăс-хакăлĕпе ÿнер академийĕн чăн членĕ, Чăваш наци культурин тава тивĕçлĕ деятелĕ вăл. «За служение национальному спорту» медальпе, нумай Хисеп хучĕпе чысланă чăваш кĕрешĕвĕн хастарне.



## «Тĕнче ырăрах пултăрччĕ тесе тăрăшатăп»

### Васильева-Варна Алина Геннадьевна (1982)

Мĕн пĕчĕкрен вăр-вар та хастар хĕрача пулнă вăл. Лара-тăра пĕлменскер ялан çĕннипе интересленнĕ, вĕренме, ташлама, юрлама юратнă. Ашшĕпе амăшĕ – Геннадий Петровичпа Юлия Анатольевна Можаевсем – пилĕк ачинчен Алина çирĕп кăмăллăраххине тата нумай пĕлме ăнтăлнине кура унран ăста педагог пуласса шаннă, вăл вара пурнăçра пач урăх çул суйласа илнĕ...

*– Алина, псевдонима мĕнле шухăшласа кăлартăн?*

– Ĕлĕк-авал Болгарире вăрçăран çĕнтерÿпе таврăннă салтаксене «варнай» тенĕ. Варна хула ятне те вĕсене чысласа панă. Манăн та пурнăçра çĕнтерÿçĕ пулас килет.

*– Эстрада çулĕ çине епле тăтăн?*

– Шкулта питĕ юрлама юрататтăм. Уйрăмах клубра. Хамăрах пĕчĕк концертсем йĕркелеттĕмĕр. 9 класс пĕтерсен Канашри педагогика колледжне вĕренме кĕтĕм. Тĕрĕссипе, педагог ĕçĕ мана килĕшсех каймастчĕ. Атте-аннене хирĕç кайман ĕнтĕ. Вĕренĕве хĕрлĕ дипломпа вĕçлерĕм-ха. Малалла ăçта каяссине шухăшламалла-çке. Çав тери юрлас килетчĕ. Колледжра вĕреннĕ чухне эстрадăна тараннăн кĕрсе кайнă та. Культура керменĕнчен тухма пĕлмен эпĕ, тĕрлĕ конкурса хастар хутшăннă. Пĕчĕккĕн юрăсем те çыртарма пуçларăм.

*– Пурнăçра ăнать-и сана?*

– Эпĕ Варна вĕт. Хушма ятăм чăтăмлă пулма, çĕнтерÿ тума хистет. Çурма çулта нихăçан та чарăнса тăмастăп, пуçланă ĕçе вĕçне çитерме, тĕнче ырăрах пултăрччĕ тесе тăрăшатăп. Шоу-бизнесра çăмăл мар паян. Çĕнĕлле ĕçлемесен куракан хисепне тивĕçеймĕн, эпир вĕсемшĕн тăрăшатпăр-çке. Эпĕ – пуçаруçă: шухăшлатăп, иккĕленетĕп, планлатăп. Ĕçе вĕçне çитерме пултарнишĕн савăнатăп.

*– Алина, эсĕ - композитор, сăвăç, юрăç, ташăçă...*

– Çапла. Çавăн пекех эпĕ режиссер та. Декораци йĕркелемелле, ташăçăсен костюмне хатĕрлемелле – пĕтĕмпех тĕп тема. Концертри кашни пулăм çыпăçуллă, выранлă пулмалла. Вак-тĕвек ыйтусене те шута илетĕп.

*– Çемьепе, тăвансемпе юнашар пулма та хĕнтерех пулĕ сана?*

– Мăшăрăм – продюсер, финанс ыйтăвĕпе тата концертсем йĕркелессипе тимлет. Ангелина хĕрĕм тăхăр çултанпах юрлать. Республикăри «Мехел» конкурсра та палăрчĕ. Чăвашла каласма питĕ юратать. Çавăнпа юрăсем те çыратăп ун валли. Ывăлăм – Кирилл – Пĕтĕм Раççейри бал ташшисен конкурсĕн çĕнтерÿçи. Пирĕн концертсене те илем кÿрет вăл хăйĕн хитре хусканăвĕсемпе.

Елчĕк районĕнчи Шуршу хĕрĕ ача çулĕсенче те, халĕ те София Ротару, Надежда Кадышева, Августа Уляндина юррисене ытларах килĕштерет. Хайне вăл пародире те тĕрĕслет хăш-пĕр чухне. Елена Османова, Августа Уляндина «копийĕсем» аванах пулса тухаççĕ унăн.



*Хирург-çыравçă*

## Волков Анатолий Никандрович (1931)

Медицина ăслăлăхĕсен докторĕ Анатолий Никандрович Волков профессор – Елчĕк районĕнчи Аслă Елчĕк çынни. Хусанти медицина институтне хĕрлĕ дипломпа пĕтернĕ.

Пурнăç анлăшĕ унăн Канаш районĕнчи Сиккасси участок больницинче пуçланнă. Кунта вăл 1955-1958 çулсенче ĕçленĕ, хăй тĕллĕн шухăшлама пĕлнипе, хирургире çĕнĕ мел-меслет шырама ўркенменнипе тўрех палăрнă, ял пульницинчех кăткăс операцисем тунă. Аспирантура хыççăн пĕр тапхăр Казахстанри Актюбинскра тăрăшнă, 1968 çултанпа – Шупашкарта.

Калас сăмахăм вăл мĕн тери чаплă тухтăр пирки мар-ха, вăл çак ĕçре хирурги ыйтăвĕпе 250 ытла ăслăлăх ĕçĕ çырни тĕлĕнмелле çитĕнў пулин те. Вăл çĕклесе илнĕ çĕнĕ тўпе вара – илемлĕ литература. Вăл çырнă «Мĕншĕн çăлтăр ўкет-ши?», «Хирург телейĕ», «Тĕнчере тĕрлĕ этем», «Атте çути», «Пурнăçланнă ĕмĕт», «Малалла-ха пурнăç, малалла» кĕнекесем вулакансен патне шăкăрин çитрĕç.

Кирек мĕнле çыравçăн та, Турă пани пулсан, хăйĕн тавракурăмĕ, ĕçченлĕхĕ пулмалла. Анатолий Никандрович анлă пурнăçăн ылмашуллă сăн-питне тĕрлĕ енлĕ сăнласа пама ăнталать. Хайлавĕсенчи хĕрсемпе арçынсен уçăмлăхне улшăнуллă сăнарĕпе вулакана шухăшлама, тупăшса калаçма чĕнеççĕ пек туйăнать. «Уçăмлăхĕпе улшăнулăхĕ» тенине ăнлантарса пама кирлĕ-ши? Кашни калаçура, хутшăнура тĕрлĕ çынна хайне тивĕçлĕ сăн тупма май килтернине пĕлтерет вăл.

Çыравçă хăй питĕ сăпайлă пулнăран вăл калăпланă ырă сăнарсем ултавпа чунсăрлăха хирĕç кĕрешсе çиеле тухаççĕ, таса чунпа пурăнмаллине вĕрентеççĕ пире.

А.Волков калавĕсенче чун пуянлăхĕ çăлкуç пек тапса тăрать. Шур юр пек тасалăх кунта.

**Телефонпа илнĕ кĕске интервьюран:**

*– Анатолий Никандрович, сирĕн пушă вăхăт çукрах пулĕ: больницăра чирлисене сыватмалла, университетра – вĕрентмелле. Унсăр пуçне семинар-канашлу, конференци, ĕçлĕ тĕлпулусем. Çапах та литературăра та ĕлкĕретĕр. Мĕнле майпа?*

– Тухтăр вăл çырмасăр пултараймасть. Хирург ĕçĕнче уйрăмах, ĕçре лайăххипе юнашарах пулса çитейменни те. Кăмăл питĕ уçă чухне алла ручка тытать те тухтăр, йывăр тапхăрта та чун-хавалне çапла майпа лăплантарасшăн.

*– Каçарăр-ха, ку енĕпе тетў, Геннадий Никандрович витĕм кўнех ĕнтĕ?*

– Вăл çырнисемпе тăтăшах паллашнă. Тете çав тери пултарнăшăн хĕпĕртеттĕм те, мăнаçланаттăм та. Паллах, пĕтĕм енчен хавхалантарса, тĕслĕх кăтартса пыракан пулнă вăл. Анчах калав-повеç çырма час пуçламан эпĕ – иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсен вĕçĕнче çеç...

## Ыркӑмӑллӑха талпӑнакан



### Волкова Валентина Владимировна (1971)

Ылтӑнчеч – Атӑлҫи Пӑлхар патшалӑхӗн юлашки патшин хӗрӗ, пирӗн йӑх-несӗлӗмӗрсен хӳтӗлевҫи. Ашшӗ вилнӗ хыҫҫӑн монгол-тутарсене хирӗҫ кӗрешӗве вӑл ертсе пынӑ. Шӑпах асӑннӑ патша хӗрӗн ятне илнӗ те пултаруллӑ юрӑҫ, Елчӗк районӗнчи Хӑвӑлҫырма ялӗнче ҫуралса ӳснӗ Валентина Волкова (Симукова). Унӑн паттӑр хӳтӗлевҫӗ евӗр пулма ӑнтӑлни пултарулӑхӗнче те палӑрать – ыркӑмӑллӑх концерчӗсем нумай йӗркелет. Ҫакна тӗрлӗ организацисемпе ведомствӑсем панӑ Тав ҫырӑвӗсем те ҫирӗплетеҫҫӗ.

Валентина Ҫирӗклӗ Шӑхальти вӑтам шкула, И.Н.Ульянов ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх университетне пӗтернӗ. Менеджер специальнӑҫне алла илсе суту-илӳпе коммерци тытӑмӗнче пысӑк опыт пухнӑ пулин те, юрӑ-кӗвӗ асамӗ ӑна час-часах пысӑк сцена ҫине туртнӑ. Халӗ вӑл ку енӗпе хайне ҫӗнӗ ҫын тесе шутламасть ӗнтӗ.

Ылтӑнчеч Валерий Раштав, Альбина Юрату, Юхма Мишши сӑввисемпе ҫырнӑ юрӑсемпе ытларах тухать куракан умне. Композиторсенчен Александр Павловпа, Юрий Кашкӑрпа, Светлана Печниковӑпа, Залиф Биксалинпа ӗҫлет.

**Валентина Волкова-Симукова, «Кил ӑшшине упрать анне» («Елчӗк ен», 17.12.2016):**

*«...Атте ташлама юрататчӗ, анне вара халӗ те илемлӗ юрлать. Ульха аппӑшӗпе, Анфиса йӑмӑкӗпе пӗрле юрӑ пуҫласан кӗреке тулса ларатчӗ. Чӑн чӑваш юррисем чунра ейӳ пекех сарӑлатчӗҫ. Мӗн чухлӗ асамлӑх, сапӑрлӑх, янравлӑх ӗлӗкхи юрӑсенче. Аннен тӑлӑха юлса ҫын пулнӑ иккӗмӗш сыпӑкри тетӗшӗ, экономика наукисен кандидачӗ Иван Данилов профессор уявсем умӗн:«Валя йӑмӑкӑм, атя аннӳ патне чӑваш юррисене итлеме каяр», – тесе чӗнсенех инҫе ҫула пуҫтарӑнатӑп. Юрлас килни аннерен. «Шӑвать кун-ҫул» ятпа юрӑ альбомне кун ҫути кӑтартма май ҫитернӗшӗн хӗпӗртетӗп. Анне юррисене вӑл ҫумра чух вӗренсе юлас кӑмӑлӑм пысӑк...»*

## Ун кӗрекинче – пултарулӑх ҫынниссем



### Волкова Рената Николаевна (1988)

Аслӑ Елчӗк ялӗнче 1988 ҫулхи кӑрлач уйӑхӗнче ҫут тӗнчене килнӗ Рената Волкова шкулта вӗреннӗ чухнех район тата республика шайӗнчи тӗрлӗ конкурс-олимпиадӑна хутшӑнса хайне тӗрӗслеме юратнӑ, малти вырӑнсем те йышӑннӑ. Вӑл тӑван ялти вӑтам шкулта пӗлӳ пухнӑ, 2010 ҫулта И.Н. Ульянов ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх университечӗн журналистика факультетне вӗренсе пӗтернӗ.

8-мӗш класра вӗреннӗ чухне районти «Елчӗк ен» хаҫатпа, республикӑри ытти хаҫат-журналпа ҫыхӑну тытма пуҫланӑ. Хастар юнкор 2004 ҫулхине «Тантӑш» хаҫатӑн лауреачӗ те пулса тӑнӑ.

2010 ҫултанпа вӑл – Чӑваш наци радиовӗн эфирӗнче: малтан штатра тӑмасӑр тӑрӑшнӑ, 2011 ҫулхи утӑ уйӑхӗнчен вара – штатри редактор. Рената чӑваш ҫамрӑкӗсем валли «Шурӑмпуҫ» кӑларӑм хатӗрленӗ, театр пурнӑҫӗпе, артистсемпе ҫыхӑннӑ «Чӗнтӗрлӗ чаршав» кӑларӑмшӑн вара темиҫе хутчен те Тав ҫырӑвӗсене тивӗҫнӗ.

Халӗ Рената Волкова – Наци радиовӗнчи ачасем валли хатӗрлекен «Шӑпӑрлан» тата «Пӗрремӗш утӑмсем» кӑларӑмсен авторӗ тата ертсе пыраканӗ. «Литература вулавӗ» вара чӑваш литературипе сӑмахлӑхне юратакансем валли – ӑна та Рената хатӗрлет. Унӑн тепӗр кӑларӑмӗ – «Ырӑлӑх ҫӑлкуҫӗ» – волонтерсен ӗҫ-хӗлӗпе паллаштарать.

«Тăван Атăл» журнал редакторĕпе Лидия Филипповăпа пĕрле хатĕрлекен «Самана таппи» радио итлекенсене уйрăмах килĕшет. Ку кăларăм тӳрĕ эфирта иртет, унта культура ĕçченĕсене – писательсене, поэтсене, драматургсене, ӳнерçĕсене, артистсене – чĕнеççĕ ертӳçĕсем, калаçăвĕ те яланах çивĕч иртет.

Рената Волкова – РФ Журналистсен пĕрлĕхĕн пайташĕ. 2013 çулта вăл ЧР Пуçлăхĕн пултаруллă çамрăксене уйрăм ăнтăлушăн паракан стипендине тивĕçнĕ.



## *Чăваш çипуçĕн маçтăрĕ*

### Воронова Зинаида Ивановна (1951)

Зинаида Воронова пултарулăхпа илемлĕх тĕнчинче çĕнĕ çын мар. Вăл Çĕрпӳри культурăпа çутĕç училищине, Мускаври халăх искусствин университетне, И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетне пĕтернĕ. 1971-1977 çулсенче Елчĕк райĕçтăвкомĕн культура пайĕн инспекторĕнче ĕçленĕ.

*– Зинаида Ивановна, астăватăп, эсир чиновник чухне те ӳсĕмлĕ ĕçлеттĕрччĕ. Хĕрарăмсен «Варкăш» ансамбльне йĕркелесе ăна ăсталăх тĕлĕшĕнчен çӳллĕ шая çĕклерĕр. Унсăр пуçне эсир ертсе пынипех агитбригадăсен тата художество пултарулăх ушкăнĕсен Пĕтĕм Раççейри конкурсĕнче çĕнтернĕччĕ. Халĕ вара искусствăн кăткăс жанрĕпе – тĕрĕ-эрешпе ĕçлетĕр.*

– Эпĕ питĕ ир аннесĕр тăрса юлнă. Унăн сăн-сăпатне упраса хăварас тĕллевпе арчара упраннă кĕпе-тумтирне çĕнĕ «сывлăш» кĕртме шутларăм. ЧНКан пĕрремĕш президенчĕ Атнер Хусанкай тулайри йăхташсем патĕнче чăваш тĕрриллĕ тумтирсен, капăрлăх хатĕрĕсен, пуканесен куравне йĕркелеме сĕнчĕ. Çапла 1991 çултанпа чылай регионта паллаштаратăп тăван халăх эткерлĕхĕпе.

*– Çĕнĕлĕхе, çапах та, мĕнлерех йышăнчĕç-ха тулайра?*

– Тĕлĕнмелле лайăх, пĕтĕмпех уçса параймăн. Уйрăмах Чĕмпĕрти тĕлпулăва палăртас килет. «Эткер» телекăларăм ертӳçи Олег Мустаевпа тӳрех пĕр чĕлхе тупрăмăр. Чăваш çипуçĕ çинчен ярăм йĕркелерĕмĕр. Кăларăмсем ăнăçуллă пулнипе пĕрлех, малашлăх çулĕ те никĕсленсе пычĕ: çĕнĕ тĕлпулусем, çĕнĕ ĕçсем.

*– Зинаида Ивановна, эсир наци тумĕпе «чирлесе» кайни куçкĕрет. Пуян опыта ытти ăстасем хушшинче сарас пирки мĕн шутлатăр?*

– Ырă ĕç алран алла куçса пымалла тетĕр-и? Тĕрĕс, хăв пĕлнине хĕвре тытмалла мар. Пушкăртстанри Авăркас районĕнчи Шланлă ялĕнче Н. Ефимовăпа паллашнăччĕ. Вăл мĕн ачаран хĕрарăмсен пуçа тăхăнмалли хатĕрĕсене çĕлеме ĕмĕтленнĕ иккен. Ăна Шупашкара йыхравларăм, хам мĕн пултарнине ăна вĕрентрĕм.

Анат Камăри Г. Спиридонова ертсе пыракан ачасен чăваш фольклор ушкăнĕпе пĕрле ĕçленин те усси пулчех.

**З. Яковлева, В. Архипова, «Чăваш тумĕ – халăх пуянлăхĕ» («Чăваш тĕнчи», 25.10.2017):**

*– Кăçалхи кăрлач-пуш уйăхĕсенче регионсем хушшинчи «Чăваш тумĕ – халăх пуянлăхĕ» конкурс пурне те хавхалантарса ячĕ. ЧНК районсенчи уйрăмĕсен тата Раççей регионĕсенчи наци культура автономийĕсен хастарĕсем çак ĕç пархатарлине, кирлине тата тарăнрах ăнланчĕç.*

*«...Фестиваль чăваш халăх тумĕн ытарайми тĕслĕхĕсемпе – XVIII ĕмĕртен пуçласа паянхи кун таран – паллаштаракан пулăм пулса тăчĕ. Çипуçпа капăрлăх тĕслĕхĕсем, халăх тумĕ ĕмĕртен ĕмĕре мĕнле аталанса пынине тĕшмĕртме май парать. Хамăрăн историе тĕрĕ, тум урлă вĕренмелле», – палăртрĕ ЧНК халăх ăстисен ассоциацийĕн ертӳçи Зинаида Воронова.*

**Е. Зайцева, «На сцене и на картинах» («Советская Чувашия», 16.05.2017):**

*«Большой успех имело участие студентов Чувашского государственного института культуры и искусств на «Студенческой весне – 2017» в МГУ имени М. Ломоносова. Все их выступление – демонстрация традиционного чувашского национального костюма – прошло при непрекращающихся аплодисментах.*

*Возгласами «браво» встретила искушенная столичная публика традиционную одежду всех этнических групп чувашей – верховых, низовых, средненизовых, а также ульяновских, башкортостанских, татарстанских. Именно столько разнообразностей народного костюма входит в коллекцию «Звенящая россыпь веков», созданную руками доцента кафедры народного художественного творчества института Зинаиды Вороновой...»*

Елчĕк ялĕнче ҫуралса ӳснĕ Чăваш Республикин культурăн тава тивĕҫлĕ ĕҫченĕ, Чăваш енри ӳнер промыслин маҫтăрĕ З.Воронова вуншар курава хутшăннă. Пĕтĕм Раҫҫей шайĕнчи конкурссенче кăна 13 хутчен ҫĕнтернĕ, икĕ хутчен Гран-при ҫĕнсе илнĕ. «Раҫҫейри чи лайăх тавар» конкурсра (2016) «Пахалăх отличникĕ» хисеплĕ ылтăн паллăпа чысланă ăна.

## Аякра та кĕтеҫҫĕ ăна



### Выйгетова Алина Анатольевна (1981)

Елчĕк районĕнчи Патреккелте ҫуралса ӳснĕ чипер хĕре, 2004 ҫултах Шупашкарта irттернĕ «Ҫăлтăрсен фабрикинче» «Юрату» юрăпа иккĕмĕш вырăн ҫĕнсе илнĕ Алина Выйгетовăна пĕлмен, илтмен чăваш та юлмарĕ пулĕ. Ҫăмăл машинăсем ҫинчи магнитофонсем вăл шăрантаракан юрăсене янратаҫҫĕ кăна.

Музыка асамлăхĕпе ҫитĕннĕ пике Патреккелти вăтам шкулта, Курнавăш шкулĕн лицей класĕнче вĕреннĕ ҫулсенчех пушă вăхăт тупăнсан ялти культура ҫуртне васканă. Хаваслă каҫсене, районти тĕрлĕ уява хутшăннă: Акатуйра, ҫăварнинче – кирек мĕнле праҫникре те эстрада юррисене шăрантарнă.

Вăтам шкула кĕмĕл медальпе пĕтернĕскер И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн медицина факультетне ҫăмăллăнах вĕренме кĕнĕ. Вĕренӳ ҫулĕсем, унтан тухтăрăн канăҫсăр кунĕсем... Ҫапах вăл хăй килĕштернĕ илĕртӳрен те – юрă-кĕвĕрен – уйрăлман. Вăхăт иртнĕ май «икĕ кайăка хăвалас» темен, пуҫĕпех эстрадăна «чăмнă».

Халĕ Алина Анатольевна репертуарĕнче 100 яхăн юрă. Вырăсла та, чăвашла та юрлать вăл. Чылайăшне Виталий Осипов сăмахĕсемпе Игорь Аркадьев хайланă. Эдуард Табаев, Сергей Марков композиторсемпе, Павел Чернов, Вăрăм Палюк сăвăҫсемпе те ĕҫлеме кăмăллать. Типшĕм Сашук ҫырнă «Мăшăрăм» юрă кĕске вăхăтра хит пулса тăнă. Чăваш эстрада юррисен темиҫе пуххине лекнисĕр пуҫне хăй те уйрăм альбом кăларнă.

Алина Данила Ленскийпе «Пĕрле пулар-и?» проекта ĕҫе кĕртнĕ. Юрăҫсене вĕсем ҫапла майпа халăха илемлĕ юрăсемпе савăнтарнăшăн тĕрлĕ номинацире чысласҫĕ.

Юрăҫсем куракансене тĕрлĕ енĕпе тыткăнлама тăрăшни паллă. Ун пек чухне кĕпе-тумтир та тивĕҫлĕ «роль вылямa» пултарать. Алина та концертсенче темиҫе тум улăштарать, пурте хăйнеевĕрлĕ пулнине, ăста модельер ҫĕленине палăртаҫҫĕ. Илемлĕх маҫтăрĕ такам мар, тăван аппăшех – Наташа. Пултаруллă пулнăранах пулĕ, ытти юрăҫсенчен те ун патне ҫул такăрлатакансем пур. Хăш-пĕр кĕпе-тумтире Алина хăех ҫĕлесе хатĕрлет.

Сцена ăстин пурнăçĕ урапа çинче теççĕ: гастроль хыççăн гастроль. Алина Выйгетова та çавах, унпа курнăçма питĕ хĕн. Телефонпа çыхăнсан та Мускавра, Пушкăртстанра е Чулхулара тесе пĕлтерет. Эппин, аякри чăвашсем кĕтеççĕ ăна, юратаççĕ...

«Саншăн, саншăн, саншăнах...» янăрать юрă. «Кăна Алина Выйгетова шăрантарать»,– теççĕ юрă-кĕвĕ юратакансем. Ăна ыттисемпе пăтраштарма çук, унăн хăйĕн сасси. Уçăскер, янăравлăскер.

## *Хастар йĕркелӳçĕ*



### Гаврилова Ираида Васильевна (1969)

Ираида Гаврилова Елчĕк районĕнчи Кавал ялĕнче çуралса ӳснĕ. 1988 çулта И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетне вĕренсе пĕтернĕ хыççăн шăпа ăна Чĕмпĕр хулине илсе çитернĕ. Çухалса кайман вăл кунта. Вĕри чĕреллĕ, лара-тăра пĕлмен хĕр кунти чăвашсене пĕр чăмăра пухма тăрăшнă. Чăваш культурин центрĕ йĕркеленсен унăн пай пуçлăхĕнче ĕçлеме пуçланă. Йăхташăмăрсен вокал, хореографи тата ӳнер кружокĕсене пуçарса янă. 2005 çулта çамрăксен канашне туса хунă. Вăл ертсе пынипе мал ĕмĕтлĕ яшкĕрĕм сывă пурнăç йĕркине пропагандăлас, тĕрлĕ наци çыннисем хушшинчи çыхăнăва çирĕплетес, чăвашсен авалхи культурине аталантарас тĕлĕшпе пысăк ĕç тăвать.

Облаç шайĕнче çулсерен иртекен чылай уяв, конкурс-фестивальте Ираида Васильевна ячĕпе çыхăннă: «Чăваш шăпчăкĕ», «Пĕчĕк çăлтăр», «Чăваш ачи, сассуна пар!», «Путене». Выранти «Сарпике» конкурсăн çĕнтерӳçи Мускавра иртнĕ пĕтĕм чăвашсен «Чăваш пики» тупăшăвĕнче палăрнă. «Кĕмĕл сасă» фестивальте те Чĕмпĕр тăрăхĕнчи хĕрсемпе каччӑсем хăйсен пултарулăхĕ çинчен кашни çулах уççăн пĕлтереççĕ.

2009 çулта И. Гаврилова тата чăваш наци-культура автономийĕ пуçарнипе «Чăваш Республики – Чĕмпĕр облаçĕ: культура диалогĕ» ятпа пултарулăх ĕçченĕсен, çыравçăсен, вĕрентекенсен, журналистсен тĕлпулăвĕ иртнĕ, мастер-классем, куравсем йĕркеленĕ.

2011 çулта федерацин «Раççей культури» тĕллевлĕ программипе килĕшӳллĕн «Пĕтĕм чăвашсен «Акатуйĕ» проекта ĕçе кĕртме пултарнă, 2015 çулта регионсем хушшинчи чăваш кĕпи-тумĕн «Нарспи» фестивальне çул уçнă.

Хастар ентешĕмĕре Раççей Федерацийĕн культура министрĕн, Ульяновск облаçĕн кĕпĕрнаттăрĕн, Чăваш наци конгресĕн президенчĕн Тав çырăвĕсемпе чысланă.

## *Пуян тĕнчекурăмлă*



### Галошев Владимир Петрович (1968)

Борис Борлен çыравçă пĕр тĕлпулура çапла каланăччĕ: «Пултарулăх пĕр енлĕ пулмасть». Çакă Елчĕк районĕнчи Кушкă ялĕнче çут тĕнчене килнĕ Владимир Галошева тӳрремĕнех пырса тивет. Унра – чăваш тĕнчин вун-вун вăрттăнлăхĕ.

*– Володя, пултарулăх çулĕ çине епле тăнă-ха эсĕ?*

– Эпĕ мĕн пĕчĕкренех искусство енне туртăннă. Юмах, приключениллĕ тата фантастикăлла хайлавсем вулама юратнă май, вĕсене сăнарласа ӳкерме ăнтăлнă. 7-мĕш класран тытăнса «Пионер сасси» (халĕ – «Тантăш») хаçатпа çыхăну тытма пуçланă, конкурссене хутшăннă.

*– Çырасси вара...*

– Вăл та çав вăхăталлах пуçланнă темелле. Фантази пуян пулнăран темĕн те шутласа кăлараттăм. Университетра вĕреннĕ чухне Одюков И.И. профессор урокĕсем витĕмлĕ пулнă-ши е хам та халăх сăмахлăхĕпе кăсăкланнипе-ши – малашнехи картинăсемпе çыруллă хайлавсем пĕтĕмĕшле чăвашлăхпа, юмах-халаппа анлăн çыхăнчĕç.

*– Ӳкерессипатнех таврăнар-ха. Эсĕ ӳкеретĕн, пурнăçа сăнарлăн куратăн, çавăн пиркиех пулĕ çын курманнине асăрхатăн, кăткăс ыйтусене хурав пама пултаратăн...*

– Тĕрлĕрен пулĕ. Чун-чĕрене каякан ĕçе тума кăмăллă. Çырассинчен те, ӳкерессинчен те аякка пăрăнаймарăм. Тен, çакă, икĕ енĕпе харăсах ĕçлени, уйрăм сферăра çӳллĕрех шая çĕкленме май памарĕ пулĕ.

*– Эсĕ кино, фото енĕпе те сулмаклă утăмсем тунине пĕлетпĕр...*

– Çапла, ман пурнăçра анимациллĕ, документлă, илемлĕ фильмсем тата тĕрлĕрен клипсем ӳкерессите çирĕпленсе пырать. Вĕсен шучĕ – 20 ытла. «Пирĕн мăн асаттесен тĕнчи» (2011) фильмпа Чăваш Ен Вĕренӳ министерстви шкулсенче усă курма ирĕк панă. «Чăваш тĕнчи» ярăмпа ӳкернĕ анимаци фильмĕсене Чăваш наци телекуравĕпе темиçе хут та кăтартнă. Интернетра «MrKusatur» ятлă хамăн канал та пур. Унта фильмсен сыпăкĕсемпе тата нумай видеосюжетпа паллашма пулать.

В.Галошев Шупашкарти пир-авăр комбинатĕнче художник-оформитель, «Тантăш» хаçатра корреспондент, Чăваш патшалăх университетĕнче фотограф, музей пуçлăхĕ, ăслăлăх сотрудникĕ, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн аппаратĕнче консультант пулса ĕçленĕ. Пушă вăхăтра вара чун ыйтнине пурнăçланă. Вăл – вунпĕр кĕнеке авторĕ. Тĕрлĕ журналта уйрăм ӳкерчĕксем, карикатурăсем, шаржсем чылай калăпланă. Вун тăвата курав йĕркеленĕ.

Раççей Журналистсен союзĕн, Чăваш ӳнерçисен пĕрлешĕвĕн членĕ Валентина Леонтьева ячĕллĕ кино тата телепрограммăсен VII фестивалĕн (Чĕмпĕр), Пĕтĕм чăвашсен «Асам» кинофестивалĕн (Шупашкар) дипломĕсене тивĕçнĕ.

**Надежда Смирнова, «Кушкă ялĕн «батальонĕ» («Хыпар», 23.06.2015):**

*– Иртнĕ уйăх вĕçĕнче Чĕмпĕр хулинче тĕнчери кинофестиваль иртнĕ. Унта пирĕн ентеш Владимир Галошев «Батальон моей Родины» документлă фильмĕпе хутшăннă, ятарлă парнене тивĕçнĕ.*

*... Фильм чăваш ялĕн вăрçă çулĕсенчи саманчĕсене уçса парать. Автор ăна хăйне евĕрлĕ ӳкернĕ. Вăрçă хроникин сĕмĕпе фронтовиксен портречĕсем ылмашăнса пыраççĕ, унтах – вĕсен наградисем, званийĕсем, вăрçа хăçан тухса кайни тата таврăнни çинчен калани пур. Фильмра вăрçă вăхăтĕнчи юрăсемпе усă курнипе пĕрлех вырăнти композиторăн – Николай Карлинăн – юрри те янăрать...*

## Çĕр çинчи ырă йĕр



### Димитриев Анатолий Георгиевич (1926-2007)

Шăпа ăна иртĕхтермен. Ашшĕне астуман – пурнăçран ир уйрăлнă. Кăмăл-туйăм çирĕплĕхĕ, пуçарулăхĕ, йывăрлăха хăйĕн çине илесси – аслашшĕнчен. Сăпайлăхпа тараватлăхĕ – амăшĕнчен. Ĕçченлĕхĕ хăй çуралса ӳснĕ Кивĕ Арланкассинчи хастар çынсемпе юнашар туптаннă.

Вăрçă пуçланнă çулхине Анатолий Димитриев 15-ре пулнă. Тепĕр икĕ çултан фронта тухса кайнă, Япони милитарисчĕсене хирĕç çапăçнă. Вăрçă хыççăн Патăрьелти педагогика училищине, Поволжскри вăрман-техника институтне, каярахпа партин аслă шкулне пĕтернĕ.

Вăрман хуçалăхĕн дипломĕллĕ инженера направленипе Удмур-



Национальная библиотека Чувашской Республики
И-50206

ти тăрăхне яраççĕ. Йывăççемлĕ, çăлкуççемлĕ тавралăх чăваш ачин чун-чĕрине тӳрех юратупа кĕрсе вырнаçать. Анатолий Георгиевич Вавожскри вăрман хуçалăхĕнче лесничи, директор тивĕçĕсене пурнăçланă хыççăн нумай çул хушши Ува райĕçтăвкомĕн председателĕнче тата КПСС райкомĕн пĕрремĕш секретарĕнче вăй хунă. Партин XXV съезчĕн делегатне Удмурти Республикин Министрсен Советĕнче те, Президиумĕн Аслă Канашĕнче те пысăк должноçсем сĕннĕ. Анчах вăл килĕшмен. «Çын хăй вырăнĕнче пулмалла», – тенĕ.

Кăмăлĕпе Димитриев кĕрешӳçĕ пулнă. Таса чунлăскер, калас тенине тӳррĕн каланăскер, чи малтан хăйĕнчен çирĕп ыйтнăскер, ĕçпе çыхăннă ыйтусенче никама та çăмăллăхпа канăçлăх паман. Пуху-канашлусенче, пичетре район тата халăх пурнăçĕпе çыхăннă ыйтусене яланах çивĕч хускатнă.

1971-1991 çулсенче Удмурти Республикин Аслă Канашĕн депутачĕ пулнă май, Анатолий Георгиевич Ува поселокĕпе районĕшĕн курăмлă ĕç питĕ нумай тунă. Кунта маларах, вăл райĕçтăвком пуçлăхĕнче тимленĕ 60-мĕш çулсенчех ялсене асфальт çулпа çыхăнтарнă, халăх çутçанталăк газĕпе усă курма пуçланă, район центрĕнче культура керменĕпе спорт комплексĕ, картина галерейи, музей, музыка тата ӳнер шкулĕсем, санатори хута янă.

Лара-тăра пĕлмен мал ĕмĕтлĕ ертӳçĕ, отставкăри полковник тăватă кĕнеке пичетлесе кăларма та май çитернĕ. «Ува районĕн хисеплĕ гражданинĕ» ята пĕрремĕш тивĕçнĕскере Октябрьти революци, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав, Хисеп Палли (икĕ хутчен), Аслă Отечественнăй вăрçă (I степень) орденĕсемпе тата медальсемпе наградăланă.

Шел, ентешĕн чĕри 2007 çулта тапма чарăннă.

**«Страницы жизни. О себе, о людях» кĕнекинче (2007) çапла çырнă:**

*«...Позади более полувека созидательного труда – я жил и дышал в едином ритме со страной и эпохой, всегда хотел добра людям – для них добивался большего и лучшего. Пусть новые поколения возьмут самое ценное из опыта старших и шагнут дальше к полной цивилизации общества и внутреннему совершенству человека...»*



## Фронтовик - çыравçă

## Дмитриев Василий Дмитриевич (1924 – 2012)

2008 çулхи пуш уйăхĕн юлашки кунĕ. Василий Дмитриевичăн Шупашкарти Ленин проспектĕнчи хваттерĕнче эпĕ. Унăн «Судьбы людские» (2003) кĕнекипе маларах паллашнăччĕ-ха. Халĕ вара авторпа хăйĕнпе курнăçма май килчĕ.

Çулне кура мар патвар, уçă, вашават вăл. Ĕмĕрне хулара иртнернĕ пулин те, тăван чĕлхепе çыпăçуллă пуплет, ял ыйтăвĕсен çивĕчлĕхне аван ăнланать. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин, милици ветеранĕ – хулари тĕрлĕ вĕренӳ заведенийĕсен кĕтнĕ хăни. Хăй вĕреннĕ Елчĕкри вăтам шкула килсе курма та кăмăл пурччĕ унăн.

В.Дмитриев Пĕтĕм тĕнчери тата Раççейри çыравçăсен пĕрлĕхĕсен членĕ. «Наедине с собой», «Героический путь генерала Григория Вехина» кĕнекесенче хăй лайăх пĕлнĕ тĕрлĕ ӳсĕмри çынсен тĕрлĕрен лару-тăрури ĕç-хĕлне çутатнă. Вĕсемпе юнашарах хăйĕн кун-çулне те уçса пама май тупнă.

В.Дмитриев Елчĕк районĕнчи Энтепе ялĕнче çуралнă. Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ юрисчĕ (2005), Богдан Хмельницкий (3 степень), Хĕрлĕ Çăлтăр, Отечествăлла вăрçă (1 степень) орденĕсене, медальсене, СССР Шалти ĕçсен министерствин (тăватă хутчен), ВЛКСМ Тĕп Комитечĕн Хисеп грамотисене тивĕçнĕ.

... Ун çинчен материал хатĕрленĕ май, вăл çĕре кĕни çинчен пĕлтерчĕç: 2012 çулхи раштав уйăхĕн 19-мĕшĕнче чĕри тапма чарăннă...

**В. Дмитриевăн «Наедине с собой» (1999) кĕнекин умсăмахĕнче Чăваш халăх поэчĕ Юрий Сементер çырнинчен:**

*... Стремление Василия Дмитриевича к художественному, публицистическому слову я ощущал давно. Он в свое время лично встречался с такими видными писателями-фронтовиками, как Константин Симонов, Борис Полевой, Юрий Бондарев, а о встречах с чувашскими литераторами военного поколения и говорить нечего, он с ними просто-напросто дружил, лелея в душе мечту рассказать по выходе в запас о своих военных дорогах.*

*В свою очередь возможность такая представилась, и Василий Дмитриевич, будучи человеком высокой самодисциплины и широкого кругозора, много лет отдав исследовательской работе в архивах и библиотеках, осмысливая трудовой и ратный путь своего поколения, создал свод своих видений и оценок прошлых десятилетий...*

## *Унăн хайĕн стилĕ*



## Егоров Александр Алексеевич (1974)

Александр Егоров, Типшĕм Сашук, Александр Кайдановский... Çак ятсем нумай çыншăн паллă-тăр. Елчĕк районĕнчи Элекçей Тимеш ялĕнче çуралса ӳснĕ чăваш ачине Турă пур енлĕ талант парнеленĕ темелле. Вăл журналист та, юрăç-сăвăç та, сантехник-строитель те... Классикăна та юратать.

И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче чăваш филологийĕпе культура факультетĕнче вĕреннĕ, Вячеслав Оринов режиссерăн студийĕнче ятарлă пĕлӳ илнĕ. Пĕр курсрисемпе «Рия» спектакльпе диплом ĕçне хӳтĕленине паянхи кунччен астăваççĕ-ха тантăшĕсем. Унта Петĕр Эйзин, Петĕр Яккусен сăввисемпе кĕвĕленĕ юрăсене Саша хăех юрланă.

Университет хыççăн пĕр хушă Чăваш патшалăх çамрăксен театрĕн сцени çинче вылянă. Анчах та унтан тухса кайма тивнĕ унăн. Турри çырман пуль тесе çырлахмалли кăна юлнă-ши? Темле çав. Халĕ те хайне «актер» тесе шутлать те вăл.

Çыру ĕçĕнче те Александр Алексеевичăн хайне еврĕлĕ сасă. Такама юрас, пичетленесчĕ-ха тесе çырмасть-çке вăл, чунне уçса çынсен тӳнтер тĕнчекурăмне улăштарас тĕллевпе калать вăл хăй сăмахне. А. Егоров – «Тĕнче пĕтесле юратса» драмăллă повеç авторĕ.

Типшĕм Сашукăн репертуарĕнчи юрăсен 98 проценчĕ хăйĕн. Ытти юрăçсем те шăрантараççĕ унăн хайлавĕсене. Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисчĕ Сергей Павлов тахçантанпах куракансене тыткăнлакан «Ăраскал» юрра кашниех илтнĕ ĕнтĕ. Стас Владимиров, Сергей Кувшинов юрăçсен пултарулăхĕ те Типшĕм Сашукпа çыхăннă. Автор каланă тăрăх, хăй вăл Виктор Цой, Вячеслав Бутусов юррисемпе çитĕннĕ, вĕсене пăхмасăр пĕлет.

**Людмила Якимова, «Пурнăç тăсăлать...» («Çамрăксен хаçачĕ», 16.03.2007):**

*– Пĕрремĕш хут сцена çине тухнине астăватăн-и?*

– Шкулта вĕреннĕ чухнех юрлама юрататтăм. Куракансен умне 17 çулта «Натали», «Пĕрремĕш юрату» тата «Салампи – чăваш пики» юрăсемпе тухнăччĕ. ЧПУн чăваш филологипе культура факультетĕнче вĕреннĕ чухне пулнă ку. Ун чухне пĕрре те хумханман. Залра ырă суна-кансем пулсан эпĕ хама питĕ хăтлă туятăп. «Студентсен çуркуннине» хастар хутшăнаттăм. Халĕ вара сцена çине тухнине йывăррăн чăтса ирттеретĕп. Юрăçсенчен ытларахăшĕ хавасла кĕвĕсем шăрантараççĕ, эпĕ вара

хамăн шухăшлаттаракан юрăсемпе тухса куракана ывăнтаратăп кăна пулĕ тетĕп.

## Чăвашлăха тĕпчекен

### Егоров Геннадий Петрович (1952)

Геннадий Петрович Егоров (Кеннамăн) тĕпчевçĕ-çыравçă хăйĕн çинчен çапла каласа парать:

– Елчĕк районĕнчи Элексей Тимеш ялĕнче 1952 çулхи чӳк уйăхĕн 1-мĕшĕнче çуралнă эпĕ. Ачалăхăм ялта, Пăла юханшывĕн илемлĕ тăрăхĕнче иртнĕ. 8 класс таранччен Патреккелти шкулта вĕреннĕ. Çулла – çуран, хĕлле йĕлтĕрпе çӳреттĕмĕр. Çакă ăс-хакăл тата сывлăх тĕлĕшĕнчен çирĕп пулма пулăшнă пулĕ. 7-8 классенче вĕреннĕ чухне физикăпа икĕ хутчен район олимпиадинче, виçĕ хутчен йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕнче çĕнтертĕм. 1970 çулта, Елчĕкри вăтам шкула пĕтерсен, Ленинградри С.М. Киров ячĕпе хисепленекен вăрман академине вĕренме кĕтĕм. Алла диплом илсен Йĕпреçри вăрман хуçалăхĕнче вăй хутăм.

Сăвăсем маларах та çыркаланă-ха эпĕ. Ку енĕпе ăсталăха туптас тесе Елчĕкри райхаçата ĕçлеме куçрăм.

1979 çултанпа тĕп хулара – Шупашкарта – пурăнатăп. Авалхи грек, латин, перс, араб тата хальхи историксен ĕçĕсем çине никĕсленсе чăваш халăх историне тĕпчессипе ĕçлетĕп. Хальччен вунпĕр кĕнеке, республикăри хаçатсенче 50 яхăн тĕпчев ĕçĕ пичетленĕ.

Тĕпчевçĕ хăйĕн ĕçĕсенче йăх-несĕлĕмĕрсен тымарне шумерсемпе çыхăнтарать.

*«Геннадий Петрович Егоров (Кеннамăн) стал целенаправленно интересоваться историей в 1991 году из-за несогласия с позицией историков, филологов и развиваемой ими тюркской теории происхождения чувашского народа. В мае месяце текущего года исполнилось 20 лет его исследовательской деятельности...* **(«Крещение Руси. Затерянная история чувашей» («КИЛ», 2011, №1-2).**

## Сăвă çырлă та вĕрентет



### Енейкина Галина Леонидовна (1959)

Галина Енейкина (Иванова) Елчĕк районĕнчи Кĕçĕн Таяпара çуралнă, Канашри педагогика училищине, И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн историпе филологи факультетне пĕтернĕ. 1985 çултанпа Патреккелти пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта чăваш чĕлхипе литературине вĕрентет. Маларах тăватă çул ача пахчисенче ĕçленĕ. 2009 çулта Раççей Президенчĕн Грантне илме тивĕç пулнă.

Унăн пултарулăхри палăрăмĕ сăвăсемпе çыхăннă. Виçĕ кĕнеке («Чуну таса пулсан», «Ĕмĕрхи илемлĕх йĕрĕпе», «Сӳнми хĕлхем») авторĕн тарăн шухăшлă та философиллĕ хайлавĕсем районти, республикăри хаçат-журналта пичетленсех тăраççĕ, вулакана хăйĕн ытарлăхĕпе, паха ăсĕпе тыткăнлаççĕ. Тематика енчен пăхсан та сăвăсем ытларах тăван тавралăха, ĕçченсене сăнарланине асăрхатпăр. Чăваш чĕлхин, тăван халăхăн шăпи те аванах хумхантарать поэта, çав вăхăтрах вулакан чун-чĕрине хĕпĕртӳпе, мăнаçлăх туйăмĕпе те хĕмлентереççĕ вĕсем. Çыннăн пурнăçра хăйĕн вырăнне тупасси, пĕлсе те тĕрĕс утăм туса пурăнма чĕнни те унăн творчествинче пысăк вырăн йышăнать. Илемлĕх мелĕсемпе те питĕ пĕлсе усă курать вăл, çакă вара унăн хайлавĕсене чĕрĕлĕх парать, вулаканшăн илĕртӳллĕ тăвать.

**Надежда Смирнова, «Вĕçĕ-хĕррисĕр çăлкуç таппи» («Хыпар»,**

**18.09.2015):**

*– Мĕн çинчен çыратăр?*

– Шкулта ĕçленĕ май çитĕнекен ăрăва хумхантаракан, вĕсене мĕн кирли, хăш çулпа ямалли, начар, киревсĕр утăмсенчен мĕнле асăрханмалла – çавăн пирки шухăшлатăп. Юлашки вăхăтра вĕсене юптарусенче кăтартма тăрăшрăм.

Хăш-пĕр ача тĕпĕртетет,васкать, тăвас тенине пултараймасть – юптару çырса хуратăп. Сăнар вырăнне кайăк-кĕшĕке, чĕрчуна илетĕп. Ун урлă ача кăлтăкне кăтартатăп, мĕнле тӳрленмеллине палăртатăп, пĕтĕмлетӳ тăватăп.

«Ĕмĕр пурăн – ĕмĕр вĕрен» тенĕ ватăсем. Мĕн чухлĕ ытларах пĕлме ăнтăлатăн, шыратăн – çĕнни кашни çул хушăнсах пырать. Çăлкуç таппи пек вăл пĕлӳ – вĕçĕ-хĕрри çук унăн. Хам валли мĕн чухлĕ пуçтаратăп, çавна вĕренекенсене пама тăрăшатăп.

*– Галина Леонидовна, хăш-пĕр шкулта мероприятисене вырăсла сценарипе кăна ирттереççĕ. Сирĕн мĕнлерех?*

– Вырăсла сценарисене илсен те чăн чăвашла хатĕрлеме тăрăшатăп. Фестиваль ирттеретпĕр-и, йăла-йĕркесене уçса паратпăр-и – пĕтĕмпех чăвашла. Нумаях пулмасть пĕлĕве ӳстерекен курсра Патăрьел районĕнче виçĕ эрне пултăм. Унта та ачасене сăвă çырма вĕрентес енĕпе ăсталăх класĕсем ирттертĕм, вĕрентекенсене чăвашла çырнă сценарисем парса хăвартăм…

## *Тележурналист, режиссер*

## Енейкин Алексей Николаевич (1988)



Эпир кашни кунах республика кунçулĕпе, ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă хыпарсен тĕрлĕ кăларăмĕсене пăхатпăр. Вĕсене халăх патне çитерес ĕçре хăйĕн тӳпине Елчĕк районĕнчи Патреккелте çуралса ӳснĕ Алексей Енейкин та хывать. «Чăваш Ен» патшалăх телерадиокомпанийĕнче вăл 2011 çултанпа корреспондентра ĕçлет. Кунта И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн ӳнерпе графика факультетне пĕтернĕ хыççăн килнĕ вăл.

Алексей Николаевич, çĕнĕ хыпарсемсĕр пусне, тĕрлĕ тематика кăларăмĕсем хатĕрлессипе те ĕçлет. Патриотика ĕçĕн витĕмлĕхне шута илсе 2012 çултанпа «Аса ил-ха, салтак», 2015 çултанпа «Вăрçă ачисем» кăларăмсене анлă çул панă вăл. 2016 çулта Мускаври «Просвещение» издательство ирттернĕ «Маршрутами карты памяти» конкурсра çĕнтернĕ.

Тележурналист республикăри хăйнеевĕрлĕ пултаруллă çынсем çинчен те кăларăмсем хатĕрлет, куракана тыткăнлама пĕлет. Тĕрлĕ организацири çавнашкал хастарсен ĕçне ăста çутатнăшăн панă Тав çырăвĕсем те çакна çирĕплетсе параççĕ. Ентешĕн СССР халăх артисчĕ В. Яковлев (2014), РСФСР халăх артистки Н. Яковлева (2015), Сĕнтĕрвăрри районĕн 90 çулхи юбилейĕ (2017) çинчен ӳкернĕ документлă фильмсем те аван пулса тухнă.

А. Енейкин «Чăвашкино» студипе те тачă çыхăнса ĕçлет. 2017 çулта халăхсен туслăхне çирĕплетессине тата терроризма хирĕç кĕрешессине халалланă «Пирĕн пуласлăх – туслăхра» фильмĕпе Пĕтĕм чăвашсен 3-мĕш «Асам» кинофестивалĕнче жюрин ятарлă парнине тивĕçнĕ. Çав çулхинех Чăваш драма театрĕн 100 çулхи юбилейне халалланă журналистсен конкурсĕнче «Чи лайăх видеоматериал» номинацире çĕнтернĕ. Ĕçтешĕсен йышĕнче 2014, 2016 çулсенче «Чи лайăх стенд-ап» конкурс çĕнтерӳçи пулни те унăн ăслав шайĕ, пултарулăхĕ çӳллĕ шайра пулнине кăтартать. А.Енейкина 2019 çулта ЧР Çамрăксен патшалăх премине парса чысланă.

Чăваш Ен Пуçлăхĕн стипендиачĕ художник та, режиссер ĕçне те пурнăçлать. Тĕрлĕ региона тухса паха материалсем ӳкерет, фильмсем валли çĕнĕ сценарисем çырать. Ĕçĕсенче уйрăмах чăвашлăхшăн ăнтăлни аван сисĕнет. Çапла пултăрччĕ малашне те.



# *Кулăш ăсти*

## Ермолаев Петр Николаевич (1979)

Чăваш эстрадинче юрăçсен шучĕ çук-тăр, кулăш ăстисем вара пӳрне хуçса шутламалăх çеç: Виктор Петров, Елена Иовлева, Виталий Сергеев, Григорий Вакку, Евгений Григорьев... Кулăш лавне кашниех туртса пыраймĕ – хăйне кура мехел, уйрăм ăсталăх кирлĕ. Чăваш Ен Пуçлăхĕн стипендиачĕ, Патшалăх Канашĕн Хисеп грамотине тивĕçнĕ Петр Ермолаев ку йышра çухалса кайман: «Çак çула суйланă çыннăн сцена çине тухсан хăйне май тĕлĕнтермĕш пулмалла», – тет вăл.

Паллах, Петр Николаевич биографийĕпе паллашнă май урăхларах шухăш та çуралчĕ. Вăл ăслăлăх енĕпе те çирĕппĕн утма пултарнă. Мĕн тăван, çыннăн кăмăл-туйăмĕ ăçталла туртать – çавăнталла...

Пулас кулăш ăсти Елчĕк районĕнчи Чăваш Тăрăмĕнче çуралса ӳснĕ. Ачаранах сцена çинче пултарулăхне кăтартма пуçланă. Ялти шкулта лайăх паллăсемпе вĕреннĕ, 8-мĕш класа вара Шупашкарти Г.С. Лебедев ячĕллĕ чăваш наци лицейĕн филологи уйрăмне кайса кĕнĕ. Çав вăхăтрах И.С. Максимов-Кошкинский ячĕллĕ чăваш халăх театрĕнче 10 ытла спектакльте тĕрлĕ рольсенче вылянă. Лицее кĕмĕл медальпе пĕтернĕскер И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче, унтан кунтах аспирантурăра, каярахпа Патшалăх служби Атăл-Вятка академийĕнче пĕлӳ пухнă.

Петр Ермолаевăн студент чухне эстрадăпа миниатюра театрĕн илемлĕх ертӳçин пултарулăхĕ пушшех туллин палăрать. Хастарлăхшăн, лайăх вĕреннĕшĕн Н. Бичурин, Н. Никольский стипендийĕсене тивĕçет. Ăсталăхне кура ăна Чăваш патшалăх филармонийĕнчи миниатюра театрĕн труппине илеççĕ.

– Кулăш ăсти пулма пĕрре те çăмăл мар, – чунне уçать артист. – Чунра аслатипе çиçĕм кĕмсĕртетсе янăранă чухне те çынсене култармалла.

Нумай сатирăллă калав, монолог тата юрă авторĕ пулнă май, куракана тыткаларăшĕпе те, мимикăпа та, сăмах пуянлăхĕпе те, уçă сассипе те хăй енне çавăрма пултарать кулăш ăсти. Залри çыхăнупа хутшăну – ăнăçу кăтартăвĕ.

2012 çултанпа П. Ермолаев «Чăваш Енри эстрада артисчĕсен союзĕ» обществăлла организацийĕн финанс енĕпе ĕçлекен директорĕ тата режиссерĕ. Хăй юрланă юрăсене çыртарса 6 альбом кăларнă вăл. Ытти артистсемпе пĕрле – 25 ытла. Чăвашла ӳкернĕ 18 ытла фильмра вылянă. «Чăваш юрри», «Ай, юрлар-и юррине» юрă кĕнекисен редакторĕ. Чăваш патшалăх универститетĕнчи сăмахлăх кафедринче преподавательте тăрăшнă тапхăрта виçĕ ăслăлăх ĕçĕ пичетлеме пултарнă.

**Альбина Юрату, «Эпĕ пăртак ухмах» («Çамрăксен хаçачĕ», 28.03.2014).**

– *Хăш-хăш юрăç сцена çинче хăйĕнчен кулма ирĕк парать?*

– Малти вырăнта – Андрейпа Алексей Шадриковсем. Чылай шӳте вĕсемпе çыхăнтаратăп. Кулленхи пурнăçра пĕр чашăкран çисе пурăнатпăр. Сцена çинче те амăшĕн виçĕ ывăлĕ пек, пĕр-пĕрне ăнланса юрлатпăр, вылятпăр, куракансене култаратпăр. Манăн вĕри те йĕплĕ, вичкĕн чĕлхене пула Виктор Петров хăй те час-часах «шар ку-

рать». Сергей Павлов, Валентина Кузнецова, Иван Шинжаев юрăçсем те манăн юратнă «мишеньсем».

*– Çак профессие манăн сăвă, кĕвĕ тата калав çыракансемпе çыхăнтарас килет. Çутçанталăк пани çук тăк кулăш ăсти те пулаймăн. Тен, сана çак пултарулăх юн урлă куçнă?*

– Анне енчен ратнесем шӳтпе туслă. Анне темĕнле йывăр килсен те пуç усмасть. Атте мăкăртатма пуçласанах: «Савни, ан вăрç-ха. Пирĕн тус-юлташлă пулмалла», – тесе унăн кăмăлне çавăратчĕ...

## *Юрă-кĕвĕ ытамĕнче*



## Захаров Вячеслав Германович (1957)

– 5-мĕш класра вĕреннĕ чухне мана атте хуларан хуткупăс илсе килсе пачĕ, – тет Елчĕк районĕнчи Анатри Тимешри Вячеслав Захаров. – Тӳрех «Сад пахчинчи сар чечекне...» юрра радиопа илтсе калама вĕрентĕм. Каярах шкулта иртекен концертсенче вылянă. Музыкăна юратнипех Çĕрпӳре ятарлă пĕлӳ илтĕм.

Тăрăмри культура çурчĕн йĕркелӳçи пулнă май, паян унăн ăсталăх çăлкуçĕ нумай енлĕн тапса тăрать: сăвăç, композитор, юрăç, сăрă ăсти, фольклорист. Раççей Журналисчĕсен пĕрлĕхĕн членĕ – виçĕ кĕнеке тата магнитоальбом авторĕ. «Алмантай» фольклор ушкăнĕн аккомпаниаторĕ те. Ӳркенмен, юрă-кĕвĕ ытамне путнăскер Патреккелти халăх, Елчĕкри ветерансен «Туслăх» хорĕсене те хаваспах çӳрет. Вăлах Тăрăм ял тăрăхĕн, районти пенси уйрăмĕн, «Елчĕк ен» хаçатăн, «Единая Россия» партин районти уйрăмĕн гимнĕсене çырнă.

Кукаç Славкки (унăн хушма ячĕ) Совет Çарĕнче хĕсметре тăнă-и, ял хуçалăх кооперативĕнче трактористра вăй хунă-и – юрă-кĕвĕрен уйрăлман. Вăл республикăри çемье ансамблĕсен (1994), çамрăк поэтсен (1999), эстрада юррисен (2000-2002) фестивалĕсен, ытти смотр конкурссен лауреачĕ пулнă, ыркăмăллăх концерчĕсем йĕркеленĕ.

Унăн хайлавĕсем шыв юххиллĕн шăнкăртатса вуланаççĕ, рифма-ритм шайĕ те вырнаçуллă:

Асамлă кĕвĕ тĕнчине
Пĕлсе юратрăм пĕчĕкрен.
Юрлатăп халĕ чĕререн
Тăсса хуткупăс кунсерен...

Вячеслав Германович – Чăваш Республикин музыка обществин пайташĕ (2006), Чăваш наци культурин тава тивĕçлĕ деятелĕ (2015). Ырми-канми ĕçне шута илсе ăна 2002 çулта «Районти чи лайăх культура ĕçченĕ» ят панă.

## *«Çырма пĕлмен – купăс калană»*



## Захаров Леонид Вячеславович (1983)

Шупашкар район администрацийĕн акт залне пухăннă çамрăксемшĕн – пăлхануллă самант. Уяв сĕмĕпе тулнă пӳлĕмре шăп, пĕр сывлавра 20 чĕре таппине харăсах илтме пулать тейĕн! Чăваш Ен Пуçлăхĕн стипендине пĕрремĕш хут тивĕçекенсем çеç мар, ăна виççĕмĕш хут илекенсем те хумханнине пытараймарĕç...

Леонид Захаров та çав йышран. Вăл 2005 çултанпа Вăрман-Çĕктерти вăтам шкул директорĕн воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕ тата музыка учителĕ пулса ĕçлет. Елчĕк районĕнчи Анатри Тимеш каччи И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн музыка факультетне вĕренсе пĕтернĕ хыççăн тĕпленнĕ унта.

– Эпĕ атте пулăшнипе шкула кайиччен купăс калама вĕреннĕ.

Çырма пĕлмен – купăс каланă, – тет мал ĕмĕтлĕ çамрăк.

Пур çĕре те ĕлкĕрет вăл, пур ĕçе те тӳрĕ кăмăлпа, яваплăха туйса пурнăçлать. Кăнтăрла шкулта, ачасем хушшинче, каç кӳлĕм Шупашкаркассинчи культура керменĕнче «Шурăмпуç» фольклор ансамблĕпе ĕçлет. 2003 çултанпа – «Уяв» халăх фольклор ушкăнĕн солисчĕ. Шупашкар районĕнчи çамрăксен правительствин пайташĕ те.

«Шурăмпуçпа» ĕçленĕ май, Леонид Вячеславович чăваш йăли-йĕркине, кĕпи-тумтирне, юрри-кĕввине пропагандăлас тĕлĕшпе чылай тимлет. Куракан умне кăларакан кашни номер чăвашлăхпа тачă çыхăнтăр тесе тăрăшать. Фольклор ушкăнĕ хăйĕн пултарулăхĕпе Шупашкар районĕнче çеç мар, кӳршĕллĕ регионсенче те паллаштарать, тĕрлĕ конкурса хутшăнать. 2005 çулта республикăри «Ай, юрлар-и юррине» ăсталăх тупăшăвĕнче çĕнтерӳçĕ ята тивĕçнĕ. «Раççей çăлкуçĕсем» фестивальте те ялти юрăçсене çулсерен хапăл тăваççĕ.

**Николай Смирнов, «Шурăмпуçсем – Шупашкарта» («Тăван ен», 06.12.2015):**

*...Шупашкаркассинчи Леонид Захаров ертсе пыракан «Шурăмпуç» фольклор ушкăнĕ республикăн тĕп хулинче хăйĕн пултарулăхне кăтартрĕ. Унта вăл Агрегат завочĕн культура çуртĕнче иртекен эстрада çăлтăрĕсен гала-концертне хутшăнчĕ...*

*Эмине премийĕн лауреачĕ, Чăваш наци культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Антонина Лукина тата Леонид Захаров вара çуркуннепе юрату çинчен юрларĕç. Сăмах май, пирĕн тăрăхри пултаруллă çамрăк музыкант çак кунсенче кăна-ха хăйĕн пултарулăхне Яков Ухсай ячĕллĕ культура керменĕн сцени çинче Антонина Лукинапа пĕрле кăтартрĕ...*



## Аякри чăвашсен ертӳçи

### Захарова Ираида Витальевна (1959)

«Атăлçи» пĕрлĕх – Эстонири Атăлçи тăрăхĕнчи халăхсем пирки, çав шутра чăвашсем çинчен те, каласа паракан пысăках мар организаци – Елчĕк районĕнчи Тӳскел ялĕнче çуралса ӳснĕ Ираида Захарова тăрăшнипе 2009 çулта йĕркеленнĕ. Вăл каланă тăрăх, асăннă организацие патшалăх пулăшать. Ĕçлесе илес тетĕн пулсан патшалăх шайĕнче проект хатĕрлемелле. Унта çитес 2-3 çулта ирттерекен мероприятисен планне, малашне еплерех аталанма тĕллев лартнине, кашни çул мĕн пурнăçлама палăртнине, мĕн чухлĕ укçатенкĕ кирлине кăтартмалла. Сăмах май, Эстонири пур организаци те çапла ĕçлет иккен.

Ираида Витальевна ертсе пынипе чăвашсемшĕн сахал мар ĕç туса ирттереççĕ. Парна хулинчи Таса Екатерина ячĕпе хăпартнă чиркĕве уçнăранпа 240 çул ытла иртнĕ. Унăн архитекторĕ – Петр Егоров, пирĕн ентеш. Çавна май «Атăлçи» çак уява халалласа конверт марки кăларнă. 5000 тиражпа тухнăскер, тĕнчипех саланнă. Çавăн пекех открытка та хатĕрленĕ.

– Эстони радиовĕпе пĕрле чăваш кăларăмĕсем йĕркелерĕмĕр, – аякри çĕршывра пуçарнă ытти ĕçпе паллаштарать И. Захарова. Вăл эфира 25 минутшар уйăхра пĕрре тухать. Унта чăвашсен паллă çыннисемпе паллаштаратпăр, çĕнĕ хыпарсем пĕлтеретпĕр. Пурне те ăнланмалла пултăр тесе вырăсла куçаратпăр. Халăх юррисем те янăраççĕ.

2014 çулхи пуш уйăхĕнче Эстонири шкулсем валли «Чăвашсем» пособи кăларнă. Ăна Ираида Захаровăпа Ита Сарман хатĕрленĕ.

Таллинра чăвашсен çипуçĕсен музейĕ те пур. Коллекцире – XIX ĕмĕр вĕçĕнчен пуçласа паянчченхи тумсем. Экспозици Раççейĕн

тĕрлĕ кĕтесĕнче пурăнакан чăвашсен йăли-йĕркипе те паллаштарать. Кунта ĕҫлекенсем хăнасем валли экскурсисемпе мастер-класcем, тĕрлĕрен ытти мероприяти ирттереҫҫĕ.

– Праски Витти художникăн куравне йĕркелерĕмĕр. Вырăнти журналистсемпе ҫыхăну тытнă май хамăр ирттерекен пур мероприятие те тĕрлĕ ҫĕрте ҫутатма тăрăшатпăр, – хавхаланса пĕлтерет ентешĕмĕр.

Ираида Витальевна тăрăшнипех Эстонири фольклор ушкăнĕсем Чăваш Енри «Раççей ҫăлкуҫĕсем» фестивале хутшăнаҫҫĕ. Вăл – Эстони Президенчĕ ҫумĕнчи сахал йышлă нацисен ҫавра сĕтелĕн членĕ.

И. Захарова Ленинградри коопераци училищине (1981), Мускаври Центросоюзăн коопераци институтне (1988) пĕтернĕ. Ăна Чăваш Республикин Президенчĕн тата Эстони Республикин Президенчĕн Тав ҫырăвĕсемпе чысланă.

## *Аваллăха тĕпчекен*



## Иванов Владимир Николаевич (1966)

Владимир Иванов (Алмантай) – юлашки ҫулсенче палăрнă таврапĕлӳҫĕ-тĕпчевҫĕсенчен пĕри. Елчĕк районĕнчи Хĕрлĕҫыр ялĕнче ҫут тĕнчене килнĕскер, Ҫĕнĕ Пăвари вăтам шкула (1983), Сĕнтĕрвăрринчи 9-мĕш номерлĕ профессипе техника училищине (1984), Хусанти патшалăх педагогика институтне (1992), Мускаври Славян культурин патшалăх академине (2015) пĕтернĕ. 1984-1986 ҫулсенче Совет Ҫарĕнче хĕсметре тăнă.

Владимир Алмантай – республикăри «Сувар» обществăлла организацин ертӳҫи, сувары.рф сайт йĕркелӳҫи. Вăл пуҫарнипе 2007-2008 ҫулсенче сăвар-пăлхар-чăваш халăхĕн X-XIII ĕмĕрсенчи пурлăх культурине, ҫавăн пекех Чăваш Ен, Тутарстан тата Чулхула облаҫĕн лаптăкĕсенчи XIY-XYIII ĕмĕрсенчи вилтăпри палăкĕсене тĕпчес тĕлĕшпе Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕпе, Тутарстанри Пăлхар хулинчи историпе архитектура музей-заповедникĕпе пĕрле наука экспедицийĕсем ирттернĕ. Тăван ял историйĕпе те хытă кăсăкланать, ăна тĕпчет. Вăл Кив масар вырăнне тупса тĕпчес тĕлĕшпе нумай ĕҫленĕ.

Владимир Николаевич чунĕпе парăннă ĕҫе ăслăлăх статйисенче нумай ҫутатать. Ҫавăн пекех ҫичĕ кĕнеке авторĕ: «Сувары – предки чувашей», «Кто мы – суваро-булгары или чуваши?», «Культура суваро-булгар. Этнические имена и их значения» тата ытти те. Юрийпе Сергей Ювенальевсемпе пĕрле темиҫе кĕнеке кăларнă.

Владимир Алмантай – В.В. Николаев (2011), Вырăк сăвар кнеҫĕ (2013) ячĕллĕ премисен лауреачĕ. Ăна «Мухтав», «Хисеп» паллисемпе чысланă.

Несĕлсен чун, кăмăл-сипет тата пурлăх культурине тĕпчессине, халăх культурине, йăли-йĕркине ҫĕклессине тĕп тĕллев тесе шутлать В. Алмантай.

**Н. Смирнова, «В. Алмантай: «Хамăр халăх кун-ҫулне ҫуррине те пĕлместпĕр» («Хыпар», 22.01.2016):**

– *Владимир Николаевич, мĕн тапратса янă сана ҫак ĕҫе пуҫăнма?*

– Ҫакăншăн пĕтĕмпех атте «айăплă». Вăл – Николай Иванович – хамăр районти Тăрмăш вăтам шкулĕнче географипе биологи вĕрентнĕ. Ҫав вăхăтрах чăваш йăли-йĕркипе те питĕ кăсăкланнă. Ял, йăх кунҫулне ҫырса пынă. Сăмах май, эпир иксĕмĕр те пĕр институтра, пĕр факультетрах вĕреннĕ. Мана хăш-пĕр предметпа аттене ăс

панă преподавательсемех вĕрентрĕç. Ун чухне вĕсенчен ытларахăшĕ самай ватăччĕ ĕнтĕ...

– *«Сувар» фонд пайташĕсем 2011 çулхи чӳк уйăхĕн 25-мĕшĕнче хăйсен пухăвĕнче Сувар кодексне йышăннă. Мĕн тĕллевпе?*

– Халăх хăйĕн йăли-йĕркине, чăвашлăха тĕнчере çухатмасан çеç упраса хăвараять, çавăнпа йышăнтăмăр та Сувар кодексне. Унта тĕп 12 шухăша палăртнă.

– *Сувар арĕсем тата мĕнле ĕçсемпе палăрнă-ши?*

– Несĕлсем авал пурăннă вырăнсене тухса çӳресси йăлана кĕнĕ ĕнтĕ. Атăлçи Пăлхар патшалăхĕ пулнă хутлăха пысăк ушкăнпа темиçе хут та çитсе килнĕ. 2014 çулта юпа уйăхĕнче Тутарстанри Пӳлер таврашĕнчи Валем хуçа çăлĕ патне Юпа лартрăмăр...

## Хастарлăхĕ иксĕлми



### Игнатьева Анисия Павловна (1966)

Чăваш хĕрарăмĕн хастарлăхĕнчен тĕлĕнмелли çук ĕнтĕ. Вăл кирек хăш отрасльте те чунне парса тăрăшать, кил-çурт ăшшине упрать, ачи-пăчине пурнăç çулĕ çине тăрататать, общество ĕçĕнче çунса-вĕресе тăрать. Елчĕк районĕнчи Тăрмăш ялĕнче çуралса ӳснĕ Анисия Игнатьева-Чапуркина (псевдонимĕ Роза Анисси) пирки те çакнах калама пулать.

И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетне (1992), аспирантурине (2015) пĕтернĕскер, Шупашкарти 12-мĕш вăтам шкулта чăваш чĕлхи вĕрентет вăл. Аслă категориллĕ учитель 2002 çултанпа хулари Ленин районĕнчи тăван чĕлхене вĕрентекенсен меслетлĕх пĕрлешĕвне ертсе пырать, 2004 çултанпа Чăваш Республикин вĕренӳ институтĕнче аслă преподаватель пулса та тăрăшать. Вăлах – Чăваш наци конгресĕн Президиумĕн членĕ, «Г.Н. Волков академикăн чунчĕм эткерлĕхĕ» лабораторин ертӳçи, чăваш халăх ăс-хакăлĕпе ӳнер академийĕн тата Раççей Журналисчĕсен пĕрлĕхĕн членĕ. Ăна Раççей Федерацийĕн Федераци Пухăвĕн, Раççей Федерацийĕн наука тата вĕренӳ министерствин Хисеп грамотисемпе, медальсемпе чысланă.

Анисия Павловна чăваш халăхĕн ĕмĕрхи ăс-хакăлне, йăли-йĕркине, кăмăл-сипетне тишкернĕ май, унăн иксĕлми çӳпçинчи тĕлĕнмелли пуянлăха, тарăн шухăша паянхи пурнăçа кĕртсе çитĕнекен ăру патне çитерме тăрăшать. Халăх вĕрентĕвĕн авалхи йĕркисемпе паянхи вĕрентӳре усă курма çул-йĕрсем шырать. Пĕтĕм тĕнчере ят илнĕ Г. Волков ăсчах ĕçĕсемпе кăсăкланнăран, ăна асра тытса хăй ĕçлекен шкулта кашни çул ĕçтешĕсем валли конференци ирттерет. Вырăс чĕлхиллĕ шкулта чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенĕн этнопедагогика компетенцийĕн тĕп енĕсене, унăн пĕтĕмĕшле сăнсăпачĕ педагогика, психологи енчен мĕнле пулмаллине тĕпчет. 2013 çулта «Юрататăн тăк – пĕлетĕн» монографи пичетлесе кăларнă. Унăн хаçат-журналсенче, наукăпа практика конференцийĕн статйисен пуххинче кун çути курнă 70 ытла ĕçĕ халăх педагогикин меслетлĕх никĕсĕсемпе вĕрентӳ процесĕн ситуацине шута илсе кирлĕ пек усă курма хистеççĕ.

А. Игнатьевăна 2010 çулта «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ» хисеплĕ ят панă.

**Е. Зайцева, «Родной язык, что с детства нам знаком» («Советская Чувашия», 12.03.2010):**

*... Практикуете на уроках пение?*

– Да, поем. Или в начале урока, или когда вижу, что устали писать. Беру в руки баян и играю мелодии тех песен, которые есть в учебнике. Как известно, все дети любят петь, а для того чтобы петь,

надо знать слова, а значит, их надо учить.

– *Где научились играть?*

– До университета окончила Канашское педучилище – там учителей начальных классов учат музыкальной грамоте.

– *Скажите, чем был продиктован выбор жизненного пути?*

– Наша учительская династия насчитывает более 360 лет...

## *Инженер, юрист, общество деятелĕ*



### Иголкин Анатолий Леонидович (1950)

Анатолий Иголкин (литературăри псевдонимĕ – Арлановский) Елчĕк районĕнчи Кивĕ Арланкасси ялĕнче çуралнă. Ашшĕ учительте ĕçленĕрен-и – вĕренӳ патне туртăм питĕ пысăк пулнă унăн: тĕрлĕ çулсенче Шупашкарти автошкулта, И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче, Ижевскри механика институтĕнче, Удмурт патшалăх университетĕнче, аспирантурăра пĕлӳ пухнă.

Анатолий Леонидович Шупашкарти «Чувашкабель», груз турттаракан автотранспорт предприятийĕнче ĕçленĕ хыççăн комсомол путевкипе В.И. Чапаев ячĕллĕ дивизире (1969-1971) çар хĕсметĕнче тăнă. 1977 çулта Ижевскри проект институтĕнче ĕçлеме пуçласан вăл инженери енĕпе тĕрлĕ должноçа «активнĕ». Каярах генеральнăй директор çумĕ таран çĕкленнĕ. Икĕ рационализаторла сĕнӳ авторĕ.

Ентеш хайне общество ĕçĕнче те кăтартма пултарнă. 1993 çултанпа Удмуртири «Чăваш наци центрĕ» обществăлла организацине ертсе пырать. Вăл пуçарнипех чăваш ялĕсенче «Çеçпĕл», «Шурă акăш» фольклор ушкăнĕсем йĕркеленĕ, çулсерен чăваш чĕлхи кунне, Акатуй, кĕр сăри тата ытти уявсене анлăн паллă тăваççĕ.

Анатолий Леонидович 2014 çулта Г. Вочкановăпа «Живое дыхание земли» кĕнеке пичетлесе кăларнă. Ăна Пархатар ятлă чăваш ялĕн 100 çулхи юбилейне халалланă. Елчĕк ачи «Чуваши в удмуртском крае» кĕнеке авторĕ те.

А. Иголкин – Чăваш наци конгресĕн Мăн Канашĕн, Раççей юрисчĕсен ассоциацийĕн, Раççей Журналисчĕсен, Чăваш писателĕсен пĕрлешĕвĕсен пайташĕ. Ăна Раççей Федерацийĕн Регионсен аталанăвĕн министерствин, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Хисеп грамотисемпе чысланă. Вăлах – Чăваш наци культурин тава тивĕçлĕ деятелĕ, Альберт Канаш, Алексей Талвир, Пайдул Искеев ячĕллĕ премисен лауреачĕ те.

## *Тăма чун кĕртекен*



### Изратова Галина Васильевна (1957-2017)

Галина Изратова – паллă ӳнерçĕ-тĕрĕçĕн Татьяна Шарковăн йăмăкĕ. Илем тĕнчине туртăнасси, ахăртнех, унран килнĕ пулĕ. Шупашкарти педагогика училищинче вĕреннĕ тата ача пахчинче ĕçленĕ (1982-1996) тапхăрсенче ӳнерте малтанхи утăмĕсене тунă. Ăсталăхĕ çĕкленсе, çирĕпленсе пынă май, вара чунĕ ыйтнă ĕçе тӳрреммĕнех кӳлĕннĕ: 1996 çултан Шупашкарти Мускав районĕнчи ача-пăча пултарулăх çуртĕнче ӳнерçĕ-вĕрентекенре тăрăшнă.

Çыпăçуллă та ачаш аллисемпе хĕрлĕ тăмран тĕрлĕ чĕрчун кĕлеткине калăпласа, сăрласа «чун» кĕртнĕ, чăваш йăли-йĕркине тĕпе хурса аваллăха çутатнă. «Чӳк», «Çурхи уявсем», «Тырă çапни», «Çăкăр шăрши», «Ялти туй» тата ытти ĕçсенчи вуншар кĕлетке урлă чăваш кун-çулне курма пулать. Шăрçапа тĕрленĕ «Нарспипе Сетнер», «Пурнăç – малалла» композицисен, ĕлĕкхи чăваш тумĕллĕ пуканесен ав-

торě те вăлах. Унăн «Çăкăр хакě», «Кĕтÿ хăвалани», «Пÿрнеске», «Пулăçпа пулă çинчен хывнă юмах» ĕçĕсене тĕпе хурса ачасем валли видеофильмсем (2001-2003) ÿкернĕ.

Г.Изратова – Чăваш художникĕсен пĕрлешĕвĕн членĕ, халăх ÿнер промыслисен ăсти.

**Лидия Филиппова, «Чунлă тăм теттесем» («Тăван Атăл», 2011, 9 №):**

... Тăмран, кĕççерен, çĕтĕкрен, йывăçран хатĕрленĕ пуканесем, кил-çурт таврашĕнчи выльăх-чĕрлĕх, тĕрленĕ, вĕтĕ шăрçапа эрешленĕ хатĕрсем. Çакскерсем – вĕсене ăсталаканăн чун ăшшийĕпе, юратăвĕпе, тăрăшулăхĕпе кун курнăскерсем...

Унăн пуканийĕсем ахаль тетте мар, вĕсен чăвашлăхĕ çиелтен тумлантарнă çипуçра мар, ăстан ĕçченлĕхĕнче, асатте-асанне пурнăçне çухатманнинче...

## *Ватăлма пĕлмен çыравçă*



## Иноходов Иван Павлович (1945)

Елчĕк районĕнчи Аслă Пăла Тимеш ялĕнче çуралнă Иван Иноходов 1965 çулта «Колхоз ялавĕ» (халĕ – «Елчĕк ен») хаçатра корректорта ĕçлеме пуçланă. Редакцири мĕн пур должноçра (яваплă секретарьсăр пуçне) вăй хунă вăл хăй ĕмĕрĕнче. Ĕç кĕнекине «айккинчи» икĕ тапхăр кăна кĕрсе юлнă: Совет Çарĕнче хĕсметре тăни тата КПСС райкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕн инструкторĕнче ĕçлени.

Журналистикăра унăн малтанхи сăвă-калавĕсем çамрăк чухнех кун çути кураççĕ. Тутар писателĕсен хайлавĕсене чăвашла куçарать вăл, «Çĕнĕ йăла-йĕркесене – анлă çул» брошюра пичетлесе кăларать. Унтан – кĕнекесем. Вĕсем унăн халĕ вунна яхăн.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсен пуçламăшĕнче Иван Иноходов çырнă заметкăсем, информацисем, статьясем районти тата республикăри хаçатсенче кун çути кураççĕ. Тÿрех каламалла, хăйĕн пурнăçне ĕмĕрлĕхе пичетпе çыхăнтарасси унăн юнĕнчех пулнă-тăр. Аслă Пăла Тимешри вăтам шкулта вĕреннĕ чухнех вăл тăвата район валли Патăрьелĕнче тухса тăнă «Авангард» хаçатпа тачă çыхăну тытать. Сăнне хаçатра пичетлеççĕ. 1964 çулта хаçатăн активлă ялкорне Патăрьел производство управленийĕн партком бюровĕ тата райсовет ĕçтăвкомĕ Хисеп хучĕпе наградăлаççĕ. Шкулта тухса тăракан «Знание – сила» стена хаçачĕн редакторĕн тивĕçĕсене пурнăçласа пырать. Шăпах çакна асăрханă район хаçачĕн ĕçченĕсем – 10-мĕш класс ачине корректорта ĕçлеме чĕнсе илеççĕ. Каччă малтанхи кунсенченех пичет ĕçне парăнса кÿлĕнет. Çав вăхăтрах ытти тантăшĕсемпе пĕрлех экзаменсене тытса аттестат, каярахпа куçăмсăр майпа аслă шкул пĕтерсе алла диплом илет. Çак çулсенче вăл хăйĕн тавракурăмне хăвăрт анлăлатса пырать, ăсталăхне вĕçĕмсĕр ÿстерет. Ăста журналист тĕлĕнмелле хитре, пурнăç чăнлăхне çутатакан сăнÿкерчĕксем те тума вĕренсе çитет.

1969 çулта И. Иноходов чăваш писателĕсен канашлу-семинарне хутшăнма тивĕçет. Унта Чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкай каланă сăмах тата «Эпир – чăваш çыравçисем» сăвви тарăн шухăша ярать ăна. Унăн пултарулăхĕнче çĕнĕ хум çуралать: кĕнеке хыççăн кĕнеке кăларать. Ăна «Елчĕк район хаçачĕн кĕске энциклопедийĕ» (икĕ кăларăм) кĕнекешĕн «Чăваш Республикин хисеплĕ таврапĕлÿçи» ят парса чыслаççĕ, «Елчĕк ен» хаçат вара Н. Бичурин ячĕллĕ преми лауреачĕ пулса тăрать. «Сирĕн ят вилĕмсĕр. Политика репрессийĕнче шар-терт тÿснисен астăвăм кĕнекишĕн» Тинехпи ячĕллĕ диплома тивĕçет.

Иван Павловича 2002 çулта Пĕтĕм Раççейри халăх çыравне ирттерме хастар хутшăннăшăн ятарлă паллăпа чысланă. Хисеп грамотисемпе дипломсен пысăк шучĕ те унăн тĕрлĕ енлĕ активлăхне çирĕплетет. Ватăлма пĕлмен çыравçă паян та редакци ĕçченĕсемпе тачă çыхăну тытать. Вăл сĕннипех Яманчӳрелте паллă ялкор Петр Комиссаров пурăннă çурт çине асăну хăми вырнаçтарнă, редакцире «Ялкорсем – вăрçă ветеранĕсем» сăнӳкерчĕксен галерейине уçнă.

## *Хорсен йĕркелӳçи*



### Ишмуратова Тамара Васильевна (1969)

Ачалăхри лара-тăра пĕлменлĕх нумайăшĕнче çитĕнсен те сӳнмест. Е пачах урăхла: вăй илсе çĕкленсе пырать. Тамара шкул çулĕсенчех пĕтĕм культура мероприятийĕсен хастарĕ, хор солистки, ташăçи пулнă та – паян та хĕрӳ. «Çамрăк чĕресем» вокалпа инструментсен ансамблĕнче те тĕп шăнăрĕ пулнă вăл.

Пултарулăхăн анлă çулĕ çине тухма ăна Владимир Дергачев юрă вĕрентекенĕпе ют чĕлхесен учителĕ Геннадий Тимофеев пулăшнă.

Тамара Ишмуратова (хĕр чухнехи хушамачĕ – Дементьева) Елчĕк районĕнчи Аслă Пăла Тимешри  вăтам шкула пĕтерсенех пĕр иккĕленмесĕр Ульяновскри культурăпа çутĕç училищине дирижерпа хор уйрăмне вĕренме кĕрет. Студентсен ансамблĕн йышĕнче Польшăра гастрольте пулать. Вĕренӳ хыççăн кĕске тапхăр Юхма Мишшин «Термен» театрĕнче артистка, Чăваш патшалăх академи юрăпа ташă ансамблĕнче солистка пулса ĕçлет.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче «Янра, юрă» ушкăнпа пĕрлешет, Самар, Пенза, Чĕмпĕр облаçĕсенче пулать. 2000-2007 çулсенче Шупашкар район администрацийĕн культура пайĕн пуçлăхĕн çумĕн, 2012-2017 çулсенче республикăри халăх пултарулăхĕн çурчĕн методисчĕн тивĕçĕсене пурнăçланă. 2017 çултанпа – «Трактор тăвакансен культура керменĕ» автономи учрежденийĕн хор енĕпе ĕçлекен специалисчĕ. Ку тытăмра Тамара Васильевна хăйĕн профессионализмне, компетентлăхне тата уççăнрах кăтартма пултарнă. Ĕçленĕ хушăрах И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче «Филолог» квалификацине алла илет.

Вăл пысăк йышлă хор коллективĕсен репетицийĕсене, конкурс-фестивальсене йĕркелесе ирттерет. Кунта ăсталăх кăна мар, вăй-хал та кирлех. «Хавхаланса юрлать чĕре», «Чечеклен, Чăваш Ен», «Тăван çĕршыв юррисем», «Уçă саслă ачалăх», «Черчен чечексем»... – Т. Ишмуратова тӳрремĕн хутшăнса ĕçе кĕртнĕ проектсем. 2013 çулта республикăри Акатуйра пин çынлă пĕрлештернĕ хора хатĕрлесе куракансем умне кăларнă.

Ĕçре тăтăшах çĕнĕлĕх шыракан меслетçĕ пултарулăх ушкăнĕсен ертӳçисемпе семинарсем, мастер-классем, ăсталăх лабораторийĕсем йĕркелет. 5-6 çул хушшинче 300 ытла специалиста вĕренӳпе методика мероприятийĕсене явăçтарнă.

Йĕркелӳ, вĕрентӳ ĕçĕсĕр пуçне Тамара Васильевнăн хушма тӳлевсĕр тивĕçĕ те пысăк: вăл Чăваш Ен композиторĕсен ассоциацийĕн членĕ, Пĕтĕм Раççейри хор обществин республикăри уйрăмĕн явапллă секретарĕ, «Елчĕк ентешлĕхĕ» обществăлла организацин хастарĕ. Уйрăм концертсем те йĕркелет. Унăн юрă-кĕвĕри ăсталăхне тулайри йăхташсем те яланах тулли кăмăлпа йышăнаççĕ. Юрăç репертуарне хăйĕн хайлавĕсемпе те пуянлатать.

Нумай чыслава тивĕçнĕ Аслă Пăла Тимеш хĕрне 2019 çулта ЧР Культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ ятне панă.



# *Хула пейзажҫи*

## Карамаликов Виктор Львович (1966)

Виктор Карамаликов 1983 ҫулта Елчӗкри вӑтам шкула пӗтернӗ. Шкул ҫулӗсенчех Николай Молоствов тренер-преподаватель ертсе пынипе йывӑр атлетикӑра хӑйӗн вӑй-халне ҫирӗплетнӗ, республика шайӗнчи ӑмӑртусенче призерсен йышне те кӗнӗ.

– Сӑпайлӑ, ҫав вӑхӑтрах ҫивӗч те ӑнтӑлуллӑ ачаччӗ, – аса илет халӗ Николай Ефимович. – Спортри шанӑҫӗ пысӑкчӗ, анчах вӑл пурнӑҫ тӗллевне урӑххинче тупрӗ.

Ҫапла, ҫамрӑклӑхри тӗрлӗ шухӑш-ӗмӗт ӑна ҫӗнӗ тӳпене – ӳнере илсе тухнӑ: ҫар тивӗҫне пурнӑҫланӑ хыҫҫӑн И.Я. Яковлев ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх педагогика институчӗн ӳнерпе графика факультетӗнче (1991) пӗлӳ илнӗ. Малалла кунҫулне Тольяттири автомобильсем кӑларакан заводпа ҫыхӑнтарнӑ – инженер-художниксен туслӑ командинче вӑй хурать. Халӗ ӗнтӗ вӑл – ВАЗ ветеранӗ.

Хула сывлӑшӗ Виктора тӗппипех хӑй енне ҫавӑрса илнӗ пулин те, чунра, шалта, ял юнӗ вылять-ха. Йывӑҫ-курӑксемлӗ, ҫырма-ҫатрасемлӗ, пӗве-кӳлӗсемлӗ ҫутҫанталӑк сӑнӗсем художникӑн асамлӑ аллисем витӗр черетлӗн шӑранса тухаҫҫӗ. Атӑл тавралӑхне куравсенче вырӑнлӑ та уҫӑмлӑ уҫса панӑшӑн ентеше хула мэрийӗн культура департаменчӗ Тав ҫырӑвӗсемпе чысланӑ. Унсӑр пуҫне вӑл Тольяттире ҫулсерен иртекен «Зимние сезоны» курава хастар хутшӑнать.

В.Карамаликовӑн хӑш-пӗр выставкисем:

2012 ҫул. Мускав. Таганкӑри патшалӑх курав залӗ. Ӳнерҫӗн ӗҫӗсене критиксем пысӑк хак панӑ.

2014 ҫул. Мускав. Пуҫласа «Раҫҫейри Искусство Эрни» сӑрӑ ӗҫӗсен конкурсне хутшӑнса пейзажҫӑсем хушшинче «Вятка» картинипе ҫӗнтерӳҫӗ пулса тӑрать. «На просторе» ӗҫӗ – 2-мӗш вырӑнта.

2014 ҫул. Берлин. «Раҫҫей литературин ылтӑн ӗмӗрӗ» пӗтӗм тӗнчери курав проектне ӳкерчӗксем тӑратать. Хӑшне-пӗрне Берлинти хальхи художниксен каталогне кӗртеҫҫӗ.

2017 ҫул. Пӗтӗм тӗнчери «Art Geo Award» конкурса йыхрав илет. Раҫҫей элчи унта «После дождя. Болото» ӗҫӗпе «Классика живописӗ» номинацире ыттисене хыҫа хӑварать.

Кӑҫалхи ҫуркуннехи ҫитӗнӗвӗ пирки Виктор Львович шӑнкӑравласах пӗлтерчӗ: «Возвращение с молебна» ӗҫӗпе Раҫҫей Искусство премийӗн I степень лауреачӗ пулса тӑнӑ.

Виктор Львович 2010 ҫултанпа – Раҫҫей ӳнерҫисен пӗрлӗхӗн членӗ. Вӑл – аналитик. Унӑн произведенийӗсене пӑхатӑн та, вӗсенчен кашнинчен пирӗн тӑван кӗтесӗн, ҫӗрӗн, тӗнче культурин ҫутӑлӑхӗ, ӑшши тапса тӑрать. Вӑл хӑйӗн пултарулӑхне Самар тӑрӑхӗпе ҫыхӑнтарнӑ пулсан та чунӗпе тӑван ялӗнче. Хӑйӗн ӗҫӗсенче пурнӑҫӑн тулаш илемне кӑна сӑнламасть, пулӑмӑн шалти аталанӑвне тишкерет. Пейзаж та тӗнчен пӗр пайӗ кӑна мар, ҫакӑнта этемпе ҫут ҫанталӑкӑн ҫыхӑнӑвӗ, пурнӑҫ улшӑнӑвӗ, анлӑ шухӑшлав. Унӑн ӳкерчӗкӗсенче эпир уйрӑм ҫынсене, вырӑнсене курмастпӑр – мӗн пур ҫӗрте пӗтӗмлетӳллӗ сӑнар.

# «Питĕ юрататăп хам профессие»

## Кириллова Валентина Алексеевна (1963)



Комсомольски районĕнчи Нĕркеçрен нумай паллă çыравçă-журналист тухнă. Чаплă ушкăнра Валентина Кирилловăн (псевдонимĕ – Тимĕр Алюш Вали) хăйĕн курăмлă тӳпи – ку таранччен журналист-прозаик виçĕ кĕнеке кăларма пултарчĕ.

Вăл хаçатçă пулмах çуралнă-тăр. Комсомольски район хаçатĕнче тăватă çул ĕçленĕ, 1988 çултанпа – «Елчĕк енре». Урăх ниçта та пăркаланман. «Питĕ юрататăп хам профессие»,– тет журналист. Çырусен пайĕн редакторĕ пулнăран вулакансемпе тачă çыхăну тытать. Ун патне тĕрлĕ ялсенчи ялкорсем килсе çӳреççĕ, шăнкăравлаççĕ. Статья тавраш пирки кăна мар, сĕнӳ-канаш ыйтма та. Çавна май Валентина Алексеевнан вĕрентекен те, психолог та пулма тивет хăш-пĕр чух. Тĕрлĕ шухăшлисемпе, тĕрлĕ шăпаллисемпе çыхăннăран-и – чылайранпа «Пурнăçри ӳкерчĕксем» ярăмпа хушаматпа ята, ял ятне палăртмасăр çыннăн кун-çулне уçса паракан чĕрене витермелли статьясем, калавсем нумай пичетлет.

– «Эсир ман çинчен çырса кăларсан эпир хунямапа е кинпе пĕр çăвартан пурăнма пуçларăмăр, тавах сире», – тесе пĕрре анчах каламан мана, – тет калем ăсти.

В. Кирилловăн ĕçĕ ӳсĕмлĕ. Ăна республикăра иртекен тĕрлĕ конкурсăн çĕнтерӳçисен йышĕнче курма пулать. Культура, Учитель, Ĕç çынни çулталăкĕсенче Чăваш Енри массăллă информаци хатĕрĕсен хушшинчи пултарулăх тупăшăвĕсенче икĕ хутчен пĕрремĕш тата иккĕмĕш вырăнсене, Раççей МЧСĕ йĕркелекен «Огненное перо» конкурсра пĕрремĕш степеньлĕ диплома тивĕçнĕ.

Валентина Алексеевнăна икĕ хутчен Елчĕк ял тăрăхĕн депутатне суйланă. 30 çула яхăн районти хĕрарăмсен канашĕн членĕ вăл. 2006 çулта Пĕтĕм Раççейри хăй тытăмлăх Канашĕн обществăлла организацин учредительлĕ съезчĕн делегачĕ пулнă. Раççей Журналистсен пĕрлĕхĕн пайташне Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн, Раççей Федерацийĕн Çыхăну тата массăллă коммуникацисен министерствин Хисеп грамотисемпе, Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Тав хучĕпе чысланă.

**Елена Петрова, «Профессие чун-чĕререн юрататăп» («Елчĕк ен», 23.09.2018):**

*... Турă пană талант – статья, очерк, тĕрленчĕк... çырасси – пĕчĕкренех вăй илнĕ унра. Чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенсем – Ольга Александровна Волкова, Любовь Степановна Иванова, Владимир Павлович Ермаков – вара хĕрачара çак туртăма атлантарсах пынă. Вĕренекен 5-мĕш класран тăван район хаçачĕпе кăна мар, «Хатĕр пул» журналпа тачă çыхăну тытнă. Çамрăк корреспондента журналистсем те аван палланӑ, унăн пултарулăхне пысăка хурса хакланă. Ахальтен мар ăна 10 класс пĕтернĕ хыççăн «Октябрь ялавĕ» хаçат редакцине ял хуçалăх пайĕн корреспонденчĕ пулса ĕçлеме чĕнсе илнĕ.*

*– Мĕнле, вĕренсе пĕлӳ илмесĕрех-и? – тĕлĕннĕ вăл.*

*– Шăпах хаçатра тăрăшмалли çын эсĕ. Тăван чĕлхене юратни курăнать, ахальтен мар Чăваш патшалăх университечĕн чăваш чĕлхипе литературин уйрăмне куçăмсăр майпа вĕренме кĕменех ĕнтĕ, – ашшĕ пек ăшшăн кĕтсе илнĕ хĕре хаçат редакторĕ Геннадий Уткин...*



## *Хастар çынсем хавхалантараççĕ*

### Клементьева Ирина Николаевна (1979)

Ирина Клементьева (Семенова) Елчĕк районĕнчи Кивĕ Эйпеç ялĕнче çуралнă. Тăван ялти пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул хыççăн И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн журналистика факультетне вĕренме кĕнĕ. Университет хыççăнах 2000 çултанпа «Хыпар» издательство çуртĕнче вăй хума пуçланă: малтан «Чăваш хĕрарăмĕ» хаçат корреспонденчĕ пулнă, 2009 çултанпа – «Хыпар» хаçат тишкерӳçи.

Журналиста тĕрлĕ тема кăсăклантарать: паянхи чăваш ялĕн пурнăçĕпе аталанăвĕ, пурне те ырă тĕслĕх кăтартакан хастар та пултарулла çынсем тата ытти те.

РФ Журналистсен пĕрлешĕвĕн пайташĕ – Республика шайĕнчи тĕрлĕ конкурс çĕнтерӳçи. Чăваш Республикин Пуçлăхĕн çамрăксене пултарулăхри ăнтăлушăн паракан стипендине икĕ хутчен тивĕçнĕ (2002, 2005). Чăваш Республикинчи Журналистсен пĕрлĕхĕн Çемен Элкер ячĕллĕ (2014) тата Леонид Ильин ячĕллĕ (2018) премийĕсен лауреачĕ.



## *Пурăнать ялта художник*

### Краснов Валерий Алексеевич (1969)

Ӳнерçĕсен ытларах пайĕ хуласенче тĕпленнĕ. Валерий Краснова (псевдонимĕ – Ирĕк Килтĕш) вара ял сывлăшĕ, çăлкуç шывĕ, йывăç-курăк пахарах: Елчĕк районĕнчи Çирĕклĕ Шăхальте пурăнать вăл. Йышлă çемьере çитĕннĕскер, чи кĕçĕнни аслисем хушнă ĕçе яланах тĕплĕ тума вĕренсе ӳснĕ. Пӳртре ашшĕ туяннă Левитан, Репин, Грицай репродукцийĕсем çакăнса тăнă. Ача вĕсене пĕр ăмсанса, пĕр савăнса сăнанă. Ӳнер ĕçне суйласа илессинче, тен, çакăн витĕмлĕхĕ те пулнă. Шкулта редколлеги членĕн тивĕçĕсене пурнăçланă, классене илемлетнĕ.

1987-1989 çулсенче çар ретĕнче пулать çамрăк. Ун хыççăн нумай иккĕленсе тăмасть – Йошкар-Ола хулинчи ӳнер училищинче, Мускаври В.И. Суриков ячĕллĕ ӳнер институчĕн Чăваш патшалăх педагогика институчĕн филиалĕнче ăсталăха вĕреннĕ. Аслă пĕлӳллĕ ӳнерçĕ малтан художник-оформитель пулса тăрăшать. Кайран яла таврăнса картинăсем ӳкерес ĕçе пуçĕпех парăнать вăл.

Валерий Алексеевич çут çанталăк тусĕ пулсан та, пейзаж е натюрморт патне туртăнни туйăнмасть. Нумай çынсемлĕ пысăк картинăсене ытларах кăмăллать. «Пĕр ӳкерчĕк çыравçăн пĕр кĕнекипе танлашать», – тет вăл. «Питрав», «Хусан хулине илни», «Пирĕн урам», «Тăван çĕршыв», «Успени чиркĕвĕ» ĕçсем çав шая лараççĕ те. Кашни картина – хăй пĕр тĕнче. Автор чăваш халăхĕн йăли-йĕркисене, уявĕсене, тумтирĕсене уйрăмах çывăха илни курăнать.

Раççей Художникĕсен пĕрлĕхĕн пайташĕ тĕрлĕ куравсене, çав шутра Раççейрисене те, час-часах хутшăнать. 2017 çулта, акă, Хусанта иртнĕ «Тăван çĕршыва халалласа» ят панă куравĕпе Раççейĕн тĕрлĕ кĕтесĕнчен пухăннă ӳнер ăстисем те тĕлĕнсе паллашма пултарнă, пысăка хурса хакланă. Ревель Федоров, Владимир Агеев, Николай Карачарсков, Праски Витти, Николай Енилин тата ытти художниксен ĕçĕсенчен кая маррине, ентешĕмĕрте пысăк малашлăх пуррине палăртнă май ăна Чăваш тата Тутарстан республикисен Культура министерствисен Тав хучĕсемпе чысланă.

Ялта пурăнакан ӳнерçĕн килĕнче вуншар картина упранать,

кашниех хăйĕн хуçине кĕтет. Анчах та маçтăр вĕсенчен уйрăлма васкамасть, хăшне-пĕрне çĕнĕ сăн кĕртет, композицине улăштарать. Пушăрах вăхăтра портретсем çырать. Çемье çавăрмансккер, хуçалăхне пĕччен тытать, выльăх-чĕрлĕх усрать. Тăванĕсем пулăшнипе ниме мелĕпе хута янă мастерскойĕнче чăваш халăхĕн тумтирĕсем, урана тăхăнмалли тата килте усă курнă япаласем упранаççĕ.

Малашнехи плансем пысăк унăн. Тĕллевĕсенчен пĕри – Таяпа хулашне, унта пулса иртнĕ паллă пулăмсене анлă полотно çине сăнласа куçарасси...

## Тĕрлĕ енлĕ пултарулăх



## Краснов Геннадий Афиногентович (1929-2015)

Елчĕк районĕнчи Тĕмерте çуралса ӳснĕ совет, парти, пичет органĕсенче нумай çул ĕçленĕ Геннадий Краснов хресчен çемйинче кун çути курнă. Ялти 7 çул вĕренмелли шкула ăнăçлă вĕçленĕ хыççăн Патăрьелĕнчи педагогика училищине кайса кĕнĕ. Унта хăйĕн ентешĕпе – Анатолий Жирнов сăвăçпа – пĕр вăхăтра вĕреннĕ. Шкулта учитель вырăнĕ пулман пирки клуб заведующинче, ял канашĕн секретарĕнче ĕçленĕ.

Г. Краснов 1953 çулта И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институчĕн историпе филологи факультетне вĕренсе пĕтернĕ. Районти, республикăри тĕрлĕ шкулсенче истори учителĕ пулса ĕçленĕ. Унăн ĕçĕ-хĕлĕ Пăрачкав районĕпе те тачă çыхăннă: вĕрентӳ пайĕн инспекторĕ, шкул-интернат завучĕ, район хаçачĕн пай заведующийĕ, КПСС райкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕн пуçлăхĕ. Районсене пĕрлештерсен Улатăр районĕн парти комитечĕн идеологи пайĕн заведующийĕн çумĕ, хаçат редакторĕн çумĕ пулнă, ĕçĕ яваплă, çынсемпе ĕçлемелле. Çак тапхăра вăл пурнăç шкулĕ тесе шутланă. Çав вăхăтрах пĕлĕвне ӳстерес тĕллевпе партин Ленинградри Аслă шкулĕнче (1964-1966) вĕреннĕ. Ун хыççăн ăна КПСС Çĕрпӳ райкомĕн идеологи енĕпе ĕçлекен секретарьне суйланă.

Геннадий Афиногентовичăн ĕçри пултарулăхне «Хисеп Палли» орденпа (1976), «Ĕç ветеранĕ» тата ытти медальсемпе хакланă.

**«Книга остается с нами» (Геннадий Краснов, «Книгоиздательское дело стало рентабельным», 81-82 стр.)**

*... В 1970-х гг. прошлого века, работая начальником отдела социокультурных учреждений Совета Министров Чувашской АССР, а раньше инструктором общего отдела обкома КПСС, мне постоянно приходилось контактировать с творческими организациями, с видными писателями – Я. Ухсаем, Ф. Уяром, Н. Ильбеком, А. Калганом, А. Емельяновым, Н. Терентьевым и др. Эти встречи позволили быть в курсе событий литературной жизни республики. Нередко меня приглашали выступать по Чувашскому радио по различным проблемам развития культуры и образования.*

*... Тогда я не мог себе представить, что через несколько лет окажусь в кресле директора Чувашского книжного издательства. До этого я попал в тяжелую аварию, после травм и перенесенной клинической смерти мне предлагали инвалидность. Ссылаясь на эти обстоятельства, сопротивлялся, как мог, но мои аргументы оказались не совсем убедительными. Вспомнили, к примеру, что я уже со студенческой скамьи сотрудничал с газетами «Советский патриот», «Пионерская правда», «Учительская газета», «Советская Россия», работал в редакциях, в журнале «Блокнот агитатора», говорили, что этот «багаж» поможет оперативно освоить особенности издательского дела...*



*Кусаруҫă*

## Краснов Леонид Геннадьевич (1955-2008)

Краснов Леонид Геннадьевич Елчĕк районĕнчи Тĕмер ялĕнче ҫуралнă. Вăл официаллă йĕркепе журналистсен е писательсен пĕрлешĕвĕсен пайташĕ пулман. Унăн архивĕнче журналистсен пĕрлĕхне кĕме хатĕрленĕ анкета сыхланса юлнă. Рекомендацисем те пур. Чăваш халăх писателĕсем А. Артемьев, В. Алентей, М. Юхма, Л. Таллеров ҫыравҫăсен пĕрлешĕвне те кĕме хистесех каланă. Леонид Краснов чăваш чĕлхинчен вырăсла мĕнле кĕнекесем пичетлесе кăларни ҫинчен кĕнеке издательстви справка та панă.

Л. Краснов И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн историпе филологи факультетне пĕтерне хыҫҫăн ăслăлăхпа тĕпчев институтĕнче наука сотрудникĕ пулса ĕҫленĕ, ҫавăнтан Совет Ҫарне кайнă. Институт ыйтнипе ăна ҫар хĕсметĕнчен хăтарма пултарнă, анчах вăл хăйĕн ирĕкĕпе суйласа илнĕ ҫак ҫула.

Ҫар хĕсметĕнчен таврăнсан ăна ДОСААФ обкомне ĕҫлеме илнĕ – вĕсене истори тата ҫар тематикипе стендсем, «хĕрлĕ кĕтессем» йĕркелеме пĕлекен (Леонид ӳкерчĕксем тума юратнă), ҫар пурнăҫĕ ҫинчен каласа паракан, лекцисемпе калаҫусем ирттерме, пичетре ДОСААФ паха опытне ҫутатма пултаракан специалист кирлĕ пулнă. Университетра вĕреннĕ вăхăтра Л. Краснов «Ульяновец» хаҫатăн сотрудникĕ пулса ĕҫленĕ, час-часах республикăри хаҫатсенче пичетленнĕ. Халĕ вăл ДОСААФ ĕҫĕ-хĕлĕ ҫинчен Мускаври «Советский патриот» хаҫатра ҫырма тытăннă.

Л. Красновăн малашнехи ĕҫĕ пĕтĕмпех пичетпе ҫыхăннă. Республикăри истори архивĕнче вăл публикаци секторĕн заведующийĕ, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн пресс-секретарĕ, Чăваш Республикин Информаципе пичет министерствин пай пуҫлăхĕ, Чăваш Республикин Президент Администрацийĕн пуҫлăхĕн пулăшаканĕ, информаци ресурсĕсемпе ĕҫлекен пай начальникĕ пулса тăрăшнă.

Кăтартнă ĕҫ вырăнĕсенче тимленĕ чухне вăл хаҫатсемпе радиона пĕрмаях тĕрлĕ информацисем парса тăнă. Л. Краснов публицист ĕҫĕсем уйрăмах иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш ҫулĕсенче чылай ҫынна кăсăклантарнă. Ун чухне вăл, архивра упранакан документсене тĕпе хурса, ХХ ĕмĕрĕн 30-мĕш ҫулĕсенче пирĕн республикăра пĕтĕм ҫĕршыври пекех, кулаксене пĕтерекен кампани пуҫланни, хуҫалăхсене мĕнле сиен туни ҫинчен «Малашнехи утăмсем», «Мĕншĕн вĕсене кулаксем кирлĕ мар?» тата ытти статьясем пичетлесе кăларнă. Влаҫа ҫухатнă чиновниксем ҫакна Совет влаҫĕн ҫитĕнĕвĕсем ҫине тапăннă пекех шутланă. КПСС обкомĕнче ашшĕпе пĕрле ĕҫленĕ хăш-пĕр пуҫлăхсем ывăлне тĕрĕс мар воспитани панă тесе айăпланă.

Ăна «Паянхи ҫурт-йĕр рынокĕ» хаҫат редакцийĕ» ООО директорĕн ҫумĕ, «Чăваш Енри куҫман пурлăх» журналăн тĕп редакторĕ пулса ĕҫлеме чĕнсе илнĕ. Ҫак должноҫсенче 2007 ҫулччен тăрăшнă.

Леонид Геннадьевич куҫару ĕҫĕнче те питĕ нумай тимленĕ.

«...Пĕррехинче пирĕн пата чăваш халăх писателĕ В. Алентей шăнкăравларĕ. «Леонид, – тет вăл. – Эсĕ куҫарни мана питĕ килĕшрĕ, малашне те пĕрле ĕҫлесшĕн эпĕ». Эпĕ ăна: «Василий Степанович, йăнăшатăр-ха, эпĕ унăн ашшĕ», – тетĕп. Манăн сасса илтсен Алентей тĕлĕнсех: «Геннадий Афанасьевич, Леонид сирĕн ывăлăр-и? Час-часах курнăҫатпăр, анчах эсир Леонид чаплă куҫаруҫă пулнине каламастăр».

Чăнах та, Леонид В. Алентейĕн чылай хайлавне вырăсла куҫарнă: «Хĕрлĕ кĕпе», «Сӳнми ҫăлтăр», «Сар ҫӳҫеллĕ сарă тутăр» тата ытти те.

Издательствăн тĕп редакторĕ Г. Орлов та Леонида манăн ывăл мар-и тесе ыйтрĕ. Ун чухне редактор аллине Ф. Акиверăн чăвашларан вырăсла куçарнă калавĕсем – «Рана», «Встреча». «Радость» – лекнĕ. Вĕсем Орлова питĕ килĕшнĕ иккен. Вăл эпĕ мĕншĕн Леонида куçару ĕçĕпе маларах явăçтарманни çинчен каларĕ. Тĕрĕссипе каласан, эпĕ çак ыйтăвăн хуравне халь те тупаймастăп...» (Ашшĕн асаилĕвĕнчен).

Леонид Красновăн чи пысăк куçарнă ĕçĕ, паллах, Л. Таллеровăн «Çăлтăр витĕр çул курăнать» романĕ. Вăл киосксенче хăвăрт сутăнса пĕтнĕ. Писательсем те куçарнă ĕçе пысăк хак панă. Шел, унăн литературăри утас çулне йывăр чир пӳлсе хунă.

## *Куравсенче – 20 çул ытла*

### Краснов Михаил Петрович (1954)



Михаил Краснов Елчĕк районĕнчи Аслă Таяпа ялĕнче кун çути курнă. И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх институтĕн ӳнерпе графика факультетне пĕтернĕ. Ун хыççăн тĕрлĕ вырăнта – «Чăвашгражданпроект» организацире, Елчĕк райĕçтăвкомĕн культура пайĕ çумĕнчи ӳнер мастерскойĕнче, Шупашкарти «Системпром» ăслăлăхпа производство пĕрлешĕвĕнче, «Музей» тулли мар яваплăхлă юлташлăхра тăрăшнă. Елчĕкри, Патăрьелти музейсенче, ача сачĕсемпе вулавăшсенче, суту-илӳ объекчĕсенче хăйĕн интерьер проекчĕсене ĕçе кĕртнĕ. Автопредприятисем валли ĕç хăрушсăрлăхĕпе çыхăннă плакатсен пысăк ярăмне, хăш-пĕр организацисен символла ӳкерчĕкĕсене хатĕрленĕ.

Унăн васкаварлăн тунă ĕç çук – вĕçне çитернĕ япаласем кăна. Кашнинче пысăк ăста алли сисĕнет. Тепĕр чухне пĕр художник çинчен – колорит ăсти, теприн çинчен – композици ăсти тенине илтетĕн. Анчах чăн талант пурте виçеллĕ пĕрлешсен кăна тĕл пулать, М. Краснов – çавсенчен пĕри.

Чăваш ӳнерçисен пĕрлешĕвĕн пайташĕ (1999) республикăра иртекен куравсене 20 çул ытла хутшăнать.

## *Хăй тĕллĕн вĕреннĕ композитор*

### Краснов Николай Иванович (1955 – 2013)



... Зал лăк тулли пулчĕ районăн культура пурнăçĕнче 115 çул тăрăшнă Красновсен пултарулăх каçĕнче. Апла пулсан халăх юрататть Николай Иванович çырнă юрă-такмаксене. Автор Иван Шурбинпа, Алина хĕрĕпе, Нина Сивковăпа тата Елчĕкри культурăпа кану çуртĕнчи «Варкăш», «Туслăх», «Радуга», «Кумсем» ушкăнсем янратакан юрăсем кашни итлекенĕн кăмăлне çывăх. Тăванлăха, туслăха, юратăва, тăван ене мухтаса çырнă юрăсем шăраннă чухне елчĕксенче мăнаçлăх туйăмĕ тапса тăрать: чăннипех те илемлĕ хамăр ен, чăннипех те маттур çав çыннисем.

...Ман кунта савниçĕм,  
юлташпа тăван.  
Манăн Елчĕк енĕм  
ыр çынпа пуян...

Николай Красновăн юлашки концерчĕ пулчĕ ку: 2013 çулхи кăрлач уйăхĕнче.

Культурăра 36 çул ĕç стажĕ пуçтарнă вăл. Совет Çарĕнчен килнĕ хыççăн икĕ çул тракторпа ĕçленине шута илмесен, паллах. 1977 çултан тăван ялĕнчи – Каркаларти – культура çурчĕ çумĕнчи пултарулăх ушкăнне ертсе пынă. Агитбригадăпа уй-хир, ферма ĕçченĕсем патне

тухса çÿренĕ май юрă-кĕвĕ, такмак хайланă. Анчах вăхăтĕнче пурне те пуçтарса пыман. Çав тапхăртах кино кăтартнă. Каярахпа районти культура керменĕнче тăрăшнă: киносетьре – мастер, унтан – культура пайĕн кино кăтартакан предприятийĕн ертÿçи.

Н. Краснов – икĕ кĕнеке авторĕ. Сăвăç, юрăç, хăй тĕллĕн вĕреннĕ композитор 20 ытла юрă хайланă. «Мĕскер парнелем-ши, тăванăм сана» (В. Христофоров та, М. Горшкова та юрлаççĕ), «Тăван енĕм, Елчĕк ен», «Телейсĕр юрату», «Калăр-ха, тăвансем», «Пахчари çĕмĕрт», «Чавса çывăх – çыртма çук» тата ытти юррисене тулайри чăвашсем те юратса шăрантараççĕ.

## *Усламçă, вăйçă, композитор*



### Краснов Петр Леонидович (1967)

Тÿпере янрать
Хуткупăс сасси.
Чĕрере çунать
Юрату юрри...

Шкул çулĕсенчех шăрантарнă Петр Краснов çак юрра. «Каççерен пÿрт умне тухса лараттăм та «Тальянкăпа», унăн çепĕç сассине илтсе тавраран пуçтарăнатчĕç вара», – тет вăл. Ÿсерехпе ăна ял уявĕсене, çĕнĕ çурт ĕçкисене, пулас салтаксен ăсату каçĕсене те чĕннĕ.

Ашшĕ – Леонид Елизарович – пултаруллă вăйçă пулни те çамрăка юрă-кĕвĕ тĕнчипе туслашма хĕтĕртнĕ-тĕр. Сакăр çулта вăл Елчĕкри музыка шкулне вĕренме кĕрет, унта ăста педагогсен – Антонина Питеркина, Галина Московская, Леонид Данилов – тимлĕхне пула хорта та юрлать, музыка теорине те тишкерет, баяна та «пăхăнтарать».

Совет Çарĕнче хĕсметре тăнă хыççăн П. Краснов Шупашкарти Ф. Павлов ячĕллĕ музыка училищинче баян класĕпе вĕрентекен тата халăх инструменчĕсен оркестрĕн дирижерĕн специальноçне алла илет. Дипломлă çамрăк тăван ялах – Елчĕке таврăнать, музыка шкулĕнче преподавательте, культура çуртĕнче пултарулăх ертÿçинче ĕçлеме пуçлать. Мăшăрĕпе – Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисткипе Антонина Красновапа – ачасен икĕ эстрада ушкăнне, çитĕннисен 40 çынран тăракан хорне йĕркелеççĕ. Республикăри смотр-конкурссенче тăтăшах палăрнă вĕсем. Пултаруллă мăшăра сцена профессионалĕсем те асăрханă пулĕ çав – иккĕшне те Чăваш патшалăх юрăпа ташă ансамбльне чĕнсе илеççĕ. Асăннă мухтавлă коллективпа Петр Леонидович Раççейри тата чикĕ леш енчи нумай хулара пулса хăйĕн ăсталăхĕпе паллаштарнă, çĕннине курса вĕреннĕ. Юрă-çемĕ кĕвĕлес тĕлĕшпе те самаях курăмлă утăмсем тăвать вăл. Раççей композиторĕсен ассоциацийĕн пайташĕн (1995) 40 ытла юрă паян. Вĕсене Чăваш Енĕн паллă эстрада юрăçисем Антонина Краснова, Василий Раймов, Людмила Семенова тата ыттисем тăтăшах янратаççĕ.

П. Краснов ансамбльте ултă çул баянистра тăрăшнă хыççăн предприниматель ĕçне кÿленет. Çапах та юрă-кĕвĕ асамлăхĕнче çитĕннĕскер унсăр епле пурăнайтăр-ха? Халĕ вăл иккĕмĕш çул Шупашкар районĕнчи Москаринкасси ялĕнчи «Синепи» фольклор ушкăнне те ертсе пырать.

## *График, скульптор*



### Кудряшев Владимир Владимирович (1902 – 1944)

Владимир Кудряшев (Кудряшов) Хусан кĕпӗрнинчи Теччĕ уесĕнчи Кĕҫĕн Елчĕкре (халĕ – Елчĕк) столяр ҫемйинче ҫут тĕнчене килнĕ. Ашшĕ икĕ хутчен авланнă, иккĕмĕш арăмĕнчен тăхăр ача пулнă. Ҫемье 1907 ҫулта Ҫĕрпӳ хулине куҫса кайнă. Володя, прихут шкулĕнче вĕреннĕ май, учитель унăн сăрă ӗҫĕнчи пултарулăх тĕшшине тӳрех асăрхать. Ҫавна май 12 ҫулти ачана Хусанти ӳнер шкулне куҫараҫҫĕ, стипендипе тивĕҫтереҫҫĕ. Унта вăл Н.И. Фешин, П.П. Беньков, П.М. Дульский тата ытти паллă преподавательсен витĕмĕпе аталанать. Уйрăммăн – живописҫе В.С. Щербаков, скульптура ĕҫне В.С. Богатырев патĕнче алла илет.

В. Кудряшевăн вĕренӳрен ӳнер тытăмне куҫасси 1918-1921 ҫулсенче пулса иртет – вăл отчетлă тата патшалăх куравĕсене хастар хутшăнать. Хăйне живописҫре, гравюрăра, сценографире тĕрĕслет. 1919-1923 ҫулсенче рабочисемпе хресченсен Хĕрлĕ Ҫарĕнче хĕсметре тăнă тапхăрта плакатсемпе ĕҫлессине тĕпе хунă. Чи палли – «Могучим ударом труда мы уничтожим разруху» ĕҫĕ. «Казанский Кремль. Офорты» альбома гравюра ăстисем Э. Голлербах, М.С. Базыкин, С.Н. Гольдштейн пысăк хак панă.

1920 ҫулсен пуҫламăшĕнче ентеш кӳлепеллĕ сăнарсем ăсталассипе пĕрремĕш утăмсем тăвать. Хусанти наци музейĕн фондĕнче вăл йывăҫран касса тунă 10 ытла фигура упранать. Вĕсене шкул ҫулĕнчи ача аллипе «чĕртнĕ» тесе калаймăн. Ҫамрăк автор япалан формине, калăпăшне, шайлашăвне чунпа туйни, модельсен психологи уйрăмлăхне усăмлă палăртни кашни ĕҫĕнче витĕмлĕ курăнать. Асăннă ҫулсенче художникшăн авангардлă шыравсем те ют мар. Уйрăмах йӳнĕ материалтан – рейкăсемпе фанерăран хатĕрленĕ скульптура хăйĕневĕрлĕхĕпе тыткăнланă куракана. Ун чухнехи агитмассăллă праҫниксенче ҫавнашкал вăхăтлăх композицисем пĕлтерĕшлĕ те пулнă. 1927 ҫулта Мускаври патшалăх ӳнерпе техника институчĕн пулас студенчĕн «Голова рабочего» ĕҫĕ ӳнер маҫтăрĕсене те кăсăклантарнă, ун пирки хаҫатсенче ҫырнă. Кӳлепепе паллашма института халăх ҫут ĕҫ комиссарĕ А.В. Луначарский килсе кайнă. Малалла Мускав урамĕсемпе площачĕсене капăрлатассинче асăннă майпа усă курнă.

Мускаври совет художникĕсемпе скульпторĕсен союзĕн пайташĕ 30-мĕш ҫулсен варринче А.С. Пушкин сăнарне, «Амăшлăх» темăна ҫутатассипе тимлет. Мăшăрĕн (Анна Николаевна Вильям) тата ачисен портречĕсене 1938 ҫулта Нью-Йоркри йĕркелӳ комитечĕ вĕсене бронзăран тума заказ парать. 1940 ҫулта амăшлăх ярăмри ĕҫсене, гипспа цементран калăпланăскерсене, ҫĕршывăн тĕп хулинчи Сокольники, Измайлово, Останкино паркĕсенче вырнаҫтарнă.

Саманан йывăр тапхăрне пăхмасăр ҫамрăкăн ӳнерти ҫул-йĕрĕ такăрланма пуҫлани куҫкĕрет. Вăл мĕнпур жанрта та ҫӳле ҫĕкленме пултарнă. Унăн ĕҫĕсем халĕ А.С.Пушкин ячĕллĕ Ӳнер искусствисен музейĕн пуххисенче, Третьяков галерейинче, Вырăс музейĕнче, Тутарстан патшалăх ӳнер искусствисен музейĕнче, ҫавăн пекех Дрезден музейĕн (Германи) гравюра кабинетĕнче, уйрăм ҫынсен коллекцийĕсенче упранаҫҫĕ.

1941 ҫулхи юпа уйăхĕнче В.Кудряшев фронта тухса каять. Хĕвеланăҫ фрончĕн 10-мĕш армин политпайĕнче чертежник, каярахпа художник пулса ĕҫлет. Ҫапăҫусене хутшăнать.1943 ҫулта йывăр аманса госпитале лекет. Чылай вăхăт сипленнĕ пулсан та ура ҫине тăрайман - 1944 ҫулхи чӳк уйăхĕн 9-мĕшĕнче пурнăҫран уйрăлнă. В.Кудряшева Мускавра пытарнă.

**«Выбор В.В. Кудряшева: замысел и воплощение» (отзыв кандидата искусствоведения Ольги Улеменевой, г.Казань):**

*... Драматическая духовная ситуация, в которой существовал мастер с конца 1920-х, общая для многих художников того времени, не желающих подчиняться все нарастающему официозу, побуждая искать, пусть не всегда осознанно, пути сохранения творческой свободы. Для Кудряшева поворот к неоклассике, осуществляемый в 1930-е годы, стал возможностью высказать свое творческое кредо в формах органичных его художественному идеалу и в то же время приемлемых официальной властью.*

*... Совершенство формы, ювелирная тщательность отделки поверхности, аристократическая сдержанность и изысканность делают работы скульптора еще более далекими от советской гигантомании и массовости. В работах Кудряшева живет и развивается традиция русской классической скульптуры XIX века с ее высокими, подлинно гражданственными идеалами...*



## *Ĕнерхи ертӳçĕ — кĕнекеçĕ*

## Левый Илья Иванович (1936)

Илья Левый, хăй вăхăтĕнче Тĕрлемесри бухгалтерсен шкулне (1955), Мускаври ял хуçалăх академине (1966) пĕтернĕскер, шут, тĕрĕслев, банк ĕçĕсенче тимленĕ, 15 çула яхăн «Знамя» колхоз председателĕнче вăй хунă май ялăн инфраструктурине аталантарассишĕн нумай ĕç тунă. Вăл «Тĕш-тыră тата пăрçа йышши культурăсен пысăк тухăçне илекен ăста» ята тивĕçнĕ. Хуçалăх ĕçченĕсен экономика вĕренĕвне чылай тапхăр çӳллĕ шайра йĕркелесе пынăшăн ăна «Чăваш АССР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» ятпа чысланă.

Илья Иванович 1958 çултанпа районта, республикăра тухса тăракан хаçат-журналпа тачă çыхăну тытать. Унта уйрăм çынсен, хуçалăхсен ĕç-хĕлне сахал мар çутатнă, критикăлла статьясем те пичетленĕ. Аслă Çĕнтерӳ 65 çул çитнине халалласа ирттернĕ «Вилнисене манмастпăр, ветерансем умĕнче пуçа таятпăр» конкурсра «Эпир – салтак ачисем» статья районта виççĕмĕш вырăн йышăннă.

И. Левый Елчĕк районĕнчи Хăвалçырма ялĕнче çуралнă, Çирĕклĕ Шăхаль ялĕнче пурăнать. Ку енчи, çывăхри ялсенче пурăнакансене пурне те тенĕ пекех лайăх пĕлет, паллать. Вĕсемпе тăтăшах çыхăнса ĕçленĕ-çке вăл. Тен, çак туртăм хистенĕ те ăна алла ручка тытма. «Çирĕклĕ Шăхаль ял тăрăхĕнчи колхозсем. Ĕлĕкхи тата хальхи» пĕрремĕш кĕнекине кун çути панă хыççăн кайран тата икĕ кĕнеке «çуратнă».

Илья Иванович – тĕплĕ, çирĕп кăмăл-туйăмлă çын. Унăн шурă хут çине ӳкернĕ кашни сăмахĕ те çавăнпа витĕмлĕ. Цифрăсемпе, фактсемпе çирĕплентернĕскерсем – вĕсенче иккĕллĕ шухăш çук.

Вăл – ял тăрăхĕнче, районта иртекен мероприятисен хастарĕ. Ялти ĕç тата тыл ветеранĕсен организацине ертсе пырать. Çирĕклĕ Шăхаль ял тăрăхĕн хисеплĕ гражданинĕ (2009). Чăваш Енĕн хисеплĕ таврапĕлӳçи (2018), Куçма Элли премин лауреачĕ (2019). Ăна «Ĕçри паттăрлăхшăн. В.И.Ленин çуралнăранпа 100 çул çитнĕ ятпа», «Ĕç ветеранĕ» медальсемпе, Чăваш АССР Аслă Канашĕн Президиумĕн Хисеп грамотипе, «1979 çулхи социализмла ăмăрту çĕнтерӳçи» паллăпа чысланă.

## *Хуткупăс ăсти*



### Лукина Антонина Владимировна (1967)

Купăс-баян калакан кашни ҫынрах хавхалану, кăштах ăмсану та ҫуратать пулӗ. Енчен те илемлӗхе йыхравлаканӗ тата чипер те илӗртӳллӗ хӗрарăм пулсан? Антонина Лукина хуткупăс каланине курсанччӗ эсир! Чăннипех тӗлӗннӗ пулăттăр: кирек мӗнле кăткăс кӗвве, ташă ярăмне ҫыпăҫуллă та илӗртӳллӗ ҫавăрттарать вăл.

Культурăпа ҫут ӗҫ училищинче, Хусанти патшалăх культура институтӗнче ятарлă пӗлӳ илнӗ. Халӗ Антонина Владимировна аслă категориллӗ вӗрентекен, 30 ҫул ытла Шупашкар районӗнчи Хыркассинчи музыка шкулӗнче «Тивлет» тата тӗп хулари ача ҫуртӗнче «Сентти» ансамбльсенче ачасен юрă-кӗвӗ ăсталăхне туптать. Вăл ертсе пынипе тивлетҫӗсем Мускав хулинче, Чӗмпӗр, Самар, Челябинск облаҫӗсенче, Тутарстан тата Пушкăртстан республикисенче пурăнакан йăхташăмăрсене хăйсен пултарулăхӗпе тӗлӗнтернӗ, 2012 ҫулта Раҫҫейри ачасен конкурс-фестивалӗнче иккӗмӗш степеньлӗ лауреат дипломне тивӗҫнӗ. «Сентти» ушкăнпа вара Турцири Стамбул хулинче иртнӗ Тӗрӗк халăхӗсен фестивалӗнче палăрнă.

Елчӗк районӗнчи Энтепе хӗрӗ – Эмине ячӗллӗ преми лауреачӗ, Чăваш наци культурин тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ. Унăн пултарулăхӗн чикки ҫук. Уйрăм коллективсене ăнăҫлă ертсе пынисӗр пуҫне, вăл ачасене хуткупăспа тата ытти чăваш халăх музыка инструменчӗсемпе калама вӗрентет, сăвă-юрă ҫырать, юрă альбомӗсем кăларма май тупать, тус-юлташӗсемпе концертсем йӗркелет.

## *Пейзаж ăсти*



### Лукиянов Николай Михайлович (1957)

Иртнӗ ӗмӗрӗн 90-мӗш ҫулӗсенче республикăри ӳнер куравӗсенче хутшăнакансен ретӗнче Николай Лукиянов (псевдонимӗ – Йӗсси Кули) палăрать. Тăван тавралăхăн ансат кӗввисене пурнăҫа ҫывăх кăтартнипе, тарăн туйăмпа тата ăшă кăмăлпа ӳкернипе уйрăлса тăнă унăн картинисем. Вӗсене асăрхамасăр хăварман: 2000 ҫулта сăрă ăстине Чăваш ӳнерҫисен пӗрлешӗвне илнӗ, ӗҫӗсене регионри куравсенче кăтартма пуҫланă, вăл шутра «Анлă Атăл» выставкăра та. Шăп хăйӗн куравӗсем Шупашкарта, Елчӗкре, Патăрьелӗнче, Шăмăршăра, Комсомольскинче ăнăҫлă иртнӗ. Ҫаксем художнике ăсталăха малалла аталантарма хавхалантарнă, суйласа илнӗ ҫул-йӗр тӗрӗслӗхне ҫирӗплетме вăй-хал тата шанăҫ кӳнӗ. Вăл вăхăтра ӳнерҫӗ илемлетӳ, дизайн ӗҫӗпе ытларах вăй хунă. Ҫавăнпа та «ирӗклӗ ишеве» тӳрех тухман.

Н. Лукиянов Елчӗк районӗнчи Энтепере ҫуралнă. Йошкар-Олари ӳнер училищине вӗренсе пӗтерсен тӳрех Мари Элри Мари-Турек районӗнче художник-оформительре ӗҫлеме тытăннă. 1978-1980 ҫулсенче ҫар хӗсметӗнче пулнă. Унтан Патăрьелти культура пайӗнче, райпо тытăмӗнче тăрăшнă. Ҫак тапхăрта пысăк калăпăшлă ӗҫсене те пурнăҫланă – обществăлла ҫуртсен интерьерӗсене илемлетнӗ.

Николай Михайлович Патăрьелте ҫавăн пекех тӗрлӗ ҫурт-йӗре, урамсене, скверсене ҫӗнӗ сăн кӗртет. Ҫавна май гипспа та, чеканкăпа та, граффитипе те, каскалассипе те ӗҫлеме тивет.

Чăн-чăн живописҫе алла илес ӗмӗт ăна пӗрре те канăҫ паман. Ҫакна тума дизайнер ӗҫӗ те хистет, мӗншӗн тесен интерьерсене капăрлатнă чухне стенасем ҫине те, пысăк картинăсем те ӳкерме лекнӗ. Унашкал калăпăшлă ӗҫсене вăл пӗр шиксӗр, тулли кăмăлпа пурнăҫланă.

Ӳнер училищинче пухнă çирĕп пĕлӳпе ăсталăх монументлă ĕçсене пурнăçлама, музейсем, халăх валли историллĕ картинăсем ӳкерме май панă. Тĕслĕхрен, Н. Лукияновăн живопиçпе çыханнă ĕçĕсем Швецин, Японин Мускаври посольствисен залĕсене, Домодедовăри аэропорт интерьерне, çĕршыври тата чикĕ леш енчи коллекционерсен пухмачĕсене илем кӳреççĕ. Хусан епархийĕ валли «Прославление иконы Казанской Божией Матери» нумай фигурăллă композицийĕн ярăмне хатĕрленĕ вăл. Авалхи Пăлхарти тата Чăваш Енри мечĕтсене сăнарланă ĕçсемшĕн Фатхи Бурнаш ячĕллĕ преми лауреачĕ пулса тăнă.

Паян ӳнерçĕ Раççей художникĕсен пĕрлĕхĕн ретĕнче. Çирĕпленсе çитнĕскер, талантлăскер. Вăл тĕрлĕ жанрпа ӳкерет, анчах та пейзажа парăннипе палăрать. Шăп та шай çакăнта курăнать унăн çутçанталăк пӳрни. Маçтăр ансат çырса илнипе мар, чăн-чăн поэзие кăтартнипе уйрăлса тăрать. Анлă уй-хирсемпе çарансемлĕ, капмар йăмрасемлĕ, курăкпа витĕннĕ пĕвесемлĕ, ăшă хĕвел анăçĕллĕ этючĕсем вырăс живопись шкулĕн элчисен – Поленовăн, Левитанăн, Серовăн – йăлисене çывăх. Вырăс пейзажçисен сăпайлă сюжечĕсенче тарăн туйăмсене кăтартма пултарни Н. Лукиянов картинисенче яр-уççăн курăнса тăрать.

Вăл чăваш ялĕн темине ӳстермесĕр, ĕмĕрсем хушши çирĕпленнĕ йĕркесемпе йăласен витĕмĕнче уçса парать. Ĕçĕсене ирĕксĕрех ярăмсене пĕрлештерес килет. Сăмахран, пĕр ярăмĕ – килтен е киле утмалли çул-йĕрсемлĕ пейзажсем, тепри – хĕллехи вăрмансемпе ылтăн кĕркунне сăнĕсем. Çапла вара кашни ĕçре – çутçанталăкăн çĕнĕ шайĕ, авторăн çĕнĕ шухăш-кăмăлĕ.



## *Пысăк ĕмĕтпе*

## **Морозов Андрей Николаевич (1968)**

Пулас ӳнерçĕ Елчĕк районĕнчи Лаш Таяпа ялĕнче çуралнă. Ашшĕ шкул директорĕнче, амăшĕ ӳкерӳ, черчени, ĕç учителĕнче тăрăшнă. Ача виçĕ çул тултарсан çемйи Шупашкара куçса кайнă. Алли тĕрлĕ ĕç патне пынăран ашшĕ-амăшĕ Андрея 9 çултах ИЗО студи-кружокне явăçтарнă. Тепĕр виçĕ çултан хулари ӳнер училищинче пĕлӳ пухма пуçланă. Малтанхи вĕренӳ тапхăрĕсем унăн Шупашкарти профтехучилищĕпе, Мускаври Халăх искусствин университечĕпе (куçăн мар майпа), И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх институчĕн ӳнерпе графика институчĕпе çыханнă. 1999-2001 çулсенче çар тивĕçне пурнăçланă.

Андрей Николаевич киçтĕке аларан пачах вĕçертмен пулĕ: клубсене, шкулсемпе ача пахчисене, парксене çĕнĕ сăн кĕртнĕ, хĕсметре те сăрă ĕçĕ тупăнсах тăнă.

А. Морозов 2000 çултанпа Раççей ӳнерçисен пĕрлĕхĕн пайташĕ. 1996 çултанпа тĕрлĕ шайри куравсене хутшăнать: Париж (1997), Мускав (1999, 2003), Йошкар-Ола, Чулхула (2004). 2013 çулта Хусанта Тутарстанри Халăхсен туслăхĕн çуртĕнче, Патшалăх Канашĕнче 70 картинăран тăракан курав йĕркеленĕ. Унăн хăш-пĕр ĕçĕсем Раççейри тата урăх çĕршывсенчи уйрăм çынсен коллекцийĕсенче упранаççĕ.

– Хула варринче пысăк лаптăкра çурт-мастерской тума пуçларăм, – каласа парать ӳнерçĕ.– Унта илемпе сывлăх центрĕ йĕркелеме шутлатăп: ӳнер салонĕ, интереспа çыханнă клубсем, физкультура пӳлĕмĕ...

# *Эстрадăра «вут-хĕм сапать»*



## Московский Алексей Владимирович (1981)

Чăваш эстрадине Алексей Московский Николай Ефимовăн «Каçарсам» юррипе вирхĕнсе кĕнĕ. Çапах та музыкăри пулас сарлака çулне вăл шкул тапхăрĕнчех такăрлатма пуçланă: 12-13 çулсенчех гитарăна «парăнтарнă», тăххăрмĕш класра юлташĕсемпе «Круиз» ушкăн йĕркеленĕ, «Чăваш Ен чечекĕсем» конкурсра лауреат ятне тивĕçнĕ.

Çав вăхăтсем çинчен Алексей: «Вăл тапхăрта музыкăн тыткăнне лекрĕм пулĕ», – тесе шӳтлесе илет. Вара кайнă çапла – ӳсĕм хыççăн ӳсĕм: Пĕтĕм тĕнчери чăвашсен «Кĕмĕл сасă» (2003) фестиваль лауреачĕ, Чăваш радиовĕн «Кайри-мала» (2003, 2004, 2010, 2011), «Тăртăри» (2006) хит-парадсен, «Çулталăк юрри» (2009, 2010) конкурс çĕнтерӳçи, ЮТВ телеканал ирттерекен конкурсра 2014 çулта «Çулталăкри чи пултаруллă юрăç» ята тивĕçнĕ, 2016 çулта «Çулталăкри чи лайăх юрă» номинацире çĕнтернĕ, çав çулхинех «Çулталăкри чи лайăх арçын» пулса тăнă.

А. Московский И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче икĕ хутчен вĕреннĕ: малтан – филолога, кайран – культуролога. Вĕреннĕ тапхăрта «Самант» эстрада ушкăнĕ туса хунă. А. Никитин ертсе пыракан «Янташ» юрăçисемпе пĕрле концертсем йĕркеленĕ. Петр Ермолаевпа паллашать те – «Ансат» ушкăн чăмăртанать. Юрă тĕнчине çапла майпа пуçĕпех кӳлĕнет темелле.

**«Московскин сасси Мускавра та янăрать» («Хыпар», 16.06.2017 ç.):**

*«...–Юрлас ăсталăху камран куçнă вара?*

– Анне больница хорĕнче юрланă, атте районти «Сельхозтехника» пĕрлешĕвĕнче конферансье пулнă, çапах асатте, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи ветеранĕ, çапăçу хирĕнчех сăвăсем çырса кĕвĕленĕскер, кăмăлĕ хаваслă чухне: «Мана хывнă эсĕ», – тесе кăкăр çапатчĕ. Ырăсла хайланă юррисене балалайка каласа шăрантаратчĕ. 74 çулччен шкулта ачасене вĕрентнĕскер Елчĕк хорне çӳретчĕ.

*– Эстрадăра çӳле çĕклентĕн. Сцена çинчи ĕçтешӳсем ăмсаннине туятăн-и?*

– Ку вĕсен кăмăлĕ, ирĕкĕ. Тепĕр тесен, шăпах вăл аталанма пулăшать. Эпĕ, сăмахран, артистсем пĕр-пĕринпе тупăшса чаплă та илемлĕ концертсем йĕркеленĕшĕн, программăсене çĕнĕлĕхсем кĕртнĕшĕн савăнатăп кăна. Çакă пирĕн эстрада çӳлелле тапаçланнине кăтартать. Анчах, шел те, хальлĕхе конкуренци палăрсах каймасть. Раççей шайне хăпарма пире вăл кирлех.

*– Сценăпа кăна пурнăç тума пулать-и? Юрланисĕр пуçне мĕнрен укça тăватăн?*

– Енчен те юрăç халăхшăн тăрăшать пулсан, репертуара ăна кирлĕ юрăсем кĕртет, хăй тавра артистсен вăйлă ушкăнне пухаять тăк çемьене те тăрантараять, пурнăça та йĕркелеет. Манăн бизнес пурччĕ, хупрăм. Темиçе ĕçпе сапаланса ĕçлеме çăмăлах мар. Малашне халăхшăн сцена çинче ытларах тар тăкасшăн, продюсер центрĕ, чăваш культурипе эстрадине аталантарма ыркăмăллăх фончĕ уçасшăн. Ачасемпе çамрăксен йышĕнче чи пултаруллисене тупса палăртма шоусем йĕркелес килет. Раççей эстрада юрăçисем паян ăçта, миçе çынлă залра юрлассине те пĕлмеççĕ, мĕншĕн тесен билетсене хăйсем сутмаççĕ. Чăваш артисчĕ вара режиссер та, продюсер та, костюмер та, художник та, стилист та, администратор та хăех. Ун пек пулмалла мар, продюсер центрĕ уçăлсан юрăç пултарулăхне ытларах аталантарайĕ, билет сутса, сăвă çырса, юрă хайласа, концерт программине йĕркелесе, декораци хатĕрлесе вăхăта сая ямĕ...

**Альбина Юрату, «Юрăпа кĕтсе илер кашни куна» («Самант», 01.2017):**

... – *Алюш, мĕншĕн ытти юрăç пек ачусене сцена çине пĕрле юрлама илсе тухмастăн?*

– Тĕпренчĕксене вăйпа е астарса, е илĕртсе сцена çине илсе тухни – япăх воспитани пани тесе шутлатăп. Вĕсен хăйсен ĕмĕчĕсем, тĕллевĕсем, интересĕсем. Юратман ĕçĕн пахалăхĕ пĕчĕк. Богдан шкул хыççăн бассейнра ишет, каратэ секцинче кĕрешӳ мелĕсемпе паллашать. Яна вара юрласшăн. «Эпĕ ӳссен юрăç пулатăп», – тет. Юрăкĕвĕ конкурсĕсене хаваспах хутшăнать, дипломсемпе медальсем те пур унăн.

– *Женя Григорьев шоуменпа тытса пыракан «Чалт кăна!» шӳтлĕ кăларăма сире кам калăпласа парать?*

– Турцире тинĕс хĕрринче хĕртĕннĕ чухне пирĕнпе пулса иртекен шӳтсене видеокамерăпа хамăр валли ӳкерме шут тытрăмăр. Сиде хулинче хĕрӳ ĕçе пикентĕмĕр. Сар хĕвелпе киленекен вырăс майрисене чăвашла каластартăмăр. Шупашкара таврăнсан плансене улăштарса ухатари, пулăри шӳтлĕ сценкăсене ӳкерсе Турцири пăтăрмахсемпе хутăштарса DVD-диск кăлартăмăр. Паян хăй вырăнне тупайнă «Чалт кăна!» кăларăмсене республикăри паллă юрăçсене, спортсменсене, ӳнерçĕсемпе сăвăçсене те хутшăнтаратпăр.

Кирек мĕнле юрăçăн та тĕп тĕллевĕсенчен пĕри – сăвăçсемпе, композиторсемпе тата аранжировщиксемпе пĕрле туслăн вăй хурса, пĕрне пĕри ăнланса çĕнĕ юрăсем хайлассии. Çак шутпах Алексей Московский Александр Павлов композиторпа тата Андрей Порфирьев аранжировщикпа музыка студийĕ уçнă. Итлекен патне CD-дискпа виçĕ альбом, DVD-дискпа виçĕ альбом çитернĕ. «Пасаркасси мыскарисем» мюзиклта выляма, икĕ фильмра ӳкерĕнме те мехел çитернĕ юрăç...

Çакна уйрăмах палăртма кăмăллă: 2018 çулта Чăваш наци конгресĕн пайташне Алексей Московские «Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ят панă.

## *Чăвашлăх юхăмĕн патриочĕ*



## Мустаев Олег Николаевич (1965)

Çĕнĕ ĕçе пуçлакана яланах йывăр. Унăн тӳре-шара хирĕçленине хăйĕн шухăшĕсемпе, тĕллевĕсемпе ĕнентерсе, çирĕплетсе çиеле тухмалла. Урăх регионта пулсан кирлĕ ыйтăва татса парасси пушшех те çăмăл мар. Апла пулин те, хĕрӳ чĕреллисем, çиле хирĕç чарăнмасăр шав малалла талпăнакансем – çĕнтереççех!

Елчĕк районĕнчи Çĕнĕ Эйпеçре çуралса ӳснĕ Олег Мустаев, тӳрех калас пулать, вĕри чăваш. Харсăр, пуçаруллă. И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетне вĕренсе пĕтерсен Совет Çарĕнче хĕсметре тăнă. Ун хыççăн – Чĕмпĕр: 1989-2007 çулсенче – облаçри наци телепрограммисен йĕркелӳçи тата тĕп редакторĕ, 2002-2006 çулсенче – чăвашла «Еткер» телепередача, «Хамăрьял» радиопередача ертӳçи.

Чăвашлăх ыйтăвĕпе тата нумай ĕç туса ирттернĕ Çĕнĕ Эйпеç ачи. Чĕмпĕр чăваш шкулĕн никĕсĕ çинче Чăваш патшалăх университечĕн вĕренӳпе консультаци пунктне уçнă, облаçри культура министерстви çумĕнчи чăваш культурин центрне йĕркеленĕ, XIX ĕмĕрте И. Яковлев тутарнă хулари православи чиркĕвне хута янă, чăвашсен наци-культура автономине туса хунă...

Раççей Журналисчĕсен пĕрлĕхĕн пайташĕ (1995), Чăваш наци конгресĕн Ульяновск облаçĕнчи полномочиллĕ представителĕ (1997-2007), тĕрĕк тĕнчине тĕпчекен Фондăн Аслă Канашĕн пайташĕ (Турци, 1995) тăван районта та курăмлă ĕçсем пурнăçланă. Вăл пуçарнипе тата

ертсе пынипе Кивĕ Эйпеçри шкулта хăй вăхăтĕнче кунта чылай çул учительте ĕçленĕ А. Рекеева асăнса палăк (2009) туса лартнă.

О. Мустаев – Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Чăваш комсомолĕн Çеçпĕл Мишши, Аслă Петĕр ячĕллĕ премисен лауреачĕ, Елчĕк районĕн хисеплĕ гражданинĕ. Наци юхăмне аталантарас тĕлĕшпе нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн ăна Раççей Федерацийĕн Президенчĕн, Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Хисеп хучĕсене, Ульяновск облаçĕн кĕпĕрнаттăрĕн алла çыхмалли сехетне, облаçри Шалти ĕçсен управленийĕн ятлă хĕç-пăшалне, медальсене тивĕçнĕ.

Пĕтĕм халăхсем хушшинчи информаци управленийĕн академийĕн чăн член-корреспонденчĕ, Халăх Фрончĕн Пĕтĕм Раççейри обществăлла юхăмĕн регион штабĕн сопредседателĕ, Чăваш наци конгресĕн вице-президенчĕ яланхилле тăрăшулăхпа çĕнĕлĕхсем патне талпăнать.

## *Мускав изданийĕсен лауреачĕ*

## Наумов Василий Александрович (1910-1971)



Василий Наумов (псевдонимĕ – Наган Васлейĕ) Хусан кĕпĕрнин Теччĕ уесĕнчи Курнавăш вулăсне кĕрекен Çĕнĕ Пăва ялĕнче çуралнă. 1927-1929 çулсенче Аслă Арапуçĕнчи хресчен çамрăкĕсен шкулĕнче, 1931-1932 çулсенче Сĕнтĕрвăрринчи çĕр йĕркелӳçисен техникумĕнче, ВКП(б) Елчĕк райкомĕ çумĕнчи икĕ çуллăх парти шкулĕнче вĕреннĕ. 1932 çулта «Коммунар» (Мускав), 1936-1939 çулсенче «Хĕрлĕ ялав» хаçатсен редакцийĕсенче литература сотрудникĕнче, 1939 çулта кĕске вăхăт хушши «Колхоз ялавĕ» хаçатăн явапла секретарĕнче тăрăшнă. 1939-1941 çулсенче Çĕнĕ Пăвари вăтам шкулта кĕçĕн класри ачасене вĕрентнĕ. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче (1941-1943) йывăр аманнă хыççăн III степеньлĕ Мухтав орденĕн кавалерĕ тăван яла таврăннă. Çĕнĕ Пăвари вулав çурчĕн заведующийĕнче икĕ çул тимленĕ хыççăн 1948-1953 çулсенче район хаçачĕн явапла секретарĕнче, редакторта вăй хунă. Унăн статйисем, фельетонĕсем, калавĕсем Мускавра тухса тăнă хаçат-журналта тăтăшах пичетленнĕ. 1935 çулта «Крестьянская газета» хаçат, «Селькор» журнал (Мускав) редакцийĕсен премийĕсене тивĕçнĕ. Вăл 1935 çулта çĕршывăн тĕп хулинче иртнĕ Пĕтĕм Союзри советсен VIII съездне хутшăннă, Совнарком председателĕн В.М. Молотовăн докладне итленĕ.

В. Наумов тăван хуçалăхра сад ăстинче, каярахпа ревизи комиссийĕн председателĕнче ĕçленĕ.

## *Цензура витĕр*

## Немцев Илья Дмитриевич (1949-2012)



Совет саманинче литературăпа искусство аталанăвĕ цензурăран та нумай килнĕ, мĕншĕн тесен пĕтĕм материала тенĕ пекех ун алли витĕр кăларма тивнĕ. Скульпторсен, тĕслĕхрен, Ленин сăнне калăплас тесен Мускаври ятарлă комисси витĕрех тухмалла пулнă. Кашниех телее тивĕçеймен те ку тĕлĕшпе. Илья Немцев эскизĕ вара тӳре-шарана килĕшнĕ-тĕр. 1979 çулта вăл Тăвайри культура çурчĕн фасадне Ленин сăнĕпе капăрлатма ирĕк çĕнсе илнĕ. Каярахпа Вăрмар районĕнчи Кавал ялĕнчи «Çĕнтерӳçĕ-салтак» палăкне çĕкленĕ.

Илья Немцев Елчĕк районĕнчи Аслă Елчĕк ялĕнче çут тĕнчене килнĕ. И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институчĕн ӳнерпе графика факультетне пĕтерсен çĕршыв хӳтĕлевçин тивĕçне пурнăçланă. Пĕр çул Кӳкеçри «Паха тĕрĕ» фабрикăра ӳнерçĕре тимленĕ. 1973-1998 çулсенче – Чăваш Енри ӳнер фончĕн

скульпторĕ.1998 çултан – ирĕклĕ ӳнер ăсти.

Илья Дмитриевич Пĕтĕм Раççей шайĕнчи конкурс-куравсене те активлă хутшăннă. Атăлçи федераци округĕнчи ӳнер ăстисен «Анлă Атăл» курава – тăтăшах.



## *Курăмлă ĕçсен авторĕ*

## Немцев Владислав Дмитриевич (1965)

Владислав Немцев (псевдонимĕ – Сехмет) Елчĕк районĕнчи Аслă Елчĕк ялĕнче çуралнă. И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институчĕн ӳнерпе графика факультетĕнче (1983-1988) ятарлă пĕлӳ илнĕ. Унтан çак аслă шкултах тăхăр çул вĕренӳ мастерĕнче, мастерскойсен кафедра пуçлăхĕнче ĕçленĕ. 2007-2010 çулсенче – аслă преподаватель.

Раççей ӳнерçисен пĕрлĕхĕн пайташĕ (2002) хальхи вăхăтра художник-скульптор тивĕçне пурнăçлать. Тĕп ĕçĕсем: «Ангел», «Кăмăл», «Три грации», «Вова маçтăр» (йывăçран), «Машенька», «Ревель Федоров портречĕ» (бронзăран), «Учитель» (чулран), «Студентка» (гипсран).

Владислав Дмитриевич мастерскойĕнче йăшса лармасть, республика тулашĕнчи куравсене те тăтăшах хутшăнать: Мускав, Чулхула, Саранск, Йошкар-Ола, Пермь, Хусан...

Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ художникĕн монументлă ĕçĕсем çаксем: Чăваш наци, Чăваш патшалăх ӳнер музейĕсене капăрлатни, Шалти ĕçсен министерствин служба тивĕçĕсене пурнăçласа пуçĕсене хунă ĕçченĕсене асăнса тунă палăк тата ыт.те. Унсăр пуçне И. Голубевпа тата М. Голубевăпа ăсталанă пĕрлехи ĕçсем вуннă ытла: А.Г. Николаев, Иоанн Креститель, А.П. Айдак, Г.Н. Волков палăкĕсем тата ыт.те.

**По материалам сайта Чувашского государственного художественного музея (25.01.2015):**

*– В Чувашском государственном художественном музее 25 января открылась выставка скульптора, члена Союза художников России Владислава Немцева. Как отметил близкий друг и однокурсник художника, директор Художественного музея Геннадий Козлов, в произведениях скульптора – его природная скромность. Владислав Немцев – настоящий, искренний человек и художник, который вкладывает душу в любое, даже небольшое произведение, у него нет случайных работ, каждое его творение – результат долгого и упорного труда.*

*Творческое начало в начинающем скульпторе в свое время отметил председатель Союза художников Чувашии, народный художник России и Чувашии Ревель Федоров. Скульпьтурные работы Немцева (Сехмет) у входа в Художественный музей придали зданию притягательность, неповторимость.*

*Доктор искусствоведения, заслуженный деятель искусств России Алексей Трофимов в нескольких словах охарактеризовал развитие современной скульптуры. Существуют различные формы и течения, Владислав Дмитриевич также не останавливается на каком-либо одном. Но самое важное в его творчестве – искать и проводить связь времен...*

# *Ялан — шыравра*



## Николаев Владислав Дмитриевич (1974)

«Пĕрремĕш заметка ман «Пионер сасси» (халĕ – «Тантăш») хаçатра 1986 çулхине пичетленсе тухрĕ. Кӳршĕ ялсемпе баскетболла выляни пирки çырнăччĕ унта. Тем пысăкăш çыруран вунă предложенирен ытла мар хыпар хăварни те çунатлантарса янăччĕ. Чăннипех калатăп, çакă хавхалантарчĕ, ман пуласлăхăн пуçламăшĕ пулса тăчĕ. Ун чухне, паллах, шутлама та пултарайман шăп та лăп 25 çултан çак хаçатăн тĕп редакторĕ пулса тăрасса», – аса илнĕччĕ пĕр тĕлпулура Елчĕк районĕнчи Шăмалакра çуралса ӳснĕ Владислав Николаев.

Ӳстерсе каламасть Владислав, унăн малашлăх çул-йĕрĕ чăннипех те «Пионер сасси» хаçат пулăшнипе аталанса пынă: çак кăларăмăн хастар юнкорĕ пулнă май лауреат ятне (1990) тивĕçнĕ, чăваш чĕлхипе тата литературипе республикăри олимпиадăра 1-мĕш вырăн йышăннă та çăмăллатнă йĕркепе И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн чăваш филологийĕпе культура факультетне (1991) вĕренме кĕнĕ. Ăна пĕтерсен тӳрех «Хыпар» хаçатра ĕçлеме пуçланă. «Çамрăксен хаçатĕнче» тар тăкнă тапхăрта Чăваш Республикин Çамрăксен патшалăх премине (1998) тивĕçнĕ.

Çав вăхăтрах В. Николаев питĕ хăюллă утăм тунă: хăй тĕллĕн спорт хаçачĕ кăларма пикеннĕ. Анчах та «Го-о-ол!» хаçатăн çичĕ номерĕ çеç кун çути курайнă. Çапах та ку опыт кайран питĕ пулăшнă: 2000 çулта ăна Чĕмпĕрте пурăнакан чăваш усламçи шыраса тупнă, вара вĕсем пĕрле икĕ çул ытла «Спортивная Чувашия» хаçат кăларса тăнă.

Ентешĕмĕрĕн хастарлăхĕ тĕлĕнтерет. Пĕр вырăнта тăмасть вăл, яланах çĕнни шырать, тем те пĕр шутласа кăларать, пурнăçа кĕртет. «Тантăшран» кайнă хыççăнах чăваш ачисем валли «Асамат&Шевле» журнал кăларма пуçлать.

– Ачасене мĕн пĕчĕкрен тăван чĕлхене хăнăхтармалла, çавăнпа та «Панулми» журнал кăларма тĕллев лартрăм. Вăл ача пахчинче ĕçлеме питĕ меллĕ, хитре, тĕрлĕ тĕслĕ, унта сăрламалли-каскаламалли ĕçсем нумай, – каласа парать Владислав.

Тĕрлĕ çулсенче çавăн пекех «Молодежный курьер», «Хресчен сасси» хаçатсенче те ĕçленĕ вăл. 2002-2003 çулсенче Чăваш Республикин Физкультура, спорт тата туризм министерствин пресс-секретарĕ, 2003-2011 çулсенче Раççей Перекет банкĕн Чăваш уйрăмĕн маркетинг ĕçтешĕ пулнă. «Салам» обществăпа политика хаçачĕн учредителĕ, издателĕ тата тĕп редакторĕ пулса чăвашла вулакансене ирĕклĕ пичет юхăмне чăмтарнă.

Раççей Журналисчĕсен (1999), ЧР Профессионал çыравçăсен (2015) пĕрлĕхĕсен пайташĕ. Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ Чăваш патшалăх çамрăксен театрĕнче унăн «Ванюк ĕçе хăнăхать» пьесипе спектакль лартнă. Ку коллектив валли çавăн пекех У. Шекспирăн «Лир патша» трагикомедине чăвашла куçарнă. Чăваш драма театрĕнче вара унăн пьесисемпе лартнă «Пихампар чунĕ манра» мюзикл тата «Чуххăм Ванькка авланать – кай-кай-кай» камит тăтăшах аншлагпа иртеççĕ. Асăннă театрта А. Пушкин хайлавĕсемпе лартнă «Дон Жуан – юрату шанчăкне çухатнăскер» спектаклĕн прологне те вăлах çырнă. 2019 çул пуçламăшĕнче Шупашкарти тепĕр чăваш театрĕнче те – Чăваш патшалăх пукане театрĕнче – Владислав Николаевăн «Токолоро» пьесипе спектакль кăларнă.

Çапла, чи малтанах драматургире палăрма пуçларĕ çамрăк çыравçă. Пьесисем пуçласа «Тăван Атăл» журналта пичетленнĕ, Чăваш кĕнеке издательстви унăн уйрăм виçĕ кĕнекине кăларнă: «Пиневерĕн çĕнĕ тусĕсем» (2010), «Хула хĕрачи» (2016), «Дипломлă Тиха» (2017).

Юлашки – юптарусен кĕнеки, ун алçырăвĕ ачасемпе çамрăксем валли чăвашла çырнă произведенисен 2016 çулхи конкурсĕнче çĕнтернĕ. Çавăнпа та «Чăваш литературин антологийĕ. Ача-пăча валли çырнă хайлавсем» пысăк та сумлă кĕнекере ентешĕмĕрĕн ячĕ те пурринчен тĕлĕнмелли çук. Пĕтĕмĕшле паянхи куна пултаруллă журналистăн, çыравçăн 5 кĕнеки кун çути курнă, çитес вăхăтрах тата иккĕшĕ пичетрен тухмалла: «Шăмалак – хитре вырăн» (тăван ял çинчен çырнă таврапĕлӳ кĕнеки) тата «Çамрăк çыравçăсене пулăш пултăр» (сăвă-калав, юмах-юптару, пьеса-инсценировка çырма туртăм пур ачасемпе çамрăксене çырма вĕренмелли, хăнăхмалли меслетлĕх кĕнеки).

Юлашки вăхăтра çыравçăн ытти жанрпа çырнă хайлавĕсем те çине-çинех курăнаççĕ пичетре: калавĕсем, повеçĕсем, юптарăвĕсем, сăввисем...

– Мана тĕрлĕ жанрпа ĕçлеме кăсăк, – тет çыравçă. – Кунта хама тĕрĕслесе пăхас тени те, калас сăмахăма уçăмлăрах калас тени те пур. Акă, «Çеçпĕл» балет либретти çыртăм, çулăмлă поэтăмăрăн кунçулне, юратăвне, туслăхне, хуйхине ташă урлă кăтартса партарас килет. Е тата акă тепĕр мюзикл валли либретто çырма пуçларăм, анчах унран питĕ лайăх опера пулассăн туйăнать – малалла композиторпа тачă çыхăнса ĕçлĕпĕр. Палартса хунисем питĕ нумай: романсем те, пьеса-драмăсем те, тĕрленчĕк-калавсем те... Паян тесен паян 5 кĕнеке пичетлесе кăлармалăх алçырусем выртаççĕ сунтăхра – хăйсен вăхăтне кĕтеççĕ, – тет пултаруллă ентешĕмĕр.

## *Тĕрлĕ енлĕ талант*



### Никонорова Вера Федоровна (1962)

Çут тĕнче канлĕ ыйхăран вăраннă илемлĕ тапхăрта, ака уйăхĕнче, Елчĕк районĕнчи Тăрмăш ялĕнчи Федор Федотовичпа Антонина Васильевна Деникаевсен кил-йышĕнче пиллĕкмĕш пепке – Вера – çуралнă.

Халĕ вăл – Вера Никонорова, Çĕнĕ Шупашкарти 16-мĕш шкулта чăваш чĕлхи вĕрентет. Çав вăхăтрах ăста юрăçă та, çыравçă та, тĕпчевçĕ те, тамада та. Чăваш Республикин музыка обществин (1995), Чăваш наци культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ (2013), Пĕтĕм тĕнчери чăвашсен «Кĕмĕл сасă» фестивалĕн дипломанчĕ (1999), Чăваш çыравçисен пĕрлешĕвĕн членĕ (2013).

Юрă-кĕвĕ асамлăхне Тăрмăшри шкул директорĕнче ĕçленĕ В. Щербаковпа çыхăнтарать вăл.

– Владимир Григорьевич сĕрме купăс ăста калатчĕ, – аса илет Вера. – Ун тавра ача-пăча хĕвĕшетчĕ. Пире те çак кăткăс музыка хатĕрĕпе выляма, кашни хĕлĕхĕ кăларакан çемĕ асамлăхне туйма, ăнланма вĕрентетчĕ. Баян каласси Юра Смирнов тантăшăмран куçрĕ.

Пултаруллă, пĕр шухăшлă çамрăксем часах ялта «Хавал» вокалпа инструмент ансамблĕ йĕркелеççĕ. Вĕсемпе пĕрле Валерий Сергеев, Александр Лукиянов тата Верăн шăллĕ Сергей тĕрлĕ ялти халăха концертсенче хаваслă кăмăл-туйăм парнеленĕ. Паллах, коллективăн тĕп шăнăрĕ шăпчăк сассиллĕ Вера Деникаева пулнă.

Каярахпа вăл Çĕнĕ Шупашкарти «Химик» культура керменĕнче Н. Эриванов ертсе пыракан «Сăрнай» ушкăнра юрланă, хăй тĕллĕн те концертсем йĕркеленĕ. Унăн пултарулăхĕпе кӳршĕллĕ регионсенче çеç мар, Мускав, Алтай, Дагестан тăрăхĕсенче те паллашма ĕлкĕрнĕ.

В. Никонорова – виçĕ аудиоальбом, «По следам предков» кĕнеке авторĕ. «Современная школа», «Халăх шкулĕ» журналсенче тата хăш-пĕр хаçатсенче тĕпчев ĕçĕсем пичетленĕ.

Юрă-кĕвĕ уйĕнче ытларах Евгений Федоров, Петр Краснов, Илья

Степанов, Николай Иванов композиторсен хайлавĕсене кăмăллать, кĕвĕлĕх сăвăсем хăй те çырать.

– Çынсене савăнăçпа хавхалану кӳме, кăмăл-туйăмне хăпартма, чун-чĕре хăватне хушма сцена çине тухатăп эпĕ, – тет юрăçă.

Сцена çине тухсан вăл чăн-чăн асамçăна çаврăнать: хитре сасси, илĕртӳллĕ хусканăвĕ, пит-куç вылявĕ килĕшӳлĕхпе пĕтĕçсе куракан чунне тыткăнлать.

**Владимир Федоров, «Юрламан юррăн илемĕ çук» («Самант», 2011, 1№):**

*... – Хĕвел çинче пиçекен хевтеллĕ пулать теççĕ. Эсир те, Вера Федоровна, мĕн ачаран ĕçпе пиçĕхсе çитĕннĕ. Ял çыннин кĕрĕк арки йăваласа ларма вăхăт çук. Хăвăр пултарулăха шыв юххине çул уçса панă евĕр аталантарма, пĕрремĕш утăм тума та мĕнле май тупнă-ха?*

– Ялти «Хавал» ансамбль солисткиччĕ эпĕ. Чăваш, вырăс юррисене шăрантараттăмăрччĕ. Ун чухне София Ротарун «Луна, луна», «Аист на крыше» юррисене кăмăллатчĕç. Эпĕ вĕсемпе сцена çине тухсан куракансем нумайччен алă çупатчĕç. Тăри юррине тăрсах итлеççĕ тенешкел, ларма-тăма та вырăн çукчĕ. Зал тулличчĕ.

Шкул хыççăн Канашри педагогика училищинче вĕрентĕм. Унтан Саратов облаçĕнче пионервожатăйра тăрăшрăм. Пĕлĕве ӳстерес тĕллевпе Шупашкарти педагогика институтне кĕтĕм. Кунта та алă усса ларман, юрланă, халăха савăнтарнă.

*– Пысăк сцена çине тухасси мĕнрен пуçланчĕ вара?*

– Юрий Смирнов «Сывă пул» юрă çырчĕ. Питĕ хумханса, яваплăха туйса унпа Çĕнĕ Шупашкарти культура керменĕнче иртнĕ концертра сцена çине тухрăм. Мĕнех, халăха килĕшрĕ вăл. «Çăлкуçăм», «Ах, чĕрем», «Шăнкăрав куракĕ» тата ыттисене те итлекенсем хаваспах йышăнчĕç. Сăввине те, кĕввине те хам çырнă «Амазонка» юрра та палăртса хăварас килет...

## Ӳсĕм çулĕпе



### Осипова Надежда Андреевна (1973)

Вăл – Раççей Журналисчĕсен пĕрлĕхĕн (2014), республикăри журналистсен Çемен Элкер (2011), Н. Никольский (2014) ячĕллĕ премисен лауреачĕ. Пĕтĕм Раççейри журналистсен «Наркотиксăр» (2002), Чăваш Енри сывă пурнăç йĕркине пропагандăлас тĕлĕшпе чи лайăх хайлав конкурсĕсен (2001, 2002) çĕнтерӳçи. Ăна Раççей Журналисчĕсен пĕрлĕхĕн «За заслуги перед профессиональным сообществом» Хисеп паллипе (2014) чысланă...

Сăмахлăхра ӳсĕм çулне çирĕппĕн туптаканĕ – Надежда Осипова. Вăл Елчĕк районĕнчи Курнавăш ялĕнче çуралнă. И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн чăваш филологийĕпе культура факультетне пĕтернĕ.

Надежда Андреевна 1995 çултанпа хăйĕн калем çивĕчлĕхне мăкатмасăр «Чăваш Ен», «Советская Чувашия», «Молодежный курьер» хаçатсенче тĕрлĕ должноçра ĕçленĕ, пулас журналистсен клубне, пултарулăх студине ертсе пынă. 2006-2010 çулсенче Шупашкарти «Трактор завочĕсем» концернра пресс-секретарь пулнă май, машиностроени тематикипе Раççейри тата ют çĕршывсенчи ятарлă кăларăмсенче пичетленнĕ.

Н.Осипова – Чăваш Республикин журналистсен пĕрлешĕвĕн правленийĕн членĕ. «Если в руки просится перо...» (2004), «А сердце помнить велит» (2005), «Мастера театрального искусства» (2012) кĕнекесен хатĕрлевçи-авторĕсенчен пĕри. «Чувашская Республика.

Приглашение к сотрудничеству» (7 кăларăм) презентациллĕ издание хатĕрлеме хастар хутшăннă.

Пултаруллă сăмах ăсти 2015 çултанпа Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕн ректорĕн общественноçпа тата массăллă информаци хатĕрĕсемпе ĕçлекен пулăшуçинче тăрăшать.

**Сергей Павлов, «Отзыв на публикации Осиповой Надежды Андреевны в рубрике «Автограф» журнала «Тăван Атăл» (2012):**

*... В интервью Надежды Осиповой писатель Ева Лисина, скульптор Петр Пупин, композитор Николай Казаков, бронзовый призер Олимпиады в Лондоне Татьяна Архипова, поэт Порфирий Афанасьев и другие известные, уважаемые люди предстают в новом качестве. Не как монументальные фигуры, олицетворяющие современные тенденции в национальном искусстве, науке, достижения в спорте, а как живые люди, интересные собеседники. Н.Осипова сумела вызвать их на откровенный разговор, открыть богатый внутренний мир этих людей читателям журнала. Опубликованные под рубрикой «Автограф» материалы ценны не только своим содержанием, но и интересной формой подачи (монологи с подзаголовками).*

**Владимир Зырянов, ведущий редактор энциклопедии чувашской журналистики и печати (2015):**

*... Работа над энциклопедией помогла всесторонне раскрыть профессиональные качества Надежды Осиповой как журналиста и редактора. Многолетний опыт ее деятельности в СМИ, хорошее знание журналистских кадров республики, отличное владение русским и чувашским языками, приемами редактирования и литературной правки текстов, передовыми компьютерными технологиями позволили выполнить работу в сжатые сроки и с хорошим качеством.*



## *Илемлĕх тĕнчинче*

## Парферьева Римма Витальевна (1965)

Римма Парферьева Елчĕкри ачасен искусство шкулĕнчи ӳнерпе графика уйрăмĕнче 1991 çултанпа ĕçлет. Çутçанталăк панă таланта малалла аталантарма, унăн илемне туйма вĕрентет тата ачан ĕмĕт-тĕллевне пурнăçлама пулăшать. Тĕрлĕ тĕспе хутăштарса сăрлама, пултарайман япалана пулнă пек кăтартма хăнăхтарать. Тĕрĕпе, йывăçпа, ӳкерчĕкпе çыхăннă-и – ача хăйĕн ăсталăхне ирĕклĕн те уççăн палăртма пултартăр. Улми йывăççинчен аякка ӳкменни савăнтарать: Римма Витальевна пĕлӳ панă 20 ытла ача хăйсен малаллахи вĕренĕвне ӳнер ĕçĕнче курнă. Вĕсенчен искусство преподавателĕ, декоратор тата дизайнер пулса ĕçлекенсем те пур.

Вĕрентекенĕн тимлĕхĕпе çамрăк сăрă ăстисем тĕрлĕ шайри конкурссенче те çухалса каймаççĕ. Герман Мурзакаевăн, Екатерина Ертмакован, Ангелина Александрован ĕçĕсем вара Тĕнчери конкурссенче те лайăххисен шутне кĕме пултарнă.

Римма Витальевна хăйĕн професси ăсталăхне ӳстерессишĕн те тимлет, пĕр вырăнта йӳнесе лармасть. Тăван кил, савнă ял, çывăх та хаклă тавралăх – унăн юратнă темисем. Портретсем те ăсталать. Графика та ют мар уншăн. Юлашки виçĕ çулта Раççей шайĕнчи конкурссенче тăватă хутчен призлă вырăн йышăннă вăл. 2016 çулта вокалпа хореографи тата театрпа илемлĕх пултарулăхĕн фестивалĕнче «Чи лайăх преподаватель» ята тивĕçнĕ.

Костромари художество училищине, И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институчĕн ӳнерпе графика факультетне пĕтернĕ Р. Парферьева:

– Талантлă ачасем нумай, вĕсен пултарулăхне тата ытларах ӳстер-

ме пулăшас килет, – тет.

«Çӳрекен курать, шыракан тупать» – тенĕ евĕр вĕрентекен ялан шыравра, тĕпчевре. Çамрăк чухнех тăван халăхăн тĕрĕ-эреш сăнлăхне пĕрчĕн-пĕрчĕн пухнă, асатте-асаннесенчен ыррине нумай вĕреннĕ, вĕренет те.

**Валентина Кириллова, «Çамрăк ӳнерçĕ» («Елчĕк ен», 24.11.2018):** *«Елчĕкри искусство шкулĕнчи ӳкерес ăсталăха вĕренекенсем çулсеренех тĕрлĕ конкурссене, фестивальсене хутшăнаççĕ.*

*Хăй те ылтăн алăллă пулнăран Римма Парферьева преподаватель ачасене ӳнер тĕнчине илсе кĕме пĕлетех çав. Унăн вĕренекенĕн Елизавета Мурзакаеван «Каçхине улах ларма пухăнни» картинине сăнав искусствин категорийĕнче Пĕтĕм Раççейри çамрăк художниксен «Уникум» фестивалĕн финалне суйласа илнĕ. Ноябрĕн 14-17-мĕшĕсенче пултаруллă хĕр ачапа педагог Санкт-Петербургри выставкăна çитсе килнĕ. Елчĕксем унта çĕршыври паллă ӳнерçĕсен мастер-класĕнче ăсталăхне те туптанă. Елизавета финалист дипломне, хаклă парнесене, Римма Витальевна Тав хутне тивĕçнĕ...»*

## *Опера юрăçи*



## Петров Алексей Владимирович (1988)

Алексей Петров шкул çулĕсенчех, Патреккелти халăх хорĕнче ăсталăхне туптанăскер, тарăн шухăшлă, пĕлтерĕшлĕ юрăсем шăрантаратчĕ. Баянпа гитара калатчĕ. Елчĕкри вăтам шкула пĕтерсен Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕн экономика факультетĕнче пĕлӳ пухнă. Çапах та юрă-кĕвĕ асамлăхĕ ăна каялла хăй патнех туртса илнĕ. И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн искусство факультетне пĕтерсен пĕр çул Чăваш патшалăх капеллин солистĕнче ĕçлет. 2015 çултанпа – Коми Республикин Патшалăх оперăпа балет театрĕн труппинче.

А. Петров – Пĕтĕм халăхсен хушшинчи вырăс регионĕсен «Шурă акаци» (Йошкар-Ола), «Наци пуянлăхĕ» (Хусан), С. Ермилин ячĕллĕ театр конкурсĕсен лауреачĕ. Виççĕмĕшне вăл Дж. Пуччинин «Тоска» оперăри Скарпия партине ăста юрланăшăн тивĕçнĕ.

Алексей Владимирович репертуарĕнче тĕп рольсем сахал мар. Çамрăк пулсан та пултарулăхне кура вăл паян Эскамильо («Кармен», Ж. Бизе), Монтероне («Риголетто», Дж.Верди), граф Орловский («Летучая мышь», И.Штраус) тата ытти сăнарсене илĕртӳллĕ те ĕненмелле калăплать.

**Александр Сорокин, «Лайăх юрă – чун уявĕ» («Елчĕк ен», 14.01.2017):**

*– Кăрлачăн 10-мĕшĕнче Елчĕкри культура çуртĕнче Коми Республикинчен килнĕ Алексей Петровпа Галина Маликова артистсен концерчĕ пулчĕ.*

*Вĕсем пĕр сехет çурă ытла иккĕшĕ анчах совет саманинче тухнă кинофильмсенчи юрăсене шăрантарчĕç. «Истребители», «Неуловимые мстители», «Кавказская пленница» тата ытти паллă кинофильмсем халăх хушшинче пысăк юрату çĕнсе илнинче вĕсенче янăракан юрăсен тӳпи те пысăк. Ытахальтен мар çав юрăсене шăрантарма артистсене сцена çине икшер хут чĕнсе кăларчĕç. Куракансем йышлăран çак кун культура çурчĕ пурне те вырăнсемпе тивĕçтерейменĕ. Нумай çын концерта ура çинче тăрса курчĕ.*

*Темиçе çул каялла район тулашĕнчен килнĕ артистсем çакнашкал концерт кăтартнине астăватăп. Шел, фонограммăпа янăранă юрăсем ун чухне халăха тивĕçтермерĕç. Хальхинче çамрăксем чĕрĕ сасăпа юрлани пурне те килĕшрĕ...*



# *Чуна çывăх асаилӳсем*

## Петров Владимир Васильевич (1951- 2015)

Пиччĕшĕ çинчен шăллĕ – Валерий – каласа панинчен:

– Канăççăр чĕреллĕ педагог, усă кăмăллă ӳнерçĕ тата сăвăç Петров Владимир Васильевич – манăн тете. Вăл Елчĕк районĕнчи Лаш Таяпа ялĕнче ултă ачаллă çемьере çуралнă. Чухăн пурăннипе тете хăйĕн пĕрремĕш ӳкерчĕкĕсене килти кăмака хăрăмĕпе сăнарланă. Атте çамрăклах чирлесе вилнĕ хыççăн Вова тете 3-мĕш класран Куславкка-ри шкул-интернатра вĕренме пуçланă. Шăпах кунта пĕрремĕш сăвви çуралать, шкулти стена хаçатне илемлетме хутшăнать. И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институчĕн ӳнерпе графика факультетĕнче вĕреннĕ чухне диплом ĕçне Берлина çитнĕ Василий Михеев ентеш-партизан скульптурине йывăçран тата гипсран туса хӳтĕленĕ.

1976-1985 çулсенче Лаш Таяпари вăтам шкулта ӳкерӳ, черчени, ĕç предмечĕсене вĕрентнĕ, вуншар ачана ӳкерме, тăмран тĕрлĕ кĕлеткесем тума хăнăхтарнă. «Слава» колхоз фермисемпе машина-трактор паркĕсенчи кану пӳлĕмĕсене капăрлатнă. Çак тапхăрта хăйĕн картинисемпе скульптурисен тăвату куравне йĕркеленĕ.

1985 çулта тете çемйипе Пушкăрт Республикинчи Пелепей хулине куçса кайрĕ. Виçĕ çул унти педагогика училищинче преподаватель, пенсие тухиччен шкул ачисен пултарулăх çурчĕн ӳнер студийĕн ертӳçинче тăрăшрĕ.

Пултарулăх ĕçĕнчи çитĕнӳсемшĕн Владимир Петрова Пĕтĕм Союзри халăх пултарулăхĕн 3-мĕш фестивалĕн лауреачĕн ятне панă. «Автопортрет», «Асанне портречĕ», «Хула хĕрри», «Ватлăх», «Анне портречĕ» ĕçĕсемшĕн Александр Шевченко ячĕллĕ премие тивĕçнĕ.

Тете хăйĕн шалти туйăмĕсене, чунра пиçсе çитнине ӳкерчĕксем урлă çеç кăтартмастчĕ, сăвăсем çыратчĕ. Хайлавĕсем «Урал сасси» хаçатра пичетленнĕ. 2009 çулта вăл регионсем хушшинче иртекен «Хавхалану çăлкуçĕсем» поэзи фестивалĕнче дипломант пулса тăнă. 2011 çулта «Ĕмĕтсем чĕнеççĕ малалла» кĕнеки вулакан патне çитрĕ.

2015 çулхи март уйăхĕнче йывăр чире пула пирĕн çывăх çыннăн чĕри тапма чарăнчĕ. «Çынсен асĕнче эпĕ хамăн ӳкерчĕксемпе тата сăвăсемпе юлăп. Пултарулăх ĕçĕ вăл – вилĕмсĕр», – пулчĕç унăн юлашки сăмахĕсем. Халĕ унăн ӳкерчĕкĕсем, скульптурисем ялти шкулăн тăван тавралăх музейĕнче вырнаçнă, яланах вĕсене ялти, районти куравсенче курма пулать. Пурĕ пĕрле – 150 яхăн картина, 30 ытла скульптура Лаш Таяпара, Пелепей хулинче упранаççĕ.

Çак сăввăма тетене халаллатăп:

Твои слова во мне живут,
Шумят они листвой осенней,
Есть зеленеть – кому весенний,
Когда опавшие умрут,
Твои слова во мне живут…
Ты будешь счастия достоин,
И буду сердцем я спокоен,
За те года, за то, что мы
Друзья осталися верны,
И буду сердцем я спокоен,
Ты будешь счастия достоин.
Я верю в будущность твою,
Года не вычеркнут желаний,
Твой пылкий дух без колебаний
Вольется в свет в родном краю.
Я верю в будущность твою…

## *«Çырма ан пăрах...»*



### Петров Валерий Васильевич (1960)

Елчĕк районĕнчи Лаш Таяпара çуралса ӳснĕ Валерий Петров (псевдонимĕ – Ураскилт, Телей), хăй каланă тăрăх, сăвă-калав тетĕшсенчен çырма вĕреннĕ. Пĕрремĕш сăвви «Пурнăç таппи» ятпа 1970 çулта «Колхоз ялавĕ» (халĕ – «Елчĕк ен») хаçатра кун çути курнă. Ялти шкула пĕр çулхине чăвашсен паллă çыравçи В.И. Краснов-Асли тĕлпулăва килсен ача именсе тăман – хăйĕн сăввисемпе паллаштарнă. Лешĕ: «Маттур! Çырма ан пăрах...», – тесе хавхалантарнă. Унсăр пуçне Василий Эктел поэт та райхаçатра «Çăмăл çунатлă пулăр» (1973) статьяра Валера пирки «пултаруллă», «малĕмĕтлĕ» тесе палăртнă.

Поэзи çулĕ çине тăнине вăл чăваш чĕлхипе литературине вĕрентнĕ учительсемпе – Агафия Васильевна Васильевăпа тата Зоя Алексеевна Князевăпа – çыхăнтарать. Вĕсем пулăшнипех сăвă техникин вăрттăнлăхĕсене ăса хывнă, сăвă пуххисен альбомне хатĕрлесе кăларнă. Халĕ тăван тавралăх музейĕнче упранать вăл.

Малалла, калем çивĕчленсе пынă май, В. Петров район изданийĕпе кăна çырлахман – çӳлелле тамаланнă. «Пионер сасси» (халĕ – «Тантăш»), «Хатĕр пул» (халĕ – «Самант»), «Капкăн», «Молодой коммунист», «Пионерская правда», «Вожатый» хаçат-журнал унăн çывăх тусĕсем пулса тăнă. Çак таранччен 300 яхăн сăвă, 50 ытла калав çырнă.

– Мана ытларах лирикăллă сăвăсем килĕшеççĕ, – шухăшне уçать Валерий Васильевич. – Эпĕ ялан вĕсен вĕçĕсене нумай пăнчă лартатăп. Вулакана хăйĕн шухăшне малалла тăсма май паратăп.

В. Петров Лаш Таяпари вăтам шкулăн 7 класне Мухтав хучĕпе вĕçленĕ, Куславккари шкул-интернатра алла лайăх паллăсемлĕ аттестат илнĕ. И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн историпе филологи факультетне пĕтернĕ çамрăк малтанах ялти шкулта пионервожатăйра ĕçлет, ун хыççăн – истори учителĕнче. Вун иккĕмĕш çул шкулти тăван тавралăх музейĕн заведующийĕ пулнă май, шырав-тĕпчев ĕçне йĕркелет, пуян материалсемпе тивĕçтерет. Ăна Чăваш Республикин Вĕренӳпе çамрăксен политикин тата Культура министерствисен Хисеп хучĕсемпе чысланă.

## *Преподаватель – фольклорист*



### Петухова Людмила Валерьевна (1971)

Мария Бикулова актриса, Иван Дмитриев-Эльмек, Юрийпе Олег Ксенофонтов ӳнерçĕсем, Петрпа Василий Сидоров çыравçăсем, Владимир Андреев олимпиец – Лаш Таяпа ялĕн мухтавĕ. Чаплă ушкăн йышне малалла та тăсма пулать. Çапах та пултарулăх картине юлашки çулсенче хăюллăнах вирхĕнсе кĕнĕ Людмила Петуховăпа уйрăммăн паллаштарни вырăнлă.

Вăл унта-кунта «йăкăртатса» çӳремен. Саратоври Л.В. Собинов ячĕллĕ патшалăх консерваторине пĕтерсенех Шупашкарти музыка училищине вырнаçнă. 20 çул ытла ĕнтĕ унта. Аслă категориллĕ преподаватель. «Сольное и хоровое народное пение» уйрăм ертӳçи.

Вĕрентӳ ĕçĕсĕр пусне Людмила Валерьевна хушма пĕлӳ парас тĕллĕшпе те тимлет. Студентсен «Янтал» ансамбльне ертсе пынă май, вăл чăваш халăхĕн культурине пур енлĕн кăтартма, аталантарма тăрăшать. Чуна парса ĕçленин çимĕçĕ те пурах: асăннă ушкăн 12 хутчен Пĕтĕм халăхсем хушшинчи, 15 хутчен Пĕтĕм Раççейри конкурс-фестивальсенче лауреат ятне тивĕçнĕ. Уйрăм вĕренекенĕсем – А. Иванов,

Т. Сидоркина, А. Сергеев, Н. Дмитриева, Р. Серенеева, А. Кузнецов – хăйсен пултарулăх ертÿçине çĕнтерÿпе нумай хутчен савăнтарнă. 2016-2017 çулсенче София Иванова кăна Пĕтĕм Раççей, Пĕтĕм халăхсем хушшинчи, регион шайĕнчи конкурссенче 1-мĕш степеньлĕ дипломсене çĕнсе илнĕ.

Людмила Валерьевна Раççей шайĕнчи халăх юррисене юрлакансен «Сентти», «Быть добру!» конкурс-фестивальсене йĕркелеме хутшăннă. Вĕсенче те унăн ултă вĕренекенĕ çĕнтерÿçĕсемпе призерсен йышне кĕме пултарнă.

Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ (2008) вĕренÿпе культура учрежденийĕсенче меслетлĕх ĕçне анлă пурнăçлать: усă уроксем, мастер-классем ирттерет, тĕрлĕ конкурссен хаклав ĕçне хутшăнать. 2017 çулхи пуш уйăхĕнче Раççей шайĕнчи ăслăлăхпа практика конференцийĕнче «ЮРĂ как основной вид музыкального творчества чувашей» темăпа тухса калаçнă. А. Майоровпа пĕрле вунна яхăн наука ĕçĕ пичетленĕ. 2018 çулта «Сурхури, Кĕркури!» ятпа Чăваш Республикин Пуçлăхĕн гранчĕпе чăвашсен календарь юррисен хрестоматине кăларнă. 535 страницăллă паха изданин проект ертÿçисенчен тата хатĕрлекенсенчен пĕри – Людмила Петухова.



## «Шурă Кашкăртан» пуçланнă

### Петухов Юрий Валерьевич (1975)

Елчĕк ялĕн уявĕнче пуçласа курнăччĕ ăна. «Сцена çинче – Юрий Кашкăр» тесе пĕлтерчĕç те, вăтам пÿ-силлĕ, чĕптĕм сухаллă çамрăк тухса тăчĕ. Хăй сырнă юрăпа паллаштарчĕ вăл. Кĕвви илемлĕ, сăмахĕсем шухăшлă, тыткаларăшĕ виçеллĕ. «Кăмăлĕ те лайăх пулма кирлĕ ку çамрăкăн», – çапла пĕтĕмлетÿ тунăччĕ вăл тата икĕ юрă шăрантарнă хыççăн. Çулсем иртнĕ май каярахпа пĕрле концерт та йĕркелеме пÿрчĕ. Куçа-куçăн тĕлпулса калаçмасăрах, телефонпа çыхăнни те çителĕклĕ пулчĕ – Яманчÿрелте юрă касĕ ирттертĕмĕр. Музыка аппаратурипе те хăех тивĕçтерчĕ...

Юрий Петухов Лаш Таяпари культура çурчĕн культорганизаторĕнче ĕçлет. Хăйне майлă çĕнĕваркăш илсе килнĕ вăл тăван кĕтесе. Ялта чылай çул «Тайпи» фольклор ушкăнĕ хăйĕн пултарулăхĕпе савăнтарать, халĕ тата Юрий Кашкăр концертпа килентерме, çамрăк талантсене хăй тавра пухма пултарчĕ.

Юрă-кĕвĕ тинĕсĕнче «ишме» пуçласси унăн тÿрех пуçланман-ха. Ялти шкулта 11 класс пĕтерсен Юрий Кÿкеçри профтехучилищĕре вĕренет, строитель тата водитель профессийĕсене алла илет. Унтан каччă салтак атти тăхăннă. Тверь облаçĕнчи ракета çарне лекнĕ вăл. Тивĕçе чыслăн пурнăçласан тăван яла таврăннă, ГАЗ-53 автомашинăпа ĕçленĕ. Унтан – тĕрлĕ çĕрте, тĕрлĕ ĕçре.

Тăтăшах куçса çÿресси те çăмăл мар. Вăл пурнăçа мĕн ачаран юратнă ĕçĕпе çыхăнтарма шухăш тытнă. Пĕчĕккĕ чухне кĕтÿ кĕтнĕ вăхăтра Виталий пиччĕшĕ пек юрлама юратнă вăл. Гитара каланă, сахалтан та виçĕ аккорд лайăх пĕлнĕ. Сăвăсем чĕрмеленĕ.

Унăн пĕрремĕш юррисене ытларах Александр Ильин юрланă.

– 2005 çулта вара юрă-кĕвĕ тĕнчине пуçĕпех кĕрсе ÿкрĕм, – тет Юрий Валерьевич. – Пĕрремĕш утăмсем хавхалантарчĕç пулмалла. Халĕ эстрадăра эпĕ çĕнĕ ят мар пулĕ тетĕп.

Стройкăран пăрахсан «Апельсин каччисем» ушкăнпа туслашнă. Вĕсем унăн юррисене халăх умне кăларнă. Вăхăт шунă май хăй те сцена çине тухнă. Гастроль хыççăн гастроль... Кирек ăçта та çамрăк юрăç-композитора ăшшăн йышăннă. Малтанхи куракансем ăна «Шурă Кашкăр» юрăпа астуса юлнă. Урампа иртсе пынă чухне те: «Авă, кашкăрсем çин-

чен юрлаканни пырать», – тенине пĕрре мар илтнĕ вăл. Çакă каярахпа Юрий Петухова Кашкăр ят илме хистенĕ те. Халĕ ăна çак хушма ятпа республика тулашĕнче те лайăх пĕлеççĕ. Вăл пĕрре мар ыркăмăллăх концерчĕсем йĕркеленĕ. Ялта ĕçлеме пуçланăранпа чылай ялсенчи концертсене пуянлатнă.

Сăвăç-композиторăн чи малтанхи юррисенчен пĕри – «Кайăк пулса вĕçсе каяс çук». Унтанпа 300 ытла юрă çырса кĕвĕленĕ вăл. Чылайăшне хăй юрлать. Çавăн пекех чăваш эстрадин паллă артисчĕсем те юратса шăрантараççĕ: С. Павлов, Л. Семенова, С. Яковлева, К. Евруков, Алексейпе Андрей Шадриковсем, П. Ермолаев тата ыттисем юрлакан «Сар кайăкпа çăхан», «Шăматкун каçхине», «Пуç кăшăлĕ», «Вăтăр çул», «Кăмăл», «Эсĕ – телейĕм ман», «Тепĕр хут», «Лаш Таяпа» юрăсем чуна тыткăнлаççĕ. Унăн хайлавĕсемпе А. Думилин, Д. Антипов юрăççем хит-парадсенче мала тухаççĕ.

2018 çулта Шупашкарти культура институтне пĕтернĕ çамрăкăн ялта чун-чĕрене çĕклекен мероприятисем йĕркелес ĕмĕтсем те пысăк.

## *Тĕлĕнмелле професси*



## Плющев Юрий Николаевич (1953)

Юрий Плющев кинооператор тата фотохудожник çинчен Чăваш кĕнеке издательствин тĕп редакторĕ Валерий Алексеев виçĕ çул каялла çапла каласа панăччĕ: «Беларусьфильмри» чăваш юлташлăхне кĕрет вăл, сахал мар документлă тата илемлĕ фильм ӳкернĕ. Елчĕкре çуралнă, Шупашкарта çитĕннĕ, Николай Никитин чăваш çыравçин ывăлĕ...» Анчах ун пирки çиййĕнчех çырасси пулмарĕ: Мускава, Раççей çинчен ют çĕршыв çыннисене каласа паракан студие, чĕнсе илнĕ иккен ăна, хăçан таврăнассине каласа хăварман. Вăхăт иртсе пырать, анчах куçа-куçăн ларса калаçма хăçан май килĕ? Тав Турра, «Фейсбук» урлă кăштах сăмахласа илме май килчĕ.

– *Кинооператор – пит сайра тĕл пулакан професси. Алла кинокамера тытас ĕмĕт епле çуралчĕ?*

– Шкулта вĕреннĕ чухне эпĕ фотографи енне туртăннă. Ман «Смена-6» фотоаппарат пурччĕ, каярах «Зенит» çине куçрăм. Шупашкарти пионерсен керменĕ çумĕнчи фотокружока çӳреттĕм. Ăна Михаил Егоров ертсе пыратчĕ. Вăл çав тапхăрти паллă фотожурналисчĕ, ун сăнӳкерчĕкĕсем хаçат-журналта тăтăшах çапăнса тухатчĕç. Паллах, вăл пире ытла нимех те вĕрентмен пек туйăнать, анчах хамăр тĕллĕн ĕçлеме чармастчĕ, çавăнпа ăна яланах ăшшăн аса илетĕп. Малтанхи сăн ӳкерчĕксене «Молодой коммунист» хаçатра пичетлерĕм, каярахпа «Комсомольская правда» тата ытти хаçатсемпе туслашрăм. Шкул хыççăн нумай тиражлă «Знамя труда» тата агрегат завочĕн «Рабочая жизнь» хаçатсенче ĕçлесе пăхрăм, репортажсемпе статьясем (сайра хутра сăвăсем те) чылай пичетлесе кăлартăм. Çак хушăра Хусан университетĕнче филологи факультечĕн журналистика уйрăмĕнче куçăмсăр майпа вĕрентĕм. Мускаври кинематографи институчĕ çинчен шутлама пуçласан, иккĕмĕш курс пĕтерсен, вĕренме пăрахрăм. Мана «куçакан фотографи» илĕртме тата тĕлентерме пуçларĕ.

– *Тĕнчипех паллă çак институт сана хăйĕн капашсăр пысăк конкурсĕпе хăратман-и?*

– Конкурс текенни чăнах та пысăкчĕ, анчах темле майпа пултаруллисене суйласа илме пĕлетчĕç. Лайăх астăватăп, ректор кабинечĕ умне вĕренме кĕрекен çамрăксем нумаййăн пуçтарăннă – иртме çук. Экзамен тытнисене пĕрерĕн-пĕрерĕн чĕнсе кĕртеççĕ. Телейлисен хушшинче Мускав абитуриенчĕсем нумайрахчĕ, вĕсем паллă режиссерсемпе кинооператорсен ачисемччĕ. Сăмахран, пирĕнпе пĕрле

Григорий Александров режиссерăн мăнукĕ вĕренме кĕчĕ. Малалла направленипе килнисене чĕнсе кĕрте пуçларĕç, вĕсем Фрунзе, Рига, Вильнюс, Баку хулисенчен килнисемччĕ. Ют çĕршыв çыннисем те кĕресшĕн паллă института, вĕсене те вырăн параççĕ. Черетре çирĕм тăваттăмĕш эпĕ пултăм. Ман хыççăн тепĕр çамрăка чĕнсе кĕртрĕç те секретарь коридора тухса каçаллăха оператор факультетне вĕренме урăх илместпĕр тесе пĕлтерчĕ. Телей тени манран пăрăнса иртмерĕ, пуçтарăннисем хушшинче талантлă ачасем нумайччĕ. Вĕсен шанчăкпа çиçекен куçĕсем сӳннине курса юлни халĕ те асрах.

Операторсен факультетĕнчи эп лекнĕ уйрăм ют çĕршывсенче ĕçлекен киножурналистсене хатĕрлетчĕ, вĕсене тĕрлĕ континентсенчи корпунктсем кĕтетчĕç. Студент чухне ӳкернĕ фильмсене, вĕсем хăшпĕр енчен пулса çитеймен пулин те, эпĕ яланах ăшшăн аса илетĕп. Сăмахран, «Машинист» фильма ӳкернĕ май темиçе хутчен чукун çулпа рейса кайма тиврĕ, тепловоз машинисчĕн кабининче ларса çӳресе çак йывăр та яваплă професси çыннин характерне уçса пама тăрăшрăм. «Рядом с магистралью» фильмра интернационаллă стройотрядсем Байкалпа Амур магистралĕ тунине ӳкерсе кăтартрăм. Диплом хӳтĕлеме ӳкернĕ «Пятый» фильм Сергей Бондарчук кинорежиссер хайĕн «Степь» картинине епле ӳкерни пирки каласа парать. Çак ĕçсене ӳкернĕ чух йывăрлăхсем те пулчĕç, вĕсене çĕнтерсе пултарулăх ĕçĕн савăнăçне туйса куртăм, çакă хам çула тĕрĕс суйласа илнине таранĕнăн ăнланса илме те май пачĕ.

– *«Беларусьфильма» мĕнле лекрĕн? Кунта ӳкернĕ хăвăн пĕрремĕш фильмна астăватăн-и?*

– Ун чухнехи йĕркепе хĕрлĕ дипломпа пĕтернисен ĕç вырăнĕ суйлама ирĕк пурччĕ: Ленинградри документлă фильмсен студийĕ, Свердловскри кинохроника студийĕ. Çак алăксем саншăн яр уçă. Эп темшĕн «Беларусьфильма» куç хыврăм. Мĕншĕнне ăнлантарса параймастăп. Кунта чаплă режиссерсемпе операторсем ĕçленĕ, тен, çакна шута илнĕ пуль.

«Беларусьфильмри» хамăн пĕрремĕш ĕçе эпĕ пит савăнсах аса илместĕп. Ун режиссерĕ вăйсăртарахчĕ, çавăнпа тӳрех ăнăçлă утăм тума май килмерĕ. Каярахпа Александр Карпов–кĕçĕннипе паллашрăм. Дмитрий Михелев та ун чухне чи интереслĕ режиссерсенчен пĕриччĕ. Унпала тăватă фильм ӳкертĕмĕр. Алла-аллăн ĕçлесе эпĕ профессионал пулса тăтăм теме те пулать. Тĕрлĕ фестивальсене хутшăнса дипломсемпе парнесем илме тивĕç пултăмăр. «Интернат ты наш» фильмах мĕне тăрать! Ăна Радошковичи поселокĕнче ӳкертĕмĕр. Тĕрлĕ ачасен йывăр шăпине уçса панă унта. Çав интернат ачисем хăйсен тасалăхĕпе, пурнăçа юратнипе, каçарма пĕлнипе куракана тыткăнланă.

– *Сирĕн режиссурăна куçас шухăш пулман-и?*

– Лайăх режиссерпа ĕçленĕ чухне кун пек шухăш сана аптратмасть. Эп хам пултарнă таран ăна пулăшатăп, вăл сана хăш-пĕр тĕллевсене еплерех пурнăçламаллине уçса парать. Пĕрне-пĕри çур сăмахранах ăнланни документалистикăра та, илемлĕ фильм ӳкернĕ чух та питĕ пĕлтерĕшлĕ.

– *Пурнăçа кĕрейменн ĕмĕтсене аса илсен чуна канăçсăрлăх хупăрласа илмест-и?*

– Ун пек ĕмĕтсем кашниĕнех пур, пултарулăх çыннин вара темĕн чухлех. Шутласан, вĕсенчен хăшĕсем начарах та пулман иккен, çине тăмалла кăна пулнă. Анчах вăхăта каялла тавăраймăн.

– *Чи малтанхи «профессине», фоторепортер ĕçне, Эсир халĕ те пăрахмастăр...*

– Фотоаппарата эпĕ нихăçан та аларан яман. Хăй вăхăтĕнче кун пирки «Московский комсомолец» хаçатра «Самоигральная натура» статьяра аван каласа панăччĕ. ВГИК хыççăн та тĕрлĕ выставкăсене

хутшăнаттăм. Вĕсенче ҫĕнсе илнĕ дипломсем ман сахал мар. 2000-2006 ҫулсенче кăна вăтăр ытла фотовыставка уҫрăм. Вĕсенчен чылайăшне ООН, Беларуҫри Америка посольстви гранчĕсемпе йĕркеленĕ. Ĕҫсене Беларуҫре анчах мар, Хельсинки, Рига, Брюссель, Будапешт, Лейпциг тата ытти хуласенче, Англире тата АПШра кăтартнă. Виҫĕ теҫетке ытла ҫĕршыври уйрăм ҫынсен коллекцийĕсенче те упранаҫҫĕ ĕҫĕмсем: Японире, Англире, Голландире, Кувейтра, АПШра, Раҫҫейре, Эстонире, Чехире...

## *Чăрмавсене ҫĕнтерсе*



## Портнов Константин Петрович (1956)

И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче Геннадий Волков академикăн 80 ҫулхи юбилейне паллă тăваҫҫĕ. Ҫак чаплă самант иртнĕ хыҫҫăн вăл хăйсене унăн вĕренекенĕ вырăнне хуракансене кăштах тытăнса юлма ыйтать. Константин, Чăваш наци конгресĕ ячĕпе саламлама пынăскер (20 ҫула яхăн ĕҫтăвком председателĕнче ĕҫленĕ – **Авт.**), залран тухма васкамасть, хыҫаларах, айккинерех ҫеҫ куҫса ларать. Аслă учитель пĕрин хыҫҫăн теприне мухтать, малашлăхра ĕҫлемелли пирки ырă сĕнӳсем пама та ӳркенмест. Константина та асăрханă вăл. «Ан вăтан, Костя, иртсе лар маларах... Ку ача ҫыравҫă, – ăнлантарать вăл ыттисене.– Пысăк саспаллисемпе ҫырăнакан Ҫыравҫă. Пиртен кашниех шухăшне, кăмăлне, чунне хут ҫине куҫарса ҫырса кăтартма пултараймасть. Костя вара пултарать. Ҫитменнине – тĕрĕссĕн тата пурне те ăнланмалла».

... Ҫуллахи каҫсенче пĕр касри аслă ăрурисем пуҫтарăнса тĕрлĕ хыпара сӳтсе явнине пĕлетпĕр ĕнтĕ. Анчах вĕсем ача-пăчана ытлашшиех итлеттересшĕн марччĕ – хăваласах яратчĕҫ. Кĕҫтук вара хăйне хăюллăрах кăтартасшăн пулнă-и – ҫав калаҫусене кĕрсе кайса хутшăнма та хăтланнă. Ҫавна асăрханă Анна Ивановна, касра пурăнакан учитель, тăрăхласа тенĕ пек «сĕнӳ» панă: «Эсĕ хăвăн асăрхаттарăвусене хут ҫине ҫыр». Каланă – тунă.

«Пионер сасси» хаҫатра, Чăвашрадиора унăн самай пысăк материалĕсем кун ҫути курма пуҫлаҫҫĕ. «Колхоз ялавĕ» (халĕ – «Елчĕк ен»), «Коммунизм ялавĕ» (халĕ – «Хыпар») хаҫатсенче ĕҫленĕ чухне вара журналист ҫăкăрĕн тути-масине аванах туйса илет. Тĕп издани коллективĕнче профком председателĕ пулнă май профсоюзăн хăйĕн хаҫачĕ пулмаллине те тăтăш хускатать. Мĕн тетĕр? «Профсоюзный вестник» тухма пуҫлать. Чăваш патшалăх университетĕнче вĕреннĕ ҫулсенче «Студенческий меридиан» хаҫат редакторне те суйланă ăна. Пĕр вăхăт 200 пин тиража ҫитнĕ «Адам и Ева» хаҫат та кăларса тăрать Аслă Пăла Тимеш каччи. «Чăваш тĕнчи» хаҫата та вăлах ҫул панă.

– Ăна регистрацилессине пĕтĕмпех хамăн укҫа-тенкĕпе йĕркеленĕ, – йывăрлăх вăрттăнлăхне пытармасть пуҫаруҫă. – Мускавра виҫҫĕмĕш хут кайсан ҫеҫ татса пачĕҫ ыйтăва.

Константин Петрович ҫĕр ĕҫченĕсене халалласа йĕркеленĕ «От всей души» телекаҫсен ярăмĕ Чăваш Республикин Президенчĕн грантне тивĕҫнĕ. Ҫулсерен ҫĕршывăн пĕтĕм регионĕсенчен хутшăнакан чăваш юрăҫисен «Кĕмĕл сасă» фестивальне шутласа кăлараканĕсенчен пĕри те вăлах. Валерий Лукьянов юлташĕпе ҫитнĕ вĕсем ҫак ырă шухăш патне. Нумай регионсенче (Красноярск, Тюмень, Мурманск, Эстони...) пулса чăваш наци-культура автономийĕсене йĕркелеме пулăшнă. Ыйтăва татса пама вырăнти влаҫпа пĕр чĕлхе тупмалла, ку пур ҫĕрте те ҫăмăлах пулман, ҫапах майне тупнă, ӳкĕте кĕртнĕ.

Ҫапла, чăрмавсене ҫĕнтерсе, ыттисене ҫул уҫса пыма хăнăхнă Аслă

Пăла Тимеш арĕ. Ялан çĕннине шыранă, шутланине пурнăçланă. Хăйшĕн мар-çке, чăвашлăхшăн тăрăшать. Çакна вăл хăйĕн учителĕнчен – Геннадий Волков этнопедагогран – вĕренсе пыни куçкĕрет. Педагогика ăслăлăхĕсен кандидачĕ, Раççей Журналисчĕсен пĕрлĕхĕн пайташĕ Константин Портнов – 10 кĕнеке авторĕ.

*Юратнă ĕçре*



## Пыркин Евгений Ипатьевич (1964)

Чăваш патшалăх академи симфони капелли – республикăри чи вăйлă творчество коллективĕсенчен пĕри. Ăна Раççей халăх артисчĕ Морис Яклашкин профессор ертсе пырать. Капеллăри хор хăйĕн пултарулăхне ют çĕршывсенчи, хамăр çĕршыври хуласенче кăтартнă, пур çĕрте те ăна хапăл туса кĕтсе илеççĕ. Вăл юрланă паллă композиторсен тата халăх юррисем Пĕтĕм Союзри тата Раççейри радиопа янăранă. Вĕсем Мускаври тата Чăвашрадио фончĕсенче упранаççĕ.

Çĕршывĕпе паллă коллектив йышĕнче хăй вăхăтĕнче Чăваш халăх артисчĕ Иван Христофоров (Çĕнĕ Пăва) юрланă. Хальхи тапхăрта унта пирĕн тепĕр ентеш – Аслă Шăхаль ялĕнче çуралса ӳснĕ Евгений Пыркин – юрлать. Хорта вăл иккĕмĕш тенор (арçынсен аялти çинçе сассиллĕ юрăç) шутланать. Артист йышпа тĕрлĕ çĕрте иртекен концертсене хутшăнать, ют çĕршыв, вырăс, чăваш композиторĕсем кĕвĕленĕ, тĕрлĕ халăхсен юррисене шăрантарать.

Евгений Ипатьевичăн юрă-кĕвве юратас туртăм ачаранах аталаннă. Ашшĕ – Ипатий Павлович – Кĕçĕн Пăла тăрăхĕнче хăй вăхăтĕнче сад ăсти пулнипе кăна мар, тĕрлĕ музыка инструменчĕпе – баянпа, хуткупăспа, балалайкăпа – ăста калама пĕлнипе те таврара паллă çын шутланнă. Мăшăрĕпе – Галина Васильевнăпа – пилĕк ывăлĕпе виçĕ хĕрне мĕн пĕчĕкрен ĕçе хăнăхтарса ӳстернĕ. Вĕсем ашшĕ-амăшĕпе пĕрле садра улма-çырла йывăççисене пăхнă, хăмла, пахчаçимĕç çитĕнтернĕ, пухса кĕртнĕ. Çĕнĕ Пăвари вăтам шкулăн 8 класне пĕтернĕ хыççăн Евгений Шупашкарти строительство техникумне кайса кĕнĕ. Ăна ăнăçлă пĕтерсен малтан Удмурт Республикинче, каярахпа Çĕнĕ Шупашкарти çурт-йĕр тăвакан комбинатра ĕçленĕ. Анчах мĕн пĕчĕкрен юрă-кĕвве юратнă качча́н чĕри музыка еннех туртăннă. Пушă вăхăтра гитарăпа каланă, халăх ансамбльне юрлама çӳренĕ. 1988 çулта Евгений Пыркин хăйĕн тахçанхи ĕмĕтне пурнăçлас тесе пĕрремĕш утăм тунă – Шупашкарти Ф. Павлов ячĕллĕ музыка училищине вĕренме кĕнĕ. Пирваях вокал уйрăмĕнче пĕлӳ пухнă, унтан Чăваш Республикин халăх артистки Зоя Андреева ертсе пыракан класа куçнă. 1991 çулта «Академи хорĕпе ансамбль артисчĕ» специальноçа алла илнĕ. Пултарулăхне кура ăна Хусан консерваторине вĕренме кайма сĕннĕ. Анчах çулсем иртни шухăшлаттарнă. Евгений Ипатьевич Чăваш патшалăх юрăпа ташă ансамблĕнче виçĕ çул ĕçленĕ хыççăн 1995 çул пуçламăшĕнче Чăваш патшалăх академи симфони капеллине куçать, хорта юрлама пуçлать. Унтанпа çул хыççăн çул иртет, кашни кунхи репетицие концерт хыççăн концерт улăштарать. Евгений Пыркин хăйĕн ĕçĕ-хĕлĕпе питĕ кăмăллă.

– Юратнă ĕç чуна çĕклет, – тет вăл.

# *Йывăçсемпе «калаçакан»*



## Пятаков Борис Михайлович (1951)

«Кирек мĕнле ĕçре те киленӳ тупма пулать. Ăна чун-чĕререн юратса пурнăçламалла çеç», – çапла шутлать Елчĕк районĕнчи Элексей Тимеш ялĕнче пурăнакан Борис Пятаков.

Чăн самахăн суйи çук. Шупашкарти 8-мĕш профтехучилищĕре электрика вĕреннĕ хыççăн каччă икĕ çул çар тивĕçне пурнăçланă. Унта дивизин команда пункчĕн телефонисчĕ пулнă, çур çултанах телефон станцийĕн начальникне лартаççĕ ăна.

1973 çулта «Прогресс» колхозра электрикра ĕçлеме пуçлать. Мĕн тетĕр? Тăрăшулăскер «Районти чи лайăх электрик» ята тивĕçнĕ, «Сельэнерго» производство пĕрлешĕвĕн Хисеп хăми çине унăн сăнӳкерчĕкне вырнаçтарнă.

– 1990 çулта ялти клуба ĕçлеме илчĕç, – тет Борис Михайлович. – Ăна юсаса илем кĕртме тăрăшрăм. Ачасен «Ăста аласем» кружокне йĕркелерĕм. Пилĕк çултанах «Республикăри чи лайăх культура çурчĕ» ята тивĕçрĕмĕр.

2004 çулта клубран ремесла çурчĕ туса хунă. Тĕп сăлтавĕ – хуçин аллисем ылтăн пулнăран. Курсассăн – тĕлĕнетĕн: Борис Михайлович йывăçран касса, эрешлесе ăсталанă кил-терĕшре усă курмалли хатĕр-хĕтĕр, юмахри сăнарсем чĕррĕн туйăнаççĕ. Çапах та маçтăра чунĕ ытларах чăваш халăх музыка инструменчĕсем патне туртать пулинех. Сентре çине шăкăрин вырнаçтарнă вĕсене: çатăрка, параппан, тӳнкки, шакăртма, шакмак... 20 тĕрли пур унта. Хăшне-пĕрне Чăваш Республикин Культура министерствине, Елчĕкри тата Патăрьелти культура керменĕсене, шкулсемпе фольклор ушкăнĕсене парнеленĕ.

Кружока çӳрекен ачасем ăсталанă япаласемпе, сувенирсемпе, шавлă инструментсен коллекцийĕпе районти çеç мар, республикăри мероприятисенче те паллашма пулать. 2016 çулта Чĕмпĕр облаçне кайса килнĕ вăл, куравсем йĕркеленĕ. 2010 çулта Шупашкарти Халăх пултарулăхĕн çуртĕнче унăн «Йывăçран ăсталанă тĕлĕнтермĕшсем» куравĕ ĕçленĕ. Тепĕр тăватă çултан «6х7» галерейăра ал ăстин ĕçĕсемпе паллашма май пулнă. Сăмах май, ял патриочĕ Элексей Тимеш гербне те тунă.

Ăста куллен çак хавхаланупа сывлать тейĕн, пулас экспонатсен капашне, калăпăшне хуçалăхри ĕçпе аппаланнă вăхăтра та пуçĕнче темиçе хутчен çавăрттарать, тĕрлĕ вариант шырать. Ӳнерçĕ хурăн, çăка, юман, вĕрене йывăçĕсене мала хурать, хăваран илемлĕ карçинккасем çыхать.

Борис Михайлович çав тери таракат, кăмăлĕ яри усă. Хăйĕн çинчен ыйтса илнĕ çырура вăл «атте-анне» сăмахсене пысăк саспаллирен пуçласа çырать. (Орфографи, грамматика тĕлĕшĕнчен унăн йĕркеллех – авт.). Çакна аслисене хисеплени кăтартăвĕ тесшĕн.

Б. Пятаков – Елчĕк ял тăрăхĕн хисеплĕ гражданинĕ. Тăрăшуллă арçынна ЧР Муниципалитет йĕркеленĕвĕсен канашĕ общество ĕçне хастар хутшăннăшăн, вырăнти хăй тытăмлăх аталанăвне тӳпе хывнăшăн икĕ хутчен Тав çырăвĕпе чысланă. Вăл ял старости те, çак тивĕçе вăл питĕ лайăх пурнăçлать. Культура ĕçĕнчи хастарлăхшăн вара Раççей Федерацийĕн Культура министерствин Хисеп грамотипе (2012) чысланă.

Ĕç ветеранĕ йывăçсемпе паян та чунне уçса «калаçать»...

**Лев Васильев, «Много шума из ничего» («Советская Чувашия», 13.08.2008):**

*– Своей фамилии Б.М. Пятаков дает своеобразное объяснение: «Я по жизни обязан все делать на «пять», значит, на отлично. Как*

*в 1990 году я начал работать в здешном Доме ремесел, так и увлекся поделками. Зачем пустовать бывшей кинобудке, если фильмы перестали показывать? Вот и заняли ее под мастерскую»...*



## *Ентешĕ пехил панипе*

## Рекеев Алексей Васильевич (1848-1932)

Чăвашсене çутта кăларнă И. Яковлевпа пĕр ялтанах Рекеев – Тутарстанри Теччĕ районĕнчи Кăнна Кушкинчен. Иван Яковлевичăн ача чухнехи çывăх юлташĕ, вĕренекенĕ тата пулăшаканĕ. Каярахпа вара Алексей Васильевич вĕрентекен, куçаруçă, этнограф, общество деятелĕ пулса тăрать.

Вăл Чĕмпĕрти уес училищине, унти педагогика курсне пĕтернĕ. 1870-1875 çулсенче И. Яковлева çĕнĕ чăваш алфавитне, пĕрремĕш чăваш букварĕсене хатĕрлеме пулăшнă. 1881-1917 çулсенче вăл Елчĕк районĕнчи Кивĕ Эйпеç ялĕнчи чиркӳре священникре, шкулта учительте ĕçленĕ. Чиркӳ çумĕнче ачасен икĕ хорне йĕркелеме пултарнă.

Алексей Васильевич Чăваш учителĕсен пĕрремĕш съездне йĕркелеме, ирттерме хутшăннă. Хайĕн укçипе ялсенче тăхăр шкул уçнă, вăл шутра районти Элексей Тимеш тата Çĕнĕ Эйпеç ялĕсенче. 1894 çулта Кивĕ Эйпеçре чăваш кĕнекисен лавкка-складне уçнă, халăха 1313 кĕнеке панă тата сутнă. Выçăхса пурăнакансене пулăшас тĕллевпе фонд йĕркеленĕ. Ĕлĕкхи кивĕ япаласене, фольклор пухнă май Чĕмпĕрти халăх вĕренĕвĕн чăваш институчĕ çумĕнче историпе этнографи музейĕ уçас ĕçе хутшăннă.

А. Рекеев вĕренӳ, тĕн ыйтăвĕсемпе ăслăлăх статйисем те çырнă, Евангелие лайăх вĕренекенсемпе пĕрле тăван чĕлхене куçарнă. Халăх хушшинче Хусанта тухса тăнă чăваш кĕнекисене салатнă. Ăна 2-мĕш степень Çветтуй Анна орденĕпе наградăланă. Унăн вилтăприйĕ хăй ĕçленĕ Гурий ячĕллĕ чиркӳпе юнашарах вырнаçнă. 2009 çулта шкул умĕнче А. Рекеевăн чаплă палăкне уçнă.

**Соловьева Г.В., «Письмо И.Я. Яковлева А.В. Рекееву как образец нравственного воспитания» (в кн. А.В. Сусметова «Первый ученик патриарха», 2007):**

*«... Заслуги А. Рекеева высоко ценили великий педагог – просветитель И.Я. Яковлев ( по его словам «Рекеев был одним из видных и полезных деятелей в образовании чуваш» ), просветитель народов Поволжья, миссионер Н.И. Ильминский, историк и этнограф Н.В. Никольский. Первый биограф И.Яковлева А.В.Жиркевич так писал о Рекееве: «В нем две хорошие черты: скромность и правдивость. Он всю жизнь, как и Яковлев, отдал делу просвещения народа...*

*... Став членом Братства Святого Гурия, Алексей Рекеев получил сан диакона. Это давало ему право работать в школе законоучителем, вести службу в церкви на чувашском языке. Он открывает школы и переводит литературу религиозного содержания, переводит художественную, русскую классическую литературу...»*



## *Пĕчĕкрен сцена çинче*

## Савельева Алина Геннадьевна (1976)

Елчĕк районĕнчи Патреккел халăх хорĕ 2017 çулта 95 çул тултарчĕ. Пурнăçри тĕрлĕ пăтăрмаха пăхмасăр пысăк йышлă коллектив çынсене савăнтарассипе çеç мар, воспитани парассипе, çырулăха вĕрентессипе те нумай ĕçленĕ. Хăшне-пĕрне професси суйласа илессинче татăклă утăм тума та пулăшнă.

Аллă çул ытла хормейстерта тăрăшакан Геннадий Борисов алли «витĕр» эстрада çулĕ çине тухнисем те пур. Вĕсенчен пĕри – Алина

Савельева (хĕр хушамачĕ – Добронравова) – пилĕк çултах хорта юрлама пуçланă. «Радуга» вокалпа инструмент ансамблĕн солистки те пулнă каярах. «Айăпне» пĕтĕмпех Геннадий Арсентьевичпа çыхăнтарать вăл.

Юрă-кĕвĕ енĕпе ăсталăхне туптас тĕллевпе Алина И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн чăваш филологийĕпе культура факультетне вĕренме кĕрет. Диплом илнĕ хыççăн кĕске тапхăр Елчĕкри тата Патреккелти культура çурчĕсенче ĕçлет, тĕрлĕ конкурссене хутшăнса палăрать – Пĕтĕм тĕнчери чăвашсен «Кĕмĕл сасă» (2002) фестиваль лауреачĕ, республикăри чăваш эстрада юрăçисен «Анатри кĕвĕсем» фестиваль çĕнтерӳçи пулать.

Алина Геннадьевна вунă çул ытла Шупашкарти 78-мĕш номерлĕ «Колобок» ача пахчинче воспитательте тăрăшать. Фольклор енĕпе методист пулнă май, шăпăрлансене чăвашсен авалхи юрри-кĕввине юратма та вĕрентет.

А. Савельевăна Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Хисеп хучĕпе (2002) чысланă.

## *Ювелир*



## Семенов Сергей Васильевич (1959)

Елчĕкре çуралса ӳснĕ Сергей Семенов пурнăç çулĕн пуçламăшĕнче хăй ювелир пулассине пĕлнех-ши? Шупашкарти 1-мĕш номерлĕ профессипе техника училищинче слесарь-инструментальщик специальноçне вĕреннĕскер, электроаппаратура заводĕнче вăй хурать. 1983 çулта анлă профиллĕ фотографсен курсне пĕтерет, йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен предприятисенче ĕçлет. 90-мĕш çулсен пуçламăшĕнче Шупашкарти Мускав районĕнчи хушма пĕлӳ паракан центрта ачасене фото ĕçне те вĕрентет.

Сергей Васильевич 1997 çулта «Феонит» ювелир мастерскойĕнче ĕçлеме пуçлать. Унтах хаклă капăрлăх хатĕрĕсем тăвакана вĕренет. Хăй еккипе тенĕ евĕр, пĕчĕккĕн ӳнер тĕнчине кĕрсе пырать. 2005 çулта художниксен симпозиумне пуçласа хутшăнать.

С. Семенов – 2003 çултанпа чăваш ӳнерçисен пĕрлешĕвĕн пайташĕ. Капăрлăх хатĕрĕсене вăл ылтăнран, кĕмĕлтен, феонитран, ахахран, чулран касса-çырса-ӳкерсе калăплать.

## *Кĕнекесене чун кĕртет*



## Сергеев Петр Николаевич (1958)

Чăваш кĕнеке издательстви чăваш ачисем валли нумай кĕнеке пичетлесе кăларать. Ачасем валли пулсан кĕнеке нумай ӳкерчĕклĕ, хитре те илĕртӳллĕ пулмалла. Издательство çак ĕçе тĕрлĕ ӳнерçĕне явăçтарать, вĕсенчен чи ăнăçлă ĕçлекенсенчен пĕри вара пирĕн ентеш – Петр Сергеев.

Вăл 1958 çулхине Архангельск облаçĕнчи Новодвинск хулинче çуралнă. 1965 çулхине вара вĕсен çемйи кил пуçĕ çуралнă яла – Шăмалака – куçса килнĕ, Петĕр 5-мĕш класа тăван ялти шкула кайнă. Унăн ашшĕ – Николай Андреевич – хăй вăхăтĕнче Улатăрта ӳнерпе гравюра училищинче вĕреннĕ, Чăваш халăх художникĕпе Николай Овчинниковпа пĕр вăхăталлах. Ӳкерес туртăм, ăсталăх ывăлне шăпах ашшĕнчен куçнă та ĕнтĕ.

Çапах та тӳрех ӳнер тĕнчине кĕрсе кайман-ха яш: тăван ялти шкулта 8 класс, Лаш Таяпара вăтам шкул пĕтерсен комсомол путевкипе Шупашкарти промышленнăç тракторĕсен заводне çĕклеме тухса

кайнă, унтан 1977-79 çулсенче Инçет Хĕвелтухăçĕнче çар хĕсметĕнче чикĕ сыхланă, таврăнсан ялти клуб заведующийĕнче, «Слава» хуçалăхра пилĕк çул художник-оформитель пулса тăрăшнă. Анчах чунра тем кăшланă, ӳнер ĕçне профессиллĕ шайра вĕренес тени канăç паман: 1985 çулхине И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтне ӳнерпе графика факультетне вĕренме кĕнĕ.

1990 çулта тăван ялти шкулта ĕçлеме пуçланă, ачасене паянхи кунччен ӳкерме вĕрентет, ӳкерӳ, черчени, технологи предмечĕсене ертсе пырать.

Чăваш кĕнеке издательствин ун чухнехи пуçлăхĕ Валерий Комиссаров сĕннипе П.Н. Сергеев хăйĕн ăсталăхне кĕнеке графикинче тĕрĕслеме шутлать. Вăл илемлетнĕ пĕрремĕш кĕнеке – хамăр ентешĕмĕрĕн Елена Нарпин «Çумламан йăранĕ» (2007). Унтанпа 30 ытла кĕнекене илемлетнĕ вăл, юлашкисенчен «Йăлăмри акатуй» (Ю. Сементер), «Тривим йысна калавĕсем» (Г. Орлов), «Чап-чап уйăхĕ» (калавсен пуххи)...

Унăн икĕ хĕрĕ ашшĕн çул-йĕрне суйласа илнĕ: асли Ольга И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университетĕнче ӳнерпе графика факультетĕнче «Компьютер дизайнĕ» специальнăçа алла илнĕ, халĕ Мускавра хăйĕн профессийĕпе ĕçлет; кĕçĕнни Настя асăннă факультетрах пĕлӳ пухать.

## «Хыпара» парăннă журналист



## Смирнова Надежда Георгиевна (1958)

Надежда Смирнова журналистăн ятне-шывне «Хыпар» вулаканĕсем лайăх пĕлеççĕ – 37 çул ытла тăрăшать вăл çак хаçатра. 1981 çулта Ленинградри патшалăх универститечĕн журналистика факультетне пĕтернĕ хыççăнах ку хаçат редакцийĕнче ĕçлеме пуçланă. Малтанах корреспондентра тăрăшнă пулсан, 1995 çултан вара культура пайĕн редакторĕ, редколлеги членĕ.

Шкул çулĕсенче Надежда килти тата колхозри ĕçсене хастар хутшăннă, пушă вăхăтра ырă пулăмсене тетрадь çине çырса пынă. Ашшĕ район хаçачĕпе тачă çыхăну тытнине курса ӳснĕ. Пиллĕкмĕш класра вĕреннĕ чухне «Колхоз ялавĕнче» (халĕ – «Елчĕк ен») пĕрремĕш заметки кун çути курнă. Вăхăт иртнĕçемĕн шкул ачи район хаçачĕн штатра тăман корреспонденчĕ пулса тăнă. Выранти хаçатпа кăна мар, Чăваш радиовĕпе, «Хатĕр пул» журналпа та туслă çыхăну тытнă Надежда Рахмуллина. Радиожурналăн хастар авторне Пĕтĕм тĕнчери «Артек» пионерлагере канма янă.

Лаш Таяпари вăтам шкула пĕтерсен хĕр çырас ăсталăхне малалла аталантарас тĕллевпе И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетне кĕнĕ. 3-мĕш курс хыççăн Ленинградри университета куçнă. Унта ăс пухнă çулсенче Ярославль, Чĕмпĕр облаçĕсенче практикăра пĕлĕвне ӳстернĕ, çынсемпе пĕр чĕлхе тупма хăнăхнă.

Чăвашлăх «тилхепине» алран вĕçертмесĕр, çирĕп тытса пынăран 2000 çулта Н. Смирновăна чăваш журналисчĕсен Çемен Элкер ячĕллĕ, тепĕр çичĕ çултан – Н. Никольский ячĕллĕ премисемпе хавхалантарнă.

Хаçатăн «Культура» страницине те Надежда Георгиевна йĕркелесе пырать. Чăваш йăли-йĕркине упрас, аталантарас, пултарулăх ушкăнĕсен, культура учрежденийĕсен ĕçĕ-хĕлне çутатас тĕллĕшпе Надежда Смирнова çырнă нумай материал хаçата пуянлатаççĕ. 2009, 2011 çулсенче Чăваш Республикин культура министерствин грантне çĕнсе илни ахальтен мар. 2014 çулта Культура çулталăкне халалланă конкурсра «Чи лайăх çыравçă» номинацире те çĕнтернĕ.

Чăваш Ен çыравçисен пĕрлешĕвĕн членĕ (1989) – Раççей Федерацийĕн

тата Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ. Ăна Раççей Федерацийĕн Çыхăну тата массăллă коммуникацисен министерствин, Раççей Журналисчĕсен пĕрлĕхĕн Хисеп хучĕсемпе чысланă.

Унăн статйисенче тасалăх, уçăлăх тапса тăрать. Надежда Георгиевна хăй те сăпайлă, ăшпиллĕ те – «çимĕçĕ» те çаплах.

**Валентина Вастулова - пенсионерка, общество ĕçĕн хастарĕ:**

*«Надьăна эпĕ 1977 çултанпа пĕлетĕп, çак ытарайми, пултаруллă, сăпай, пуян тавракурăмлă çыравçăпа тĕлпулма тӳр килнишĕн пĕр вĕçĕм Турра тав тăватăп. Ун чухне эпĕ Елчĕкре тухса тăракан «Колхоз ялавĕ» хаçат корреспонденчĕччĕ, Надя пирĕн редакцине практикăна килчĕ. Пуçласа тĕлпултăмăр пулин те, эпир унпа кĕске хушăрах çывăх туссем пулса тăтăмăр. Вăл манран пĕр çул çеç аслă пулин те, маншăн аппа пек туйăнатчĕ. Надежда чăннипех шанчăклă юлташ, вăл ĕçĕнче питĕ пултарнăшăн чунтан мухтанатăп, савăнатăп».*

## «Пурнăçа хаклама вĕрентрĕç»



## Спиридонов Анатолий Николаевич (1956)

Анатолий Спиридонов каласа панинчен:

– Елчĕк районĕнчи Таяпа Энтринчи Яков Семенов купса хĕрĕ Валентина Яковлевна Спиридонова ирхине 9 сехетре çуратнă мана. Чунпа пуянскер, сывлăхпа тĕреклĕскер Кĕçĕн Таяпари вăтам шкулта учительте тăрăшнă. Вăл Аслă Елчĕк хĕрĕ пулнă. Атте киномеханикра ĕçленĕ. Асатте Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин тулли çулне утса тухнă.

Вăтам шкул пĕтернĕ хыççăн 1974-1976 çулсенче Забайкальски çар округĕнче салтакра пултăм. Камăри автозаводра ĕçленĕ çулсенче çамрăксен рабочи шкулĕнче вĕрентĕм, бокс секцине çӳрерĕм, морж «тивĕçне» те пурнăçларăм.

Шупашкарти ӳнер училищине, Мускаври Н. Крупская ячĕллĕ культура институчĕн живопись уйрăмне пĕтертĕм. Пĕрремĕш ятарлă курава 1982 çулта тăван ялта йĕркелерĕм. Пĕтĕмпе – 19. Вĕсене «Пĕр санăн умăнта çеç пуçăма таятăп – çутçанталăк» девизпа çыхăнтартăм. Ĕçĕмсем хамăр патра çеç мар, ют çĕршывсенче те вырăн тупрĕç.

Чун-чĕре туртăмĕ-ши – эпĕ яланах вăрçă ветеранĕсем хушшинче пулма тăрăшнă. Нумайăшĕн пĕркеленнĕ сăнĕсене портрета çавăрнă. Вĕсемех пурнăçа оптимистла пăхма, хаклама, юратма вĕрентрĕç тесе шутлатăп.

1993 çулта Шупашкарта никама пăхăнман ӳнерçĕсен ассоциацине йĕркелерĕм. 23-ĕн пултăмăр унта. Пирĕн ĕçпе çынсем питĕ кăмăллăччĕ, уйрăмах аслă ăрурисем. Хамăрăн картинăсене эпир нихăçан та урамра сутман.

Эпĕ – Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Хисеп хучĕсемпе дипломсем чылай. Паян манăн мольберт çинче 10488-мĕш ĕç ӳкерĕнет...

## «Хурăнташра» юрлать, ачасене вĕрентет



## Степанова Оксана Всильевна (1989)

«Хурăнташ» эстрада ушкăнне паян Чăваш Республикинче çеç мар, республика тулашĕнче те – Мускав, Тюмень, Томск, Нефтеюганск, Екатеринбург хулисенче, Тутарстан, Пушкăртстан республиксенче, Чĕмпĕр, Самар облаçĕсенче тата ытти регионсенче – лайăх пĕлеççĕ. Унăн юрăçисем – Денис Антипов, Оксана Антипова (Степанова), Анастасия Адякова.

Оксана Степанова Шăмалак ялĕнче çуралнă, тăван ялти пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулта вĕреннĕ. Ача чухнех вăл педагог пулас ĕмĕтпе пурăннă, шкул хыççăн И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университетне музыкăпа педагогика факультетне вĕренме кĕнĕ. 2-мĕш курсра вĕреннĕ чухне Никитинсен «Янташ» эстрада ушкăнĕнче юрлама пуçланă, виçĕ çул ытла ăсталăхне туптанă вăл çак коллективра. Университетран вĕренсе тухнă çĕре вара вĕсен хăйсен ушкăнĕ чăмăртаннă – «Хурăнташ».

«Мĕн сунар тăвансене?» (авторĕ – Шăмалак кинĕ Лидия Изекеева) юрă «Хурăнташăн» юлашки вăхăтра чи анлă сарăлнă юрри пулса тăчĕ, вăл Чăваш наци радиовĕн «Тăван хит» премине те, ытти хисепе те тивĕçрĕ, чи пысăкки вара – ăна халăх юратса йышăнни, кĕрекере юрлани. О. Степанова хăй тĕллĕн те тĕрлĕ конкурса хутшăнать, хулари педагогсен фестивалĕнче вăл «Манăн пĕрремĕш утăмсем» номинацире çĕнтернĕ (2012), «Дети Отчизны – достойная смена» коммерциллĕ мар организацин стипендине те тивĕçнĕ.

Юрăç Шупашкарти пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан 50-мĕш вăтам шкулта музыка учителĕ пулса ĕçлет. Урокра çеç мар кĕвĕ тĕнчине илсе кĕрет вăл вĕрентекенĕсене, уроксем хыççăн «Хум» вокал кружокне йыхравлать – ачасем хаваспах чупаççĕ юратнă вĕрентекенĕ патне. Оксана Васильевна вĕрентекен ачасем ушкăнпа та, уйрăмăн юрласа та хулари, республикăри конкурссенче пĕрре мар çĕнтернĕ, тĕрлĕ парнене тивĕçнĕ.



## «Вĕренекенсемпе мăнаçланатăп»

### Столяров Николай Анатольевич (1953)

Василий Эктел çыравçăн тата ӳнерçĕн пĕр кĕнекинче çакăн пек йĕркесем пур: «...Художник чунĕнче – халăх пурнăçĕ, унăн ĕçĕ-хĕлĕ, шухăш-кăмăлĕ, сăмахлăхĕ, шăпи тата çутçанталăк илемне çав тери çывăххăн, витĕр туйма пĕлни. Çакăнпа анчах ăнлантармалла художник ĕçĕсен тарăнлăхне. Чун ыратăвĕсĕр вара нимĕнле чаплă картина та çуралмасть...»

Николай Столяров Раççей шайĕнчи чылай конкурса, курава хутшăнса палăрнă пулин те, хăйне ытларах вĕрентекен тесе шутлать. Çӳлерех асăннă йĕркесем унра çирĕпленнĕн туйăнаççĕ. И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн дизайн тата профессиллĕ вĕрентӳ меслетлĕх кафедринче ĕçлекенскер, пулас сăрă ăстисене инженери графикин вăрттăнлăхĕсене алла илме вĕрентет.

– Маншăн чи пахи – хам пĕлӳ панă ĕнерхи студентсен ăнăçуллă ĕçĕ-хĕлĕ, çитĕнĕвĕ, – тет наставник. – Вĕсемшĕн савăнатăп, вĕсемпе мăнаçланатăп.

Чăннипех çапла. Елчĕк тăрăхĕнчен тухнă вĕренекенĕсем – ятлисем кăна миçен! Илья Немцев, Георгий Пупин, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ художникĕсем Петр Пупин, Олег Ксенофонтов, Владислав Немцев...

Н. Столяров Елчĕк районĕнчи Аслă Пăла Тимеш ялĕнче çуралнă. Çĕнĕ Шупашкарти 9-мĕш техучилищĕре, И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче, аспирантурăра вĕреннĕ. 1972-1974 çулсенче хĕсметре тăнă. Ăна çар чаçĕн Хисеп кĕнекине кĕртнĕ.

20 ытла ăслăлăх тата вĕренӳпе меслетлĕх ĕçĕсен авторĕ. Ăна Пĕтĕм Союзри ял хуçалăх куравĕн бронза медалĕпе (1987), Раççей Федерацийĕн Вĕренӳпе наука министерствин (2012), Чăваш наци конгресĕн Хисеп грамотисемпе чысланă.



## «Сана пула çуралчĕ манăн ятăм!»

**Судаков Владимир Георгиевич (1952)**

Мĕнле хитре, чуна савăнтарать сăмахĕ,
Мĕнле йăвашшăн ачашлать сасси.
Пин çепĕç тунсăхлă та туйăмлă салам
«Тус, кил!» – тесе пуль йыхăрать кĕвви.

Çакăн евĕр йĕркесемпе мухтаса юрлать Владимир Судаков поэт хăй çуралса ӳснĕ Елчĕк районĕнчи Тӳскел ялне. Мĕн ачаран паянхи кунччен тăван кĕтес ăшшине, ял-йыш пултарулăхне, çывăх çынсен юратăвне туйса хавхаланать вăл творчествинче. Ахальтен мар-тăр литературăри ячĕ унăн – Тускил. Йышлă çемьере çитĕннĕ, сухапуç тытса аталаннă арçын ача, çĕр ĕçне питĕ ăнланакан çын хайĕн «Анне пĕсернĕ çăкăр» сăввипе районта çĕнтерӳçĕ пулнă.

Совет çарĕнче хĕсметре тăнă хыççăн пултарулăх туртăмĕ ăна И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институчĕн музыкăпа педагогика факультетне илсе çитернĕ. Виççĕмĕш курсра вĕреннĕ чухне Венгрире иртнĕ социализмла çĕршывсенчи студентсен хор фестивалĕнче чăвашсем пĕрремĕш вырăн йышăннă. Сăвăçăн тепĕр енлĕ таланчĕ те уçăмланнă çакăнта.

Владимир Георгиевичăн ĕç биографийĕ Республикăри ăслăлăхпа илемлĕх центрĕпе, Чăваш патшалăх академи драма театрĕпе, Чăваш патшалăх филармонийĕпе, машина тăвакан заводăн тата Шалти ĕçсен министерствин культура керменĕсемпе çыхăннă.

Драма театрĕнче вăл илемлĕхпе йĕркелӳ (научно-постановочный отдел) пайĕн пуçлăхĕнче тимленĕскер драматургсемпе, режиссерсемпе, художниксемпе çывăх туслашнă, спектакльсем лартма хутшăннă. М. Горькийĕн «Хĕвелсĕр», Л. Толстойăн «Çын куççулĕ çĕре ӳкмест», П. Осиповăн «Айдар», К. Ивановăн «Нарспи»... Пурĕ 16 ĕç. Филармонире тăрăшнă тапхăрта çĕршыв тăрăх нумай çӳренĕ, курнă, калаçнă.

– Тăван кĕтесе, çывăх юлташ-хурăнташа çитекенни ниçта та тĕлпулаймарăм, – чунне уçать Владимир Георгиевич. – Чĕререн тухакан ăшă сăмахсем, вĕри туйăмсене парнелеме пултаракан хисеплĕ çынсем, ман шутпа, тăван ялта, çуралса ӳснĕ тăван вырăнта кăна.

Сăввисенче е чунĕпе кăна мар вăл ялта. Хула çынни чăннипех тачă çыхăнура çуралнă вырăнпа. Чиркӳ-часавай, çĕнĕ клуб, «Тӳскел» стела, памятник тунă çĕре питĕ хастар хутшăннă. Ял гербĕпе гимнĕн авторĕ те вăлах.

Чăваш писателĕсен пĕрлĕхĕн членĕ (2012) «Спеть судьбу, красоту и любовь» сăвă кĕнеки пичетлесе кăларнă. 100 страницăллă ăстăн çимĕçĕ калăпăшĕпе пысăках мар пулин те, унăн тĕшши техĕмлĕ. Тематики те анлă унта: тăван çĕршыв, шăпа, çамрăклăх, юратупа туслăх, савăнăçпа ырату, суяпа тĕрĕслĕх.

Клара Осокина çырнинчен:

«О его творческих способностях и таланте знают преподаватели и сокурсники, семья и те немногие друзья, кому он может раскрыть свою душу. Сколько раз ему говорила: «Пишешь песни и стихи – печатай, записывай!». А он всегда отвечал: «Я же только любитель, куда мне...». Но признавался, что не может и не хочет слушать и читать халтуру. Он прав и его можно понять – вырос на классике. Мы помним, как встречали с криком «Браво!» Володины хоры, песни и стихи...».



## Пĕрремĕш хĕрарăм-редактор

### Сусметова Алина Ардалионовна (1980)

Алина Сусметова 1980 çулхи кăрлач уйăхĕнче Елчĕк районĕнчи Кив Эйпеç ялĕнче çуралнă. Ялти вăтам шкулта пĕлӳ пухнă, 2002 çулта И.Н. Ульянов ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх университечĕн журналистика факультетне вĕренсе пĕтернĕ. 2005 çултанпа – РФ Журналистсен пĕрлĕхĕн пайташĕ.

Çырас туртăм Алинăн 10-мĕш класра вĕреннĕ чухне вăраннă, шкулта, унтан университетра вĕреннĕ хушăра район хаçачĕпе çыхăну тытса тăнă. Журналист ĕçне 5-мĕш курсра чухне кӳленнĕ, 2001 çулхи авăн уйăхĕнче Шупашкар районĕнчи «Тăван Ен» хаçата вырнаçнă. Алла диплом илнĕ хыççăн кунтах экономика тата ялхуçалăх пайĕн корреспондентĕнче ĕçлеме тытăннă. Тĕрлĕ çулсенче пай редакторĕ, яваплă секретарь, редактор çумĕ пулса ĕçленĕ.

2010 çулта Алина Сусметова «Тăван Ен» хаçатăн тĕп редакторĕнче ĕçлеме пуçлать: унччен район историйĕнче хаçат редакторĕнче хĕрарăм ĕçленĕ тĕслĕх пулман. Вăл редактор чухне «Тăван Ен» тата «Причебоксарье» ятсемпе тухнă икĕ хаçат пĕр кăларăма пĕрлешнĕ.

Алина Сусметова журналистика ĕçĕнче тата район хаçатне ертсе пынă тапхăрта тимлĕхпе пултарулăх кăтартнăшăн ЧР Физкультурăпа спорт министерствин, ЧР Культурăпа национальнăçсен тата архив ĕçĕсен министерствин, РФ Журналистсен союзĕн Хисеп хучĕсене тивĕçнĕ. 2002, 2007, 2009 çулсенче вăл ЧР Президенчĕн пултаруллă çамрăксене уйрăм ăнтăлушăн паракан стипендине илсе тăнă.

2018 çулхи çу уйăхĕнчен вара Алина Ардалионовна «Чăваш Ен» телерадиокомпанире хыпарсен пайĕн редакторĕнче вăй хурать, республика пурнăçĕпе çыхăннă ятарлă кăларăмсем хатĕрлет.



## Кая юлса «вăраннă» талант

### Теллин Ардалион Гурьевич (1953)

Елчĕк районĕнчи Кавал ялĕнчи Теллинсене таврара аван пĕлеççĕ. Ку йăхра чапа тухнă вĕрентекенсем, çар çыннисем, çĕр ĕçченĕсем, строительсем йышлă. Ардалион Гурьевич, акă, 1976 çулта Хусанти инженерипе строительство институтне пĕтернĕ те тĕрлĕ предприятисенче тĕп инженер пулса ĕçленĕ. Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ строителĕ вăл. Ăна Раççей Федерацийĕн Ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотипе те чысланă.

... – Хам астунă тăрăх, манăн ӳкерӳ патне яланах туртăм пулнă, – каласа парать хăй тĕллĕн вĕреннĕ художник. – Ăçтан ку? Хуравне тупаймастăп.

Çапах та куккăшĕн – Венедикт Сосипатрович Зайцевăн – витĕмĕ пулма пултарнах. Вăл Свердловск облаçĕнчи Краснотуринск хулинче шкул директорĕнче ĕçленĕ çулсенче çуллахи каникулсенче яла килнĕ, тăтăшах картинăсем ӳкернĕ. Унăн ĕçĕсем халĕ те тăванĕсен килĕсенче упранаççĕ. Ардалион ялан юнашар пулма тăрăшнă. Тен, пĕрремĕш ӳнер урокĕсем çакăнтан пуçланнă та. Пĕр паллă художник ăна çапла каланă: «Мĕн куратăн – сăрла, ӳкер, ăсталăх практикăпа кăна килет».

Унăн илемлĕх патне туртăнасси шкул çулĕсенчех амаланнă. Студент чухне инженери занятийĕсенче рисовани урокне те «манман»: конспект тетрачĕсем çинех ӳкере-ӳкере ларнă. Унта пĕрле вĕренницен, преподавательсен юлташла шаржĕсем çуралнă.

Паян Ардалион Гурьевич ӳкерӳсĕр пурăнаймасть та пулĕ. Çĕнĕ картинăсем çырăнса пынă май, куравсене те хутшăнать. Унăн васкавлă этючĕсем туллин пулса çитнĕ картинисенчен хăйсен чĕрĕлĕхĕпе, эмоци шайĕпе пачах та уйрăлса тăмаççĕ. Ӳкерчĕкĕсем çутçанталăк илемĕпе тулнă, кăмăла тыткăнлаççĕ. Вĕсенче тем калăпăшли курăнса тăрать: художник пурнăçа юратни, этемпе тăван тавралăхăн килĕшӳллĕ çыхăнăвĕ. Тĕп сăнарсем – йывăçсем – тĕрлĕ «роль пурнăçлаççĕ»: шухăша та яраççĕ, мăнаçлăх та çуратаççĕ.

2018 çулта Ардалион Теллин Николай Шмаков ĕçтешĕпе «Творческий проект» ятлă кĕнеке кăларнă. Унта ентешĕн ӳкерчĕкĕсене те чылай вырнаçтарнă.

## *Бухгалтертан – ӳнерçе*



### Теренин Петр Аркадьевич (1960)

Сахал калаçса нумай ĕç тăвакана, таравитлăскере, сăпайлăскере тахçанах пĕлетĕп. Иртнĕ ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсен вĕçĕнче комсомол ĕçĕнче питĕ хастарччĕ вăл. ВЛКСМ райкомĕн Совет Союзĕн Геройĕ С.А. Андреев ячĕллĕ преми лауреачĕ те пулчĕ.

Çулсем малаллах шăваççĕ пулин те, Петр Теренинра çамрăклăх вут-хĕмĕ сӳнмен-ха. Çара кайиччен Тĕрлемесри бухгалтерсен курсне пĕтернĕскер, алла ручка мар, кисти тытнă. Ӳкерме юратнине кура хуçалăхрах художник-оформитель пулма сĕннĕ. Ун алли витĕр вара тĕрлĕ стенд, пĕлтерӳ хăми, агитаци плакачĕ, фотоэкран черетленсе тухнă. Драма кружокне çӳренĕрен, декорацисене те вăлах хатĕрленĕ. Çав хушăрах чунĕ ыйтнипе çутçанталăка, ял çыннисен пурнăçне сăнарланă. Çуллă сăрăпа, кăмрăкпа ӳкернĕ.

Унăн ĕçĕсене паян чылай çĕрте курма пулать. Шкул çумĕнчи музейра та йышлă вĕсем. Сăмах май, аваллăх управçине те хăйĕн пек икĕ хастарпа – Петр Сметанинпа тата Анатолий Михеевпа – пĕрле йĕркеленĕ.

Петр Аркадьевич музея халĕ те пăхсах, пуянлатсах тăрать, картинисемпе çеç мар, хăй йывăçран касса ăсталанă тата çунтарса эрешленĕ, тăмран туса сăрланă япалисемпе те. Илемлĕх тĕнчине ачасене те явăçтарнă май, музейра вĕсем калăпланă ĕçсем те тивĕçлĕ вырăн тупнă. Кутузов, Чапаев кӳлеписем таранах.

Ăсталăха ӳстерсех, малалла аталантарсах пымаллине шута илсе арçын 1986-1991 çулсенче Мускаври Искусствăсен халăх университетĕнче харăсах икĕ факультетра – фото-киноискусство тата графикăпа ӳнер – куçăн мар майпа вĕреннĕ.

– Çав çулсенче ялта питĕ нумай сăнӳкерчĕк турăм. Мускава та ярса параттăм, – каласа парать ӳнерçĕ.

П. Теренин ялта чиркӳ тăвас ĕçе те хастар хутшăннă. Купола хăех сăрланă. Пачăшкă сĕннипе 1992 çулта Варнава митрополитран турăшсем çырма пил илнĕ. Хальхи стиле тĕпе хурса çуллă сăрăпа усă курнă вăл. Турă Амăшĕн сăнне, Иисус Христоса пăта çинче пăталанине, «Спас Нерукотворный», «Моление о чаще» турăшсене, çветтуйсене çырнăскер, Иконостаса та хăех ăсталанă. Шел, пушар тухнăран унăн ĕçĕсем пĕри те сыхланса юлман. Халĕ Лаш Таяпара çĕнĕ чиркӳ хута янă ĕнтĕ. Петр Аркадьевич унта та хăйĕн тӳпине хывнă.

П. Теренина Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн, Культура, национальноç ĕçĕсен тата архив ĕçĕсен министерствин Хисеп грамотисемпе, Чăваш наци конгресĕн Тав çырăвĕпе, «За благие дела» медальпе чысланă.

**Мария Иванова, «Тавралăх илемне чĕрепе туйсан» («Елчĕк ен», 06.04.2013):**

*... Петр Аркадьевич – çутçанталăкри, пурнăçри илеме ăнланакан, ăна куракан, унпа киленме пĕлекен çын. Аллисем унăн чăннипех ылтăн. Мĕн кăна ăсталаман-ши вăл хăйĕн пурнăçĕнче? Шутласа та пĕтереймĕн. Ытти çын асăрхамасăр иртсе каякан кукăр турат е йывăç тымарĕ унăн аллинче вĕçен кайăк е вăрманти чĕрчун кĕлетки пулса тăрать.*



## Турхансен ĕçне тăсаканĕ

### Турхан Евгений Андреевич (1950)

Турхан ялĕ Елчĕк районĕн хĕвеланăç пайĕнче, Кĕçĕн Пăла юханшывĕн сулахай çыранĕнче вырнаçнă. 44 киллĕ тăрăхран сахал мар ăслăлăх ĕçченĕ, ăнерçĕ, спортсмен тухнă. Пĕртăван Турхансен ячĕсем кăна мĕне тăраççĕ!

Чи асли – Якку (1874-1938) – сăвăсем çырма XIX ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсен пуçламăшĕнчех тытăннă. Чăваш поэзийĕнче пейзаж тата философи лирикине никĕсленĕ. «Варуççи» поэма, евангели мотивĕсемлĕ сăвăсен авторĕ.

Хĕветĕр (1876-1932) – чăваш поэзийĕнче лирика жанрне пуçараканĕ, куçаруçă.

Энтри (1888-1972) чăваш поэзине Çеçпĕл Мишшинчен вунă çул ытла маларах силлабо-тоника тытăмне кĕртнипе, чи пирвай чăваш историйĕн кĕске очеркне çырнипе, революци юррисене чăвашла куçарнипе (1915) паллă. Вăл сăвăсемсĕр пуçне пьесăсем те çырнă. Ж. Мольер, Добролюбов, К. Тетмайер, Фон Паэкен, Г. Державин, З. Мансуров хайлавĕсене чăвашла куçарнă.

Сăмах май, 2017 çулхи авăн уйăхĕнче тăван ялĕнче пĕртăван Турхансене асăнса тата хисеплесе палăк уçнă.

... Турхансен пултарулăх эстафетине малалла тăсаканĕ – Евгений, Энтри ывăлĕ. Вăл Вăрнарти совхоз-техникумран, И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн историпе филологи факультетĕнчен вĕренсе тухнă. 1970-1972 çулсенче çар тивĕçне пурнăçланă. Тĕрлĕ сферăра «хура» ĕçре вăй хунă.

1976 çултанпа Евгений Андреевич – сăмахлăх лаççинче. 20 çула яхăн Патăрьел районĕн «Авангард», çав тапхăртах чăваш регионĕсен «Самана» хаçачĕсенче тĕрлĕ должнăçра тимленĕ. Иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче калем çивĕчлĕхĕ, чĕлхе-сăмах пуянлăхĕ уйрăмах сулăмланнă унăн. Хусанти «Сувар», «Казанские ведомости» хаçатсенче статья-очерк çырнипе çеç çырлахмасть вăл, «шултăра» жанрсене «куç хывать»: «Пăла таврашĕнче» поэма, «Хăрушă чир» повеç, «Чĕрĕлĕх шывĕ» роман сăмах ăстин пултарулăхне уйрăмах курăмлатаççĕ. Вырăс тата тутар писателĕсем Владимир Корчагин, Рафаэл Мустафин, Равиль Файзуллин, Кави Латып, Рустам Кутуй, Ахат Гафар та пысăк хак панă унăн ĕçĕсене.

Е. Турхан – Раççей Журналисчĕсен (1982), Тутарстан çыравçисен (2003) пĕрлĕхĕсен пайташĕ, Митта Ваçлейĕ, Алексей Талвир, Иван Патмар ячĕллĕ премисен лауреачĕ, тĕрĕк çыравçисен Кашкăр Махмучĕ ячĕллĕ конкурсĕн Чăваш Енри призерĕ.

Канăçсăр çыравçă кулăш çаврăмĕсем те ăнăçлă калăплать. Тĕп сăнарĕ – Кукша Кĕркурийĕ, ун тавра вунă çул ытла «Сувар» хаçатра шўтлĕ, йĕплĕ хайлавсем пичетлет.

«Талантлă çын пĕтĕм енĕпе талантлă», теççĕ халăхра. Евгений Андреевич та çавах. Куçаруçă, сăвăç, таврапĕлўçĕ, хăйне сцена çине тухма пиçсе çитнине те чылай çул çирĕплетет: «Айтар», «Кай, кай Ивана», «Шикли шикленнĕ – кĕрĕк пĕркеннĕ», «Хуняма» тата ытти спектакльсенче тĕп рольсене вылянă.

Е. Турханăн пултарулăхне Н. Ашмарин, Г. Вантер, И. Патмар, Н. Никольский орден-медальсемпе хакланă.

## «Тăван» пĕрлешӳре



### Уркина Александра Алексеевна (1961)

Ĕçчен те харсăр чăвашсем çĕршывăн кирек хăш кĕтесĕнче те хăйсен ятне çӳле çĕклеççĕ. Пĕр наци çыннисем тăван тăрăхран инçетре пулсан та пĕр-пĕринпе туслă, килĕштерсе пурăнасчĕ, хамăрăн йăла-йĕркене, культурăна, чĕлхене республика тулашĕнче те упраса хăварасчĕ, йăх-тымар несĕлне ачасемпе мăнуксене вĕрентесчĕ тесе ăнтăлаççĕ. Пĕр чăмăрта пурăнма, чăвашлăха упрама вара вырăнта пĕрлешӳсем йĕркелени пулăшать.

2018 çулта Тюмень облаçĕнче «Тăван» пĕрлешӳ йĕркеленнĕренпе 25 çул çитнĕ. Çак тапхăрта унта пурăнакан чăвашсем нумай ĕç туса ирттернĕ. Чăваш культурин кунĕсенче, калăпăр, ал ĕçĕсен куравне йĕркелесси, юрă-ташă ăстисене тупса вĕсен ăсталăхĕпе ытти халăх çыннисене паллаштарасси ырă йăлана кĕнĕ. Тăван тăрăхран инçетре тĕпленсен чăваш тĕрри, апат-çимĕçĕ, тумĕ чуна çывăххине тата лайăх ăнланатăн. Тюмень чăвашĕсем регионсем хушшинчи тĕрлĕ конкурссене хутшăнаççĕ. Сурхури, çăварни, мăнкун, акатуй, кĕр сăри уявсене çӳлти шайра ирттереççĕ.

Çак тата ытти мероприятисем Александра Уркина (Патшина) хутшăнмасăр иртмеççĕ. Чылай чухне вăл – йĕркелӳçи те хăех.

Елчĕк районĕнчи Аслă Елчĕк ялĕнче 11 ачаллă çемьере кун çути курнă вăл. Шкул пĕтерсен Ленин ячĕллĕ колхозра, унтан Шупашкарти «Чувашкабель» заводра ĕçленĕ. Ачаран юрă-кĕвĕрен аякра тăман пике. Çавăнпа Свердловскри П.И. Чайковский ячĕллĕ музыка училищинче пĕлӳ илнĕ. Çемье çавăрсан шăпа ăна Тюмень облаçĕнчи Аромашево районне илсе çитернĕ. Кунта дояркăра ĕçлеме те ӳркенсе тăман. Совхоз салансан вăл Шупашкарти вокалпа хореографи курсĕнче пĕлĕвне тарăнлатнă. Малалла культура çуртĕнче хăйĕн специальнăçĕпе тăрăшма пуçланă.

2010 çулта Уркинсен çемйи Горьковка ялне пурăнма куçнă. Кунта вăл чăвашсен «Тăван» ятлă хорне ертсе пырать. Ушкăн – облаçри «Туслăх кĕперĕ» наци фестивалĕн дипломанчĕ (2004-2009).

**«Хозяин и Хозяйка» («Национальные культуры региона», стр. 54-57, 2017):**

*... Каждый из них в роли Хозяина и Хозяйки (А. Уркина) относится ответственно и трепетно. К этому обязывает значимость этих персонажей, сохранившаяся в преданиях и воспоминаниях старожилов, с одной стороны, и желание сделать каждый праздник, каждый обряд интересным и запоминающимся для всех присутствующих и для молодежи прежде всего...*

*... – Первый наш выход в качестве Хозяина и Хозяйки состоялся три года назад в середине зимы в канун праздника «кĕр сăри», – продолжает Александра Алексеевна. – Дословно он переводится как «девичье пиво».*

*Самаркин и Уркина – люди в ассоциации известные, каждый из них многое сделал для возрождения чувашского языка и культуры...*



## *Наци юхăмĕн хастарĕ*

### Федоров (Алюнов) Гавриил Федорович (1876 – 1921)

1905-1907 çулсенчи революци чăвашсем хушшинче наци юхăмне аталантарма май панă. Ăна чăваш интеллигенцийĕн çамрăкĕсем ертсе пынă. Вĕсенчен пĕри – Гавриил Алюнов (1909 çулччен Федоров). Вăл Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи Пăва уесĕнчи Патăрьел вулăсĕнчи Аслă Пăла Тимеш ялĕнче (халĕ – Елчĕк районĕ) хресчен çемйинче çуралнă. Чĕмпĕрти тĕн семинарийĕнчен, чăваш учителĕсен шкулĕнчен, Демидовăри (Ярославль хули) юридици лицейĕнчен вĕренсе тухнă.

Г. Федоров эсерсен «Волжский вестник» (Хусан) хаçатĕнче редакци секретарĕнче ĕçленĕ, статьясем те çырнă. Малтанхисене вăл «Серый», «Серый чувашин», «Серый крестьянин», «Симбиряк» псевдонимсемпе кăларнă. Каярахпа вара ялан Алюн Кевĕрли тесе алă пуснă. Асăннă хаçатра хăйне тĕрмене хупиччен 14 статья пичетленĕ. Вĕсенче ун чухне пурне те интереслентерекен политика ыйтăвĕсене, Пăва уесĕнчи чăваш тата тутар хресченĕсем еплерех пурăннине, тĕрлĕ событисем çине мĕнле пăхнине çутатнă. Патшалăхпа политика ертӳçисене Столыпинпа Гучкова, реакци юхăмĕсене тишкернĕ.

Г. Федоров Хусанта тухма пуçланă «Хыпар» хаçатăн редколлеги членĕ те пулнă.

П.Н. Николаевпа (Хурипе) Г.Ф. Федоров Чĕмпĕрти чăваш вĕрентекенĕсен съездне ирттерме оргкомитет йĕркелеççĕ. Унта Хусан, Чĕмпĕр, Ĕпхӳ, Самар кĕпĕрнисенчен 50 вĕрентекен-делегат килнĕ. Съезд чăваш вĕрентекенĕсен организацине тума йышăнать. Ăна «Кружок по образованию чуваш» ят параççĕ. Ентеше çак пĕрлешĕвĕн комитет председательне суйлаççĕ. Миравай судьяра, адвокатра та ĕçленĕ вăл.

Г. Федоров Ярославльти хресченсемпе салтаксен канашĕн, чăваш эсерĕсен комитечĕн председателĕ, Чăваш наци обществин правленийĕн членĕ пулнă. 1917 çулхи чӳк уйăхĕнче ăна Учредитель пухăвĕн депутатне суйланă. Ентешĕмĕр чăваш нацийĕпе кĕрешӳ юхăмĕн мĕнпур паллă событийĕсене хутшăннă, чăвашсене ертсе пынă çĕрте чи авторитетлă çынсенчен пĕри пулнă.



## *Аваллăх ĕмĕрне тăсакан*

### Черняков Петр Викторович (1949)

Реставраци ĕçĕн ăслăлăхпа производство управленийĕн «Реставрация» тулли мар явапл
ă обществин (Пятигорск) директорĕ пулнă Петр Черняков – Раççей Федерацийĕн хисеплĕ строителĕ, Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ строителĕ, Кăнтăр федераци округĕн хисеплĕ строителĕ, Архитектура еткерлĕхĕн Академийĕн член-корреспонденчĕ, Раççей архитекторĕсен пĕрлĕхĕн членĕ...

Çын ĕмĕрĕ кĕске, ӳнер вара – яланлăх...

Ĕлĕкхи ӳнер ĕçĕсене, паллă архитектура сооруженийĕсене тинкерсессĕн – маларах çырнă шухăш тӳрре тухать. Илем пултаруçи, вăхăт çитсен, çӳлти патшалăха куçать, унăн ăс-тăнĕпе аллисен çимĕçĕсен вĕçĕ çук – вĕсем ĕмĕрлĕх. Маçтăр хăйĕн ĕçĕсенче малалла пурăнать.

Этемĕн ылтăн аллисем капăрлатса çĕкленĕ нумай объекта паян патшалăх реестрне кĕртнĕ – вĕсем архитектура палăкĕсем шутланаççĕ. Çулсем иртнĕ май, вĕсен пирвайхи сăнне упраса, тытса тăрасси калама çук кăткăс ĕç. Шăпах çак миссине суйласа илнĕ те Елчĕк районĕнчи Çĕнĕ Эйпеçре çуралнă Петр Черняков. Вăл ертсе пыракан «Реставрация» организаци 1976 çулта йĕркеленнĕ. 89 çынлă коллек-

тив паян хăйсем юсаса çĕнетнĕ Железноводскри Пушкин галерейипе, М.Ю. Ломоносов ячĕллĕ Патшалăх музей-заповедникĕпе, «Эолова Арфа» беседкăпа, «Бристоль» хăна çурчĕпе, Кисловодскри «Шаляпин дачи» музейпа тата ытти палăксемпе тепĕр хутчен мăнаçланма пултараççĕ.

Петр Викторович 40 çул ытла строительство тытăмĕнче тăрăшнă. Вăл 19 çултах «Пятигорскстрой» трестăн 20-мĕш строительствăпа монтаж управленийĕнче рабочире, электросварщикра тимлесе ĕç биографине уçнă та ертӳçĕ шайне çĕкленнĕ. Çав хушăра строительство техникумĕнчен, Ростоври патшалăх строительство академийĕнчен вĕренсе тухнă, Мускаври реставраци академийĕнче квалификацине ӳстернĕ.

**Энциклопедия «Россия в лицах», Ростов-на-Дону, 2011, стр. 360:**

*– ...Стремление к развитию, профессионализм, многолетний опыт – все эти качества как нельзя лучше характеризуют личность Петра Викторовича Чернякова. И как результат плодотворной работы, он с 1988 года по настоящий момент является руководителем ООО СНПРУ «Реставрация» – одной из наиболее востребованных сегодня строительных организаций Ставрополья. Благодаря грамотному руководству, предприятие сумело выстоять в тяжелые постперестроечные годы, постоянно развиваться и смело противостоять всем трудностям.*

*– В нашей сфере за последние годы были проведены значительные изменения, но очень много еще предстоит сделать в будущем, – уверен Петр Викторович.– Необходимо взять на учет все памятники истории и культуры на территории нашей страны. На каждый объект составить охранный договор, план реставрации памятников по регионам минимум на 3 года.*

**И. Запариванная, «Реставрация» возрождает то, что разрушает время» («Пятигорская правда», 01.11.2003):**

*«...Объектов реставрации очень много, но к каждому необходим свой, совершенно особый подход. Старые постройки не подчиняются современным строительным нормам и правилам, у каждого здания свои проблемы – то ли это реставрация полов и отделки, то ли усиление фундаментов, то ли замена деревянных конструкций кровли. Некоторые виды работ можно считать уникальными, такие как изготовление скульптурных копий, восстановление металлического декора. И здесь на помощь приходят скульпторы, мастера кузнечного цеха ООО СНПРУ «Реставрация», которые вручную изготавливают все – от простых креплений до сложнейших металлических декоративных элементов. Так был восстановлен конек флигеля №2 музея-усадьбы Н.А. Ярошенко в Кисловодске, грифоны, завитки, розетки, балясины на пушкинской галерее в Железноводске и т.д.»*

## Хаçат-журнал сăн-сăпатне калăплать



## Чернов Федор Петрович (1978)

Федор Чернов Шăмалак ялĕнче 1978 çулхи кăрлач уйăхĕнче çуралнă, тăван ялти пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкула вĕренсе пĕтерсен И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн журналистика факультетĕнче ăс пухнă. Университетра вĕреннĕ хушăрах «Хыпар» издательство çурчĕн «Ачапча» кăларăмне редакцилеме пуçланă. 2001-2013 çулсенче «Тантăш» хаçатăн яваплă секретарĕнче, 2013 çултанпа «Хыпар» издательство çурчĕн техника центрĕн пуçлăхĕ – кăларăмсемшĕн яваплă редактор пулса тăрăшать.

Ф. Чернов – дизайнпа калăплав ĕçĕн ăсти. Республикăри чы-

лай хаçат-журнал сăнне шăпах вăл «ӳкернĕ»: е малтанхисене çĕнĕ сăн панă, е çĕнĕрен тухма пуçлакан массăллă информаци хатĕрĕсен сăн-питне (ятне мĕнле çырасси, рубрикăсене мĕнле вырнаçтарасси, сăнӳкерчĕксене еплерех калăпласси) шутласа кăларнă. Унăн алли витĕр тухнă кĕнекесен шучĕ те çук, уйрăмах ентешĕсем – Елчĕк районĕнче çуралса ӳснĕ çыравçăсем, таврапĕлӳçĕсем, журналистсем – Ф. Чернов патне çул тытаççĕ: вăл калăпланă кĕнеке яланах хитре пулса тухать, вулакана илĕртет.

Ĕçри тăрăшулăхĕпе хастарлăхĕшĕн ăна «Пĕтĕм Раççейри çырава хутшăннăшăн» (2002) паллăпа, Чăваш Республикин Культура, национальнăçсен тата архив ĕçĕсен (2005) тата Информаци политикипе массăллă коммуникацисен (2014, 2015) министерствисен, Патшалăх Канашĕн (2015) Хисеп хучĕсемпе, ЧР Пуçлăхĕн (2019) Тав хучĕпе чысланă.

## Сăпайлăхпа тыткăнлать



### Шадриков Алексей Валерьевич (1980)

Алексей Шадриков юрăçăн чăваш эстрадинче хăйĕн вырăнĕ. Сцена çине вăл васкамасăр, кашни утăмне тĕплĕ шухăшласа тунăн тухать. Юрланă вăхăтра та ыттисем пек сцена çинче чупса çӳремесĕр, аллисемпе сулкалашмасăр, кĕлеткипе хăлаçланмасăр тымар янăн пĕр вырăнта тăп тăрать. Унăн кашни сăпайлă хусканăвĕнче хăй патне кăчăк туртакан илем пур. Сасси те унăн тикĕс те уççăн янăрать.

Сцена çине пуçласа пилĕк çул тултарсан тухнă вăл. Районти культура çуртĕнче иртнĕ «Янра, хуткупăс» конкурсра юрă кĕввисене шăрантарнине халĕ те лайăх астăватăп. Юрласси вара юн урлă куçнă пулмалла – мăн аслашшĕ ялти пĕрремĕш купăсçă тата пĕрремĕш тракторист пулнă. 7-мĕш класра вĕреннĕ чухне Алексей Таяпа Энтринчен Елчĕкри искусство шкулне çӳреннĕ. Ӳсерехпе район центрĕнчи çамрăксен «Провинци» ансамбльне йышăннă ăна. Темиçе музыка инструменчĕпе калама вĕреннĕ...

Паянхи Алексей Шадриков – Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ. Пысăк сцена çинче 20 çул ĕнтĕ. Вунă диск авторĕ.

Юрăçа Валерий Раштав, Вăрăм Палюк сăввисем ытларах çывăх. Юхма Мишши, Галина Кĕмĕл, Юрий Леванов хайлавĕсенчи сăнарлăх та чунне тыткăнлать. Композиторсенчен Сергей Марковпа, Юрий Кашкăрпа, Типшĕм Сашукпа ĕçлеме кăмăллать. Пĕчĕккĕн хăйĕн юрри-кĕввине те калăплать.

**Ирина Митта, «Эстрада живет фольклором» («ЛИК», 2013, №3):**

*... – Вы много выступаете за пределами республики. Не только чуваши в соседних Татарстане и Башкортостане, но и в дальних краях – в Тюмени, Норильске, на Камчатке – хотят видеть и слышать у себя чувашских артистов. Кто приходит на концерты? Как принимают?*

– Принимают точно так же, как дома, не могу сказать, что концерты во время гастролей проходят как-то иначе. Разве что выступаем перед диаспорой непременно в национальных костюмах. Иначе зрители обижаются, могут в глаза спросить, почему одеты не по-чувашски. На концерты приходят не только выходцы из Чувашии, но их дети, внуки. Второе-третье поколение чувашей, проживающих за пределами республики, очень интересуется чувашской культурой, говорят, что мечтают выучить родной язык. Очень хотят знать историю, с удовольствием покупают книги, как литературные произведения, так и по истории чувашей...

*– Сколько у нас исполнителей?*

– Примерно около трехсот. Это если брать и известных, и тех, кто только-только делает первые шаги на эстраде.

*– Это же огромная сила, вам по плечу самые грандиозные проекты. Помнится, пару лет назад артисты татарской эстрады организовали благотворительный концерт для строительства детского хосписа в Казани.*

– Мы тоже занимаемся благотворительностью. Может быть, не так масштабно, но занимаемся. Выступаем в домах престарелых, в военной части, перед участниками локальных войн. Несколько раз участвовал в благотворительных концертах, когда собирали деньги на лечение детей...

## *Пиччĕшĕ хавхалантарнипе*



### Шадриков Андрей Валерьевич (1990)

Елчĕк районĕнчи Таяпа Энтри ялĕнче пурăнакан Людмилăпа Валерий Шадриковсем ачисемпе чăннипех савăнма, мăнаçланма пултараççĕ. Вĕсене Чăваш Енре кăна мар, Тутарстанра, Чĕмпĕрте, Самарта, Питĕрте, Мускавра та лайăх пĕлеççĕ. Сăмахăмăр – Андрей Шадриков çинчен. Вăл И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн филологипе культура факультетĕнче ăс пухнă. Ытти хăй пек пултаруллă студентсемпе пĕрле лара-тăра пĕлмен, кашни мероприятие хутшăннă. Юрăçăн сцена çинче кашни хусканăва асăрханса пурнăçламалла. Çавна май эрнере пĕрре «Авангард» ташă ушкăнне репетицие çӳрет вăл. Андрей Шадриков 5 çултанпах сцена çинчен анма пĕлмест. Пĕрремĕш хут ăна куракан умне Михаил Федоров юрăç аларан çавăтса илсе тухнă...

Паян «121-мĕш юрату», «Шăпчăк», «Туй», «Аннене» юрăсем тата ыттисем те чăн хит пекех кашни кĕтесре илтĕнеççĕ. Яш-хĕр вĕсене питĕ юратать. Сцена çине кашни тухмассерен кĕвве чун-чĕре витĕр кăлармаллине пĕлет вăл.

Юлашки çулсенче кулăшла хайлавсем, телекăларăмсем хакра. Чăваш эстради те çакна туйрĕ. Елчĕк хастарĕсем, çав шутра Андрей та, ăна çĕнĕ сĕм кĕртни сисĕнет. Пултаруллă çамрăка тĕрлĕ проектсене чĕнеççĕ. Фильмсенче те хăйне тĕрĕслерĕ вăл. Чăваш эстрадине çĕнĕлĕх кĕртме ĕмĕтленет. Çавăнпа ку енĕпе çанă тавăрсах ĕçлесшĕн, АрЭнБи йышши юхăма аталантарса йăлăхтарнă стереотипсенчен хăтăласшăн. Çавăнпа халăх умне тухакан костюмсене те илĕртӳллĕ, хăйнеевĕрлĕ ăсталама тăрăшать: саккас парса çĕлеттерет е хăй тунать. Тутлă тĕлĕкĕнче Андрей Мускаври «Олимпийский» стадионра юрă шăрантарнине курать. Тен, чăннипех пурнăçланĕ...

## *«Шашков пулнă, пур, пулать»*



### Шашков Владимир Николаевич (1954)

Статья ячĕпе 2015 çулта Шупашкарти «Çĕнĕ Вăхăт» типографире Владимир Шашков пухса хватĕрленĕ кĕнеке пичетленсе тухрĕ. Унта 9-10 сыпăк таранччен йĕх-несĕл тымарĕсен йывăçне палăртнă, аса илнисем, çыру йĕркисем, интервью, сăнӳкерчĕксем чылай.

Автор вара ытларах куçару ĕçĕсемпе паллă. И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институчĕн ют чĕлхе факультетне пĕтернĕскер, районти Çирĕклĕ Шăхаль, Хĕвăлçырма шкулĕсенче учитель, ЧПУра лаборант, ассистент, аслă преподаватель, декан пулса ĕçленĕ. 1987-1989 çулсенче – Индире акăлчан чĕлхи тăлмачи. Каярахпа 20 çула яхăн Чăваш Республикин Пуçлăхĕн секретариачĕн

консультант-куçаруçинче тăрăшнă.

СССР Журналисчĕсен пĕрлĕхĕн пайташĕ – 9 кĕнеке, 62 ăслăлăх ĕçĕн тата 12 вĕренӳпе меслетлĕх пособийĕн авторĕ. «Чувашская Республика. Приглашение к сотрудничеству» сборникăн ултă кăларăмне ют чĕлхене куçарма хутшăннă.

Мухтавлă «Нарспи» поэмăна нумай çĕршывра хăйсен чĕлхипе вулаççĕ. Унпа тĕнчипех акăлчанла паллашма пулнăшăн вара Владимир Николаевич «айăплă».

– Куçару ĕçне чĕрĕк ĕмĕр каяллах пуçăннăччĕ, – каласа парать автор. – Сăвăлла хайлава ют чĕлхене куçарма питĕ йывăр – рифма е янăракан юрăхлă сăмахсем шыраса хăшкăлатăн. Акăлчан чĕлхине лайăх пĕлекенсене те кăтартса пăхрăм. Аслă Британире, АПШра, Бразилире, Голландире пурăнакансем паллашса хăйсен сĕнĕвĕсене пачĕç...

В. Шашков 1979-2000 çулсенче Шупашкар хулинчи Мускав районĕн тата Чăваш Республикин Аслă сучĕсен халăх заседателĕ пулнă. Ăна Индири СССР Посолĕн, Раççей Журналисчĕсен пĕрлешĕвĕн Хисеп грамотисемпе чысланă.

## *Вăхăтпа тан утакан режиссер*



### Яковлева Зоя Аркадьевна (1964)

Яковлева (Сапожникова) Зоя Аркадьевна – тележиссер, журналист, публицист. Елчĕк районĕнчи Аслă Таяпара çуралнăскерĕн пултарулăх çулĕ Чăваш телевиденийĕнчен пуçланнă: 1993-2011 çулсенче режиссерта ĕçлесе унăн ылтăн фондне чылай видеоматериалпа пуянлатса хăварнă.

Наци телерадиокомпанине йĕркеленĕ тапхăрта вăл унта пĕрремĕш режиссерсенчен пĕри пулнă, паянхи вăхăта тивĕçтерекен, куракансем кăмăллакан «Ылтăн çӳпçерен», «Туслăх йывăçĕ», «Кил ăшши», «Аван-и?», «Çапла пултăр», «70 те 7» тата ытти чăвашла телекăларăмсене хатĕрленĕ.

Зоя Аркадьевнăн ĕçĕсем Пĕтĕм тĕнче, Раççей, регион шайĕнче иртекен конкурссенче тĕрлĕ наградăна тивĕçнĕ. «Чăваш Енĕн хисеплĕ çыннисем» (2003), Ольга Егорова спортсменка çинчен (2004) ӳкернĕ фильмсем Пĕтĕм тĕнчери конкурссенче лауреат ятне çĕнсе илнĕ. 2005, 2014 çулсенче Раççей шайĕнче çĕнтерӳпе паларнă. 2014 çулта Тюменьте иртнĕ Пĕтĕм тĕнчери кинофестивальте «Çĕпĕр характерлă чăвашсем» документлă фильмшĕн «Хăй наци культурине юратса ĕçлекен» диплома тивĕçнĕ. «Вилĕмсĕрлĕхе çĕнтерсе» ĕçĕ (2017) Пĕтĕм чăвашсен III «Асам» кинофестивалĕнче «Чи лайăх документлă фильм» ята илме тивĕç пулнă. Вăл хатĕрленĕ «Шуракăш» автор радиопрограмми республикăра чи кăтартулли шутланать. Хальхи вăхăтра вăл ЮТВ каналта тата Чăваш наци телерадиовĕнче «Лар, анеçĕм, юнашар» телепроекта, «ЧНК хыпарлать» кăларăмсене йĕркелесе пырать.

2014 çултанпа Зоя Яковлева – Чăваш наци конгресĕн пресс-службин ертӳçи. Вăл тăрăшнипе пĕтĕм чăваш хутлăхĕнче çĕнĕ хыпарсене вăхăтлă пĕлсе тăраççĕ. Вăл ӳкернĕ фото тата видеоматериалсемпе хамăр республикăри тата регионсенчи массăллă информаци хатĕрĕсем, халăхсен культурине, йăли-йĕркине тишкерекен наука учрежденийĕсем усă кураççĕ.

Юлашки çулсенче Елчĕк ен хĕрĕ чăваш хастарĕсемпе пĕрле Красноярск, Иркутск, Томск, Челябинск, Питĕр, Мускав тăрăхĕсенчи, Крым Республикинчи тата Беларуç çĕршывĕнчи ентешсем патне пĕрре мар çитсе килсе вĕсен пурнăçĕ, ĕçĕ-хĕлĕ çинчен статьясем çырса,

телерадиорепортажсемпе фильмсем хатĕрлесе тĕнчене çутатса панă.

З. Яковлева – ЧНК «Чăваш тĕнчи» хаçачĕн тĕп редакторĕ, Раççей Журналисчĕсен пĕрлĕхĕн пайташĕ, республикăри журналистсен, кинематографистсен пĕрлĕхĕсен правленийĕн, ЧНК президиумĕн пайташĕ. Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченне Чăваш Ен Пуçлăхĕн тата Раççейри тĕрлĕ регионсен ертӳçисен Тав çырăвĕсемпе чысланă.

## *Дебютрах – тĕп сăнар*



### Яковлева Марина Александровна (1980)

– 1997 çулта Мускаври Щепкин ячĕллĕ аслă театр училищине вĕренме кĕрес текенсене пухассине пĕлтĕм, – паянхи професси çулĕ çине мĕнле тăни çинчен каласа парать Марина Яковлева. – Ак Мускавран Чăваш драма театрне педагогсем килчĕç. Питĕ-питĕ тĕрĕслерĕç. Пĕр вырăна 15 хĕрччĕ эпир! Эпĕ телейлĕ çичĕ пикепе ултă каччă шутне лекме пултартăм. Пилĕк çул вĕреннĕ хыççăн тăван театрах таврăнтăмăр.

Марина пулас мăшăрĕпе – Элĕк районĕнчи Анаткас каччипе Арсентий Димитриевпа – пĕрле вĕреннĕ. Пĕрлех пĕр коллективра ĕçлеççĕ паян.

15 çул ĕç тапхăрĕшĕн нумай мар, çапах та çак таранччен çамрăк актриса çирĕм пилĕк ытла спектакльте выляма ĕлкĕрнĕ. Пĕрремĕш роле те лайăх астăвать: Левтина Марье çырнă «Пурçăн кӳлĕ вăрттăнлăхĕ» спектаклĕнчи Розалия. Тĕп сăнар. Дебютрах! Кайран тĕрлĕ характерлă героиньăсен чаплă сăнарĕсем татах пулнă-ха: Феня (Н. Угарин «Суйлакана суйпике»), Ира (Г. Рябкин «Ку хĕрачара темĕн пурах»), Люба (Н. Терентьев «Ыйăх çухатнисем»)... «Куккук куççулĕ» драмăри Аннушка ролĕшĕн «Чĕнтĕрлĕ чаршав» конкурс лауреачĕ пулса тăнă.

– Урамра-и, обществăлла транспортра-и – çынсен сăн-питне, вĕсем хăйсене мĕнле тытнине, пупленине сăнатăп, – тет Марина Александровна.

Вăл тĕрлĕ музейсене, куравсене те тăтăшах çӳрет. Çапла майпа та пулас рольсен сăн-сăпатне пуянлатма тăрăшать.

Куракансем вăл вылякан спектакльсене хаваспах çӳреççĕ. Вĕсен чун-чĕре ăшшипе юратăвне туйса тăни вара Елчĕк районĕнчи Тĕмер хĕрне – Чăваш Ен Пуçлăхĕн стипендиатне, республикăри театр деятелĕсен союзĕн пайташне – кулленхи пултарулăхра хавхалану кӳрет.

– Çак ĕçе суйласа илтернĕшĕн ăраскалăма тав тăватăп. Çак таранччен калăпланă рольсемпе кăмăллă эпĕ, – пĕлтерет мал ĕмĕтлĕ актриса.

# ХУШСА ПАНИ

## Сăмахлăхра палăрнисем

Районта тĕрлĕ хаҫат-журналта проза тата поэзи жанрĕсемпе пичетленнисем тата пичетленекенсем сахалăн мар. Вĕсен хушшинче пĕр-ик кĕнеке кăларнисем те пур. Сăмахлăх уйĕнче «суха» тăвакансене пĕтĕмĕшле палăртса хăварни вырăнлă пулĕ:

Баринов-Янаш Валерий Ананьевич (Питтĕпел), Васильева Людмила Петровна (Вырăскасси), Вастулов Вениамин Петрович (Аслă Елчĕк), Викторов Олег Николаевич (Ҫĕнĕ Пăва), Димитриев Петр Александрович (Вырăскасси), Дмитриев Григорий Тимофеевич (Лаш Таяпа), Емельянов Петр Арсентьевич (Яманчӳрел), Казаков Пантелеймон Ананьевич (Кивĕ Эйпеҫ), Калмыков Николай Георгиевич (Кушкă), Кириллов Семен Кириллович (Вырăскасси), Комиссаров Петр Кондратьевич (Яманчӳрел), Круглов Вячеслав Николаевич, Круглов Николай Иванович, Кузнецов Петр Васильевич (Курнавăш), Кучков Анатолий Германович (Тӳскел), Левая Нина Аркадьевна (Ҫирĕклĕ Шăхаль), Марков Анатолий Вениаминович (Ĕнел), Марков-Мерчень Олег Александрович (Тĕмер), Никифорова Елена Ильинична (Ҫуткӳл), Никифорова Татьяна Зиноновна (Элексĕй Тимеш), Николаев Сергей Николаевич (Курнавăш), Павлов Петр Александрович (Кармал), Патшин Виталий Сергеевич (Аслă Елчĕк), Портнова Зинаида Петровна (Аслă Пăла Тимеш), Сазонов Владислав Олимпиевич, Сазонов Олимпий Алексеевич (Кӳлпуҫ), Смирнов Алексей Петрович, Смирнов Петр Михайлович (Курнавăш), Сорокин Александр Васильевич (Тăрăм), Сусметов Анатолий Васильевич (Кивĕ Эйпеҫ), Чернов Петр Никифорович (Елчĕк) тата ыттисем те.

## Вырăскассинчи «Шанăҫ» халăх фольклор ушкăнĕ

«Шанăҫ» фольклор ушкăнĕ Вырăскасси тата Ҫуткӳл ялĕсенчи хастарсене пĕрлештерсе тăрать. Коллектив 1980 ҫулта чăмăртаннă. Ăна йĕркелекенĕ – Чăваш Республикин культурăн тава тивĕҫлĕ ĕҫченĕ Виктор Степанов. Ансамбле тĕрлĕ ҫулсенче ҫавăн пекех Владимир Доброхотов, Лариса Векова, Алина Краснова тата ыттисем ертсе пынă. 2006 ҫулта фольклор ушкăнне «халăх» ятне панă.

«Шанăҫа» ҫӳрекенсем анатри чăвашсен йăли-йĕркине упраса хăварас тесе тăрăшаҫҫĕ. Репертуар пуян та тĕрлĕ енлĕ. Хамăр енчи хăна, туй, салтак, вăйă, улах, ниме юрри-ташши, такмаксем уйрăмах нумай. Чылай юрра ялти ватăсенчен ҫырса илнĕ.

Туслă коллектив хăйĕн пултарулăхне фольклор коллективĕсен Пĕтĕм Раҫҫейри («Зеленые святки»), регионсем хушшинчи («Иксĕлми ҫăлкуҫсем», «Чăваш ахах-мерченĕ»), республикăри («Ылтăн ҫӳпҫерен») фестивальсемпе конкурссенче кăтартнă.

## Елчĕкри ветерансен «Туслăх» халăх хорĕ

2019 ҫулхи ака уйăхĕнче «халăх» ята тивĕҫнĕ коллектив хăйĕн пултарулăхĕпе чылай регионта пурăнакансене паллаштарнă, конкурссенче те палăрнă. Чи сумли – виҫĕ тапхăртан тăракан Пĕтĕм Раҫҫейри хорсен фестивальне хутшăнса Атăлҫи федераци округĕнче 23 коллектив хушшинче 1-мĕш степеньлĕ лауреат ятне тивĕҫни, Мускаври финала хутшăнни. Районти тĕрлĕ ялтан ҫӳрекен сцена ăстисенчен чăмăртаннă ушкăна Иван Шурбин ертсе пырать, дирижерĕ – Чăваш Республикин культурăн тава тивĕҫлĕ ĕҫченĕ Галина Московская.

## Çĕнĕ Пăвари «Илем» халăх фольклор ансамблĕ

Çĕнĕ Пăвари культура çурчĕ çумĕнчи «Илем» фольклор коллективĕ 2009 çулта йĕркеленнĕ. Альбина Емельянова ертсе пыракан ушкăна тĕрлĕ профессиллĕ 20 çын çӳрет. Конкурс-фестивальсене хутшăнса хăйсем тĕллĕн вĕреннĕ артистсем чăваш халăх йăли-йĕркисене пропагандăлас тĕлĕшпе нумай тăрăшаççĕ. «Сĕм авалхи уявсем», «,мĕрсен эрешĕсем» фестивальсенче палăрнăшăн ятарлă дипломсене тивĕçнĕ. «Илем» фольклор ансамбле 2019 çулхи ака уйăхĕнче «халăх» ят панă.

# Тупмалли

Ум сăмах .......... 3
«Атăл» пĕрлештерет .......... 4
«Чун туртнипе çыратăп» .......... 4
Хастарлăхĕ иксĕлми .......... 5
Радиожурналист .......... 6
Ăсталăхĕ – чун хавалĕ .......... 6
Савăнăç парнелекен .......... 7
«Кĕмĕл сасă» çĕнтерӳçи .......... 8
Тĕрлĕ жанрпа çырнă .......... 9
Картинисенче – тăван кĕтес .......... 9
«Кĕрешӳ» активисчĕ .......... 10
«Тĕнче ырăрах пултăрччĕ тесе тăрăшатăп» .......... 11
Хирург-çыравçă .......... 12
Ыркăмăллăха талпăнакан .......... 13
Ун кĕрекинче – пулталулăх çыннисем .......... 13
Чăваш çипуçĕн маçтăрĕ .......... 14
Аякра та кĕтеççĕ ăна .......... 15
Хастар йĕркелӳçĕ .......... 16
Пуян тĕнче курăмлă .......... 16
Çĕр çинчи ырă йĕр .......... 17
Фронтовик-писатель .......... 18
Унăн хăйĕн стилĕ .......... 19
Чăвашлăха тĕпчекен .......... 20
Сăвă урлă та вĕрентет .......... 20
Тележурналист, режиссер .......... 21
Кулăш ăсти .......... 22
Юрă-кĕвĕ ытамĕнче .......... 23
«Çырма пĕлмен – купăс калана» .......... 23
Аякри чăвашсен ертӳçи .......... 24
Аваллăха тĕпчекен .......... 25
Хастарлăхĕ иксĕлми .......... 26
Инженер, общество деятелĕ .......... 27
Тăмран чун кĕртекен .......... 27
Ватăлма пĕлмен çыравçă .......... 28
Хорсен организаторĕ .......... 29
Хула пейзажисчĕ .......... 30
«Питĕ юрататăп хам профессие» .......... 31
Хастар çынсем хавхалантараççĕ .......... 32
Пурăнать ялта художник .......... 32
Тĕрлĕ енлĕ пултарулăх .......... 33
Куçаруçă .......... 34
Куравсенче – 20 çул ытла .......... 35
Хăй тĕллĕн вĕреннĕ композитор .......... 35
Усламçă, вăйçă, композитор .......... 36
График, скульптор .......... 37
Ĕнерхи ертӳçĕ – кĕнекеçĕ .......... 38
Хуткупăс ăсти .......... 39
Пейзаж ăсти .......... 39
Пысăк ĕмĕтпе .......... 40
Эстрадăра «вут-хĕм сапать» .......... 41
Чăвашлăх юхăмĕн патриочĕ .......... 42
Мускав изданийĕсен лауреачĕ .......... 43
Цензура витĕр .......... 43
Курăмлă ĕçсен авторĕ .......... 44
Ялан – шыравра .......... 45

Тĕрлĕ енлĕ талант ........ 46
Ӳсĕм çулĕпе ........ 47
Илемлĕх тĕнчинче ........ 48
Опера юрăçи ........ 49
Чуна çывăх аса илӳсем ........ 50
«Çырма ан пăрах...» ........ 51
Преподаватель-фольклорист ........ 51
«Шурă Кашкăртан» пуçланнă ........ 52
Тĕлĕнмелле професси ........ 53
Чăрмавсене çĕнтерсе ........ 55
Юратнă ĕçре ........ 56
Йывăçсемпе «калаçакан» ........ 57
Ентешĕ пехил панипе ........ 58
Пĕчĕкрен сцена çинче ........ 58
Ювелир ........ 59
Кĕнекесене чун кĕртет ........ 59
«Хыпара» парăннă журналист ........ 60
«Пурнăçа хаклама вĕрентрĕç» ........ 61
«Хурăнташра» юрлать, ачасене вĕрентет ........ 61
«Вĕренекенсемпе мăнаçланатăп» ........ 62
«Сана пула çуралчĕ манăн ятăм!» ........ 63
Пĕрремĕш хĕрарăм-редактор ........ 64
Кая юлса «вăраннă» талант ........ 64
Бухгалтертан – ӳнерçе ........ 65
Турхансен ĕçне тăсаканĕ ........ 66
«Тăван» пĕрлешӳре ........ 67
Наци юхăмĕн хастарĕ ........ 68
Аваллăх ĕмĕрне тăсакан ........ 68
Хаçат-журнал сăн-сăпатне калăплать ........ 69
Сăпайлăхпа тыткăнлать ........ 70
Пиччĕшĕ хавхалантарнипе ........ 71
«Шашков пулнă, пур, пулать» ........ 71
Вăхăтпа тан утакан режиссер ........ 72
Дебютрах – тĕп сăнар ........ 73
Хушса пани ........ 74



## Кӗнеке авторӗ ҫинчен

Николай Федорович Малышкин Елчӗк районӗнчи Тӑрӑмра 1958 ҫулхине ҫуралнӑ. Чӑваш патшалӑх университетне, Чулхулари социаллӑ политика институтне, хӗсметре тӑнӑ ҫулсенче ҫар корреспонденчӗсен шкулне кусӑмсӑр майпа пӗтернӗ. Заводра рабочире, парти, комсомол, вӗренӳ тытӑмӗнче тӗрлӗ должноҫра ӗҫленӗ. 2018 ҫулхи нарӑс уйӑхӗнчен – «Елчӗк ен» хаҫатӑн тӗп редакторӗ.

Икӗ кӗнеке авторӗ, район энциклопедийӗн автор-хатӗрлевҫисенчен пӗри. Раҫҫей Журналисчӗсен пӗрлӗхӗн пайташӗ, Елчӗк ял тӑрӑхӗн депутачӗсен пухӑвӗн депутачӗ, Чӑваш наци конгресӗн выранти уйрӑмӗн, районти таврапӗлӳҫӗсен канашӗн ертӳҫи. Пӗтӗм Союзри халӑх пултарулӑхӗн II фестивалӗн лауреачӗ. Ӑна Чӑваш Республикин, Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗн, ЧР физкультурӑпа спорт министерствин Хисеп грамотисемпе, Чӑваш Ен Пуҫлӑхӗн Тав ҫырӑвӗпе, Г.Н. Волков тата «Патриотла ӗҫе активлӑ хутшӑннӑшӑн» медальсемпе чысланӑ.

## Тав сӑмахӗ

***Ҫак кӗнекене кун ҫути кӑлартма укҫа-тенкӗ парса пулӑшакансене чун-чӗререн тав тӑватӑп.***

**Абдюшев Илья Александрович** (Шупашкар, уйрӑм усламҫӑ);

**Воробьев Андрей Владимирович** (Елчӗк, адвокат);

**Григорьев Леонид Лукиянович** (Елчӗкри «Ритуал» предприяти ертӳҫи);

**Изратов Валерий Васильевич** (Елчӗк, уйрӑм усламҫӑ);

**Миллин Борис Александрович** (Шупашкар, «Лама» акционерсен обществин генеральнӑй директорӗн ҫумӗ);

**Скворцов Михаил Никитич** (Шупашкар, «СКАТ-2000» строительство фирмин директорӗ);

**Харисов Рифкат Сабирович** (Сӑрьел, пенсионер).

***ТАВ сире, сывлӑхӑрсем ҫирӗп пулчӑр, пурнӑҫӑрта пур енӗпе те ӑнса пытӑр!***

Елчĕк çĕрĕ çитĕнтернĕ

Подписано в печать 05.07.2019.
Формат 70x100/16. Бумага офсетная. Печать офсетная.
Физ. печ. л. 5. Тираж 300 экз. Заказ № К-250.

Отпечатано в типографии «Новое Время»
428034 Чебоксары, ул. Мичмана Павлова, 50/1
Тел.: (8352) 323-353, 412-798. E-mail: newtime1@mail.ru

160.–

Тӳрлетни

| Стр. | Йĕрке | Вуламалла |
|---|---|---|
| 13 | аялтан 19 | Аслă Таяпа |
| 34 | аялтан 5 | Афиногентович |
| 44 | çӳлтен 6 | 1961 |
| 61 | аялтан 7 | Васильевна |